41-126

Ф. С. МЕЦЕНАТОВ

# ЧӐВАШ ЛИТЕРАТУРИ

ВӐТАМ ШКУЛӐН
IX—X КЛАСĔСЕМ ВАЛЛИ
ПОСОБИ

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1941

Обязательный
контрольный
экземпляр

ОТК № 2

Ф. С. МЕЦЕНАТОВ

Обязательный экземпляр
Чувашского Издательс
4 - IV - 41 г.

# ЧӐВАШ ЛИТЕРАТУРИ

## ВӐТАМ ШКУЛӐН IX—X КЛАСЁСЕМ ВАЛЛИ ПОСОБИ

*Чӑваш АССР Çутӗç Халӑх Комиссариачӗ IX—X-мӗш классенче усӑ курма йышӑннӑ*

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ♦ 1941

## АСӐРХАТТАРНИ.

Чӑваш литературин историне сӑнаса ҫырнӑ материалсем пирӗн ҫукрах. Вӑтам шкулсем валли литература учебникӗ ҫырса кӑларассийӗ те пирӗн малтанхи опыт пулса тӑрать. Ҫавӑнпа та учебникра ҫитменлӗхсем те пулма пултараҫҫӗ. Учебникпа усӑ куракан вӗрентекенсемпе вӗренекенсене, писательсемпе поэтсене, вулакансене те ҫак кӗнекери ҫитменлӗхсене кӑтартса тата кун пек учебниксем ҫинчен хӑйсен шухӑшӗсене издательствӑна е хама ҫырса пӗлтерме ыйтатӑп.

*Автор.*

# ЧĂВАШ СОВЕТ ЛИТЕРАТУРИН ЎСĔМĔ

Октябрьти революци хыççăн, социализмла пурăнăç ўссе сарăлса пынă май, пролетарилле литература та çулран-çул анлăн ўсме пуçларĕ. Совет çĕршывĕн халăхĕ Ленинпа Сталинăн наци политикине çирĕп тытса пынине пула, Совет Союзĕнчи ытти халăхсеннипе пĕрле чăваш халăхĕн хуçалăхĕ тĕрекленет, унăн культурипе искусстви те вăйлăн аталанса пыраççĕ. Чăваш литературинче эпир çĕнĕрен çĕнĕ ятсем палăрнине, çĕнĕ произведенисем пичетленсе тухнине куратпăр.

Чăвашсен Октябрьти революциччен те писательсем пулнă (М. Федоров, К. В. Иванов, Н. И. Шелепи, Тайăр Тимкки М. Акимов т. ыт.). „Халăхсен тĕрмийĕ" пулнă патша Российĕнче питĕ йывăр условисенче ĕçлеме тивнĕ пулсассăн та, вĕсем, раснах 1905—1907 çулсенчи революци вăхăтĕнчи демократиллĕ шухăшсемпе хавхаланса, чăваш литературине тăвассишĕн вирлĕн кĕрешнĕ. Аслă вырăс халăхĕн малта пыракан писателĕсемпе поэчĕсенчен тата халăхăн пуян фольклорне вĕренсе пырса, вĕсем чăвашсен илемлĕ литературин никĕсне хывнă.

Октябрьти революци хыççăн çĕнĕ пултаруллă вăйсем литература ĕçне тытăнаççĕ. Хăйсем умĕнхи писательсем хастарлăн пуçăннă ĕçе вĕсем çĕнĕ условисенче малалла яма пур вăя хурса ĕçлеççĕ.

Октябрьти революци хыççăн, граждан вăрçи вăхăтĕнче палăрнă писательсем: Çеçпĕл Мишши, И. Тăхти, Ф. Павлов,[1] Тал-Мăрса, И. Ахах, М. Акимов, К. Ефремов, Н. Ваçанкка (Шаланкă) т. ыт. те пĕчченшерĕн ĕçленĕ. Ун чухнех литература организацийĕсене пĕрлешсе ĕçлес текенсем те пулнă (Çеçпĕл М.), анчах организацийĕ йĕркеленсе çитеймен. Граждан вăрçи вăхăтĕнче чăваш писателĕсем хăшĕ фронтра, редакцисенче, партипе комсомол организацийĕсенче, театрта тата ытти организацисенче ĕçленĕ, час-часах вĕсен вырăнтан вырăна куçса çўреме тивнĕ.

Граждан вăрçи хыççăн, халăх хуçалăхне ура çине тăратнă тапхăр вăхăтнелле, чăваш писателĕсем пĕрлешсе ĕçлеме тытăнаççĕ.

1923 çулта „Чăваш писателĕсемпе журналисчĕсен „Канаш" союзĕ" организациленет. 1924 çулта „Сунтал" журнал тухма пуçлать. Çыракансем ун тавра йышлăн пĕрлешсе ўссе пыраççĕ: Н. И. Шелепи, С. В. Элкер, П. Н. Осипов, Трубина Мархви, Хумма Çеменĕ т. ыт. те. Каярахпа, хуçалăха реконструкциленĕ

[1] Ф. П. Павлов творчестви çинчен унăн çĕнĕ сборникĕнчи умсăмаха тата „Илемлĕ литература" альманахри (6-мĕш №) статьяна вулăр.

тапхăр тĕлнелле, çĕнĕ ятсем йышлăн хутшăнаççĕ: П. Хусанкай, Уйăп Мишши, И. Тукташ, Исаев Мĕтри, К. Пайраш, Г. Кели т. ыт. те.

Юлашки çулсенче, Сталинла Конституци йышăннă вăхăталла, литература ĕçне Я. Ухсай, И. Ивник, Эсхель, А. Алка т. ыт. те хутшăнаççĕ.

1925 çулта „Капкăн" журнал тухма тытăнать. Ун урлă чăваш юморисчĕсем, басня çыраканĕсем палăраççĕ (Иван Мучи, Н. Евдокимов, Аттай, Н. Чурпай, Ф. Ванин). „Йĕплĕ калавсем", „Хĕрлĕ кулăш", „Хĕрлĕ сăнă", „Басньăсем" т. ыт. сборниксем те пичетленеççĕ.

Ачасен литературипе ĕçлекенсем те ӳсеççĕ (К. Чулкаç, Кăлкан т. ыт. те). Ачасене коммунистла воспитани парас ĕçре ачасен литератури питĕ те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах ачасем валли çыракансем пирĕн сахал-ха.

Чăваш Совет литературин ӳсĕмне халăх тăшманĕсем—буржуаллă националистсем, троцкистсемпе бухаринецсем, переверзевецсем нумай чăрмантарнă.

Буржуаллă националистсем чăваш культурине, унăн литературипе искусствине вырăссен малта пыракан революциллĕ культуринчен уйăрасшăн пулнă. Вĕсем искусствăпа литературăра социализма хирĕçле, тăшманла идеологи сарма тăрăшнă, хăшпĕр писательсем, тăшманла идеологи сĕрĕмне лексе, социализмран пăрăнакан, Совет çĕршывĕпе унăн çыннисем çинчен ирсĕр элек саракан произведенисем, авалхи юрăхсăр традицисене, нациллĕ кивĕ йăласене идеализацилекен произведенисем çырнă.

Переверзевщинăна чăваш литературине кĕртме пăхакан тăшмансем те, литература вăл класс кĕрешĕвĕнчен уйрăм тăрать, вăл классăр япала тенĕ сăмахсемпе витĕнсе, Совет литературине хирĕç кĕрешнĕ.

Пĕтĕм Союзри пролетари писателĕсен ассоциацийĕ (ВАПП) ĕретне тăрса, 1926—1932 çулсем хушши ĕçлесе пынă Чăваш пролетари писателĕсен ассоциацийĕ (ЧППА) тăшманла шухăшсене хирĕç кĕрешессине çителĕклĕ таран çивĕч тытса пырайман. Илемлĕ литература организацийĕсене урăхлатса çĕнетесси çинчен ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1932 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕ литература фронтĕнчи йăнăшсене пĕтерме çул кăтартса пачĕ. ВАПП организацийĕсене салатса яма хушрĕ. Мĕншĕн тесен, вĕсен ролĕ малтанах пысăк пулнă пулин те, вăл вăхăталла совет литературине ӳсме чарса тăракан хĕсĕк рамка пулса тăнă. Мĕншĕн тесен ВАПП организацийĕсем самокритикăна хĕссе пынă, „попутчиксем ĕретĕнче" тенĕ шанчăклă писательсене пролетари литератури енне çаврăрма тăрăшман, вĕсем литература фронтĕнчи çитменлĕхсене, йăнăшсене большевикла критикленине чăтма пултарайман т. ыт. те.

Çавăнпа та ВКП(б) Центральный Комитечĕ ВАПП организацийĕсене пĕтерсе лартать, Совет влаçĕ майлă тăракан, совет литературишĕн тăрăшакан писательсене пурне те пĕрлештерекен организаци тума йышăнать: „Совет влаçĕн платформине тытса

пыракан тата социализм строительствине хутшӑнса ӗҫлеме тӑрӑшакан мӗнпур совет писателӗсене пӗр союза пӗрлештерес, вӑл союзра коммунистсен фракцийӗ тӑвас",—тенӗ ВКП(б) Центральный Комитечӗн постановленийӗнче.

Чӑваш писателӗсен те вара ҫӗнӗ организаци—Чӑваш совет писателӗсен Союзӗ организациленет. Вӑл Пӗтӗм Союзри Совет писателӗсен уйрӑмӗ пулса, ӑна пӑхӑнса тӑрать.

ВКП(б) Центральный Комитечӗн постановленийӗ хыҫҫӑн, 1934 ҫулта, пӗтӗм Совет Союзӗнчи писательсен 1-мӗш съезчӗ пухӑнать. Съезда Совет Союзӗнчи 50 наци писателӗсем пухӑннӑ. Унта чӑваш писателӗсем те пулнӑ (М. Трубина, П. Хусанкай).

Съезд ВКП(б) Центральный Комитечӗ 1925-мӗш тата 1932 ҫулсенче йышӑннӑ постановленисене, Ленинӑн „Литература ӗҫӗ—пӗтӗм пролетари ӗҫӗн пайӗ пулмалла" тенине пурӑнӑҫа кӗртес енӗпе ӗҫленӗ. Совет Союзӗнчи халӑхсен литературине вӑйлатма кирли ҫинчен: „Пирӗн Союзри нумай республикӑсемпе облаҫсенчи наци литератури аталанӑвӗ ҫине уйрӑммӑнах вӑйлӑн ҫаврӑнса пӑхмалла",—тенӗ ВКП(б) Центральный Комитечӗ илемлӗ литература пирки 1925 ҫулхи июлӗн 1-мӗшӗнче йышӑннӑ резолюцийӗнче.

Съезд тӗрлӗ нацисен литературине сӑнаса вӗренме, аталантарма, вӗсен хушшинчи ҫыхӑнӑва вӑйлатма йышӑнса хӑварнӑ.

Съезд литература ӗҫӗнче Сталин панӑ „социализмла реализм" лозунгӗпе тата вӑл съездра А. Жданов, М. Горький каланисене никӗсе хурса ӗҫлеме йышӑннӑ.

Социализмла реализм—пурӑнӑҫа социализмшӑн кӗрешекен революциллӗ пролетариат куҫӗпе пӑхса, пур енчен те тарӑннӑн, тӗрӗс кӑтартса пама хушать.[1] А. Жданов хӑйӗн сӑмахӗнче совет литератури пирки ҫапла каланӑ: „Пирӗн литература мӗнпур халӑхӑн тата пур ҫӗршыври литературӑсенчен чи ҫамрӑкки пулса тӑрать. Ҫав вӑхӑтрах вӑл чи идейӑллӑ, чи малта пыракан тата чи революциллӗ литература".

М. Горький съездра хӑйӗн сӑмахӗнче литературӑри ҫитменлӗхсем ҫинчен, малашнехи задачӑсем ҫинчен каланӑ. Вӑл илемлӗ литература пурӑнӑҫран юлса пынине, писательсен художествӑллӑ маҫтӑрлӑхӗ, пахалӑхӗ, чӗлхи кирлӗ пек ҫӳллӗ пусӑмра тӑрайманнине кӑтартса панӑ. Съездра тухса калакан ытти писательсем те (Л. Соболев, В. Иванов т. ыт. те) социализмла пурӑнӑҫа анлӑн кӑтартакан паха произведенисем ҫырма кирли ҫинчен каланӑ, писательсене хальхи сталинла тапхӑра тивӗҫлӗ пысӑк та паха произведенисем ҫырма чӗннӗ. „Партипе правительство совет писательне, начар ҫырас правосӑр пуҫне, пурне те панӑ",—тенӗ вӗсем съездра. Ҫак сӑмахсем чӑваш писателӗсемшӗн те юрӑхлӑ, кирлӗ кӑтарту пулса тӑраҫҫӗ. Вӑл—пирӗн ҫӗршывӑн требованийӗ.

Чӑваш литератури темӑсем енчен те, жанр енчен те анлӑлансах пырать. Тӗслӗх, вӑрҫӑпа сыхлӑх, сисӗмлӗх тата социа-

[1] Пурӑнӑҫа, типсене сӑнланӑ чухне Энгельс „типлӑ обстоятельствӑсенчи типлӑ сӑнлӑхсем" пулмалла тенине ялан асра тытса ӗҫлемелле.

лизмла патриотизм ҫинчен ҫырнӑ литература, чӑваш ҫамрӑкӗсемпе интеллигенчӗсем ҫинчен ҫырни те чылайланчӗ.

Прозӑпа ҫыракансенчен малтанхи ҫулсенче С. Элкер, Иван Мучи, М. Трубина, С. Фомин, Исаев М., М. Чалдун кӑна пулнӑ пулсан, каярах ҫӗнӗрен нумай ятсем хутшӑнчӗҫ (И. Тукташ, К. Пайраш, А. Эсхель, М. Кипек, Г. Савкай т. ыт. те.) Вӗсем, хӑйсен тематикисене сарса, хальхи пурӑнӑҫӑн тӗрлӗ енӗсене ҫутатса пама пуҫларӗҫ.

Прозӑпа ҫырнисем хушшинче чӑвашсен ӗлӗкхи пурӑнӑҫне кӑтартса паракан произведенисем те палӑрчӗҫ. Малтанхи ҫулсенче Иван Мучин „Турӑ ячӗпе, патша хушнипе", „Чышкӑ тытӑмӗ" калавӗсем тата С. Фоминӑн калавӗсем кӑна пулнӑ пулсан, халӗ прозӑпа пысӑк произведенисем пичетленсе тухрӗҫ (С. Элкерӗн „Шурӑмпуҫ килсен", Трубина Мархвин калавӗсем, Тукташӑн „Пурӑнӑҫ пуҫламӑшӗ", Исаевӑн, Эсхелӗн, Эллиевӑн калавӗсем т. ыт. те).

Драмӑллӑ произведенисем ҫыракансен шучӗ йышлах мар-ха. Революци хыҫҫӑнах ку жанрпа К. Ефремов („Пуян Карук"), М. Акимов („Вӑхӑтсӑр вилӗм", „Илюк"), Тал-Мӑрса („Силпи", „Ухатер", „Кам айӑплӑ"), И. Ахах („Тайгара"), Ф. Павлов („Ялта", „Судра"), П. Н. Осипов ҫырса тӑнӑ.

Ф. П. Павловӑн „Ялта" драмипе П. Н. Осиповӑн „Айдар" драми чӑваш театрӗн сцени ҫинчен анмаҫҫӗ. Вӗсене халӑх юратса курать. П. Н. Осипов пурӗ вунӑ пьеса ытла ҫырнӑ. Вӗсем чӑваш ялӗн революци хыҫҫӑнхи тӗрлӗ тапхӑрӗсене ҫутатса параҫҫӗ.

Драмӑллӑ жанрпа ҫыракансем пирӗн татах та палӑрса пыраҫҫӗ (Мранька, Алагер, Кӑлкан, Айзман, Тихӑн Петӗркки т. ыт. те).

Поэзи фрончӗ пирӗн вӑйлӑн аталанать. Кунта эпир поэтсем йышлине куратпӑр. Поэзи тематика енчен те, жанр енчен те пуянланчӗ. Поэтсем халӑх поэзине тӗплӗн сӑнаса вӗренме пуҫларӗҫ. Хӑйсен чӗлхипе литература маҫтӑрлӑхне хӑпартас тӗлӗшпе тимлӗн ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Вырӑс классикӗсенчен те вӗсем вӗренсе пыраҫҫӗ. Поэзире халӗ пирӗн силлабо-тоника тата тоника кӗрсе ҫирӗпленчӗҫ.

Поэзире пирӗн революци хыҫҫӑнах Ҫеҫпӗл Мишши, Элкер, Шелепи, Тӑхти, Ваҫанкка, Чӗкеҫ, Ахах, Тал-Мӑрса ҫырса тӑнӑ. Ҫеҫпӗл Мишши чӑваш поэзийӗн теорине те чылай сӑнанӑ. Вӑл хӑйӗн „Сӑвӑ ҫырассипе ударени правилисем" ятлӑ статьинче чӑваш поэзийӗнче тоника пуҫпулса тӑмаллине татса парать. Тоникӑпа ҫав тери янӑравлӑ, тарӑн шухӑшлӑ революциллӗ сӑвӑсем ҫырать. Элкер, сӑвӑсемсӗр пуҫне, „Хӗн-хур айӗнче" ятлӑ историллӗ пысӑк поэма пачӗ. Каярах поэтсен ӗретне Уйӑп Мишши, Хусанкай, Кели, Тукташ, Ухсай, Эсхель, Ивник т. ыт. те те хутшӑнчӗҫ.

Ҫеҫпӗл Мишши хыҫҫӑн Кели поэзи теорийӗпе ӗҫлекенсенчен пӗри пулнӑ. Анчах вӑл та нумай ӗҫлеймерӗ. Кели (1901—1930) литература ыйтӑвӗсем тӑрӑх статьясем тата сӑвӑсем ҫырнӑ. Унӑн 1932 ҫулта „Октябрь ҫулӑмӗ" ятлӑ сӑвӑ сборникӗ тухнӑ.

Поэзире лирикăллă сăвăсем, поэмăсем йышланса пынине асăнма тивĕç.

Поэтсен сăввисене юрă туни те çĕршывшăн пархатарлă, пирĕн литературăшăн паха ĕç пулса тăрать.

Малтанхи çулсенче пирĕн литературăра хаçат корреспонденчĕсенчен ӳснĕ писательсем ытларах пулнă. Вĕсен политикăлла пĕлĕвĕ те, литература маçтăрлăхĕ те вăйлах пулман. Хальхи вăхăтра, пирĕн çĕршыв ӳссе пынă май, писательсем те çитĕнсех пыраççĕ. Нумайăшĕ аслă шкулсенче вĕренсе тухрĕç. „ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ" тухнă хыççăн писательсем марксизм-ленинизм теорине татах та тимлĕн вĕренме тытăнчĕç. Чăваш фольклорне сăнаса вĕренсе тата вырăс литературине вуласа, идейлă содержанийĕпе те, форми енчен те Сталин саманине тивĕç пысăк произведенисем çырма пуçларĕç. Нумай поэтсемпе писательсем, драматургсем халĕ пысăк произведенисем тăвас енĕпе ĕçлеççĕ.

Партипе правительство пирĕн писательсен ĕçне пахалать. Н. И. Шелепине 1939 çулта Совет правительстви „Знак почета" орденĕпе наградăларĕ. Чăваш АССР 20 çул тултарнă ятпа литературăпа искусство фронтĕнче тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн Чăваш правительстви С. В. Элкере Чăваш Халăх поэчĕ ятне пачĕ, П. Н. Осиповпа Н. Айзман драматургсене Чăваш АССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕсен ятне пачĕ. Иван Мучине, Ивника, Уйăпа Хисеплĕ Грамотăсемпе наградăларĕ.

Юлашки вăхăтра К. В. Иванов çырнисене пухса кĕнекесем туса кăларни те пысăк çитĕнӳ пулса тăрать. Кунсăр пуçне „Поэзи антологийĕ", „Проза антологийĕ" тата нумай поэт-писательсен сборникĕсем тухрĕç.

Чăваш халăхĕпе пĕрле Совет Союзĕнчи ытти халăхсем те Çеçпĕл Мишши, К. В. Иванов, Шелепи, Элкер юбилейĕсене уявласа ирттерни паха ĕç пулса тăрать; вăл чăваш литератури те хисеплĕ вырăнта тăнине кăтартса парать, çамрăксене татах та лайăх произведенисем çырма хавхалантарать.

Чăваш культури, чĕлхи, илемлĕ литератури вăйланассине Çеçпĕл Мишши чĕререн шанса тăнă; чаплă та илемлĕ сăвă-юрăсем çыракан пултаруллă сăвăçсем килессе кĕтнĕ:

Пулĕç ĕмĕрлĕх илемлĕ
Сăвă-юрăсем.
Пулĕç чаплă, çивĕч ăслă
кĕнекеçĕсем,—

тенĕ вăл „Эп вилсен" ятлă сăвăра.

Çеçпĕл кашни поэтпа çыхăну тытма тăрăшнă, пирĕн поэтсем пурришĕн, вĕсем çĕнĕрен çуралса пынишĕн савăннă, вĕсем йышлăланасса шаннă:

Чăвашра çĕнĕрен сăвăç
Çуралмассерен,—
Ман тăпра çине саркайăк
Пытăр ир çинчен. („Эп вилсен").

Поэта вăл каллех тăрса сăвă çырма чěнет:

> Калас килет сана, чăваш чěлхи илемě
> Ÿссех пырать. Тăрсам, каллех сăвă çырар.
> („Ахаха асăнса").

Çеçпěл хăйěн „Вăхăт çитě" ятлă статьинче те чăваш культури вăйлăн аталанассине хытă шанать: „Вăхăт çитě, чăваш чěлхи те тимěр татě. Çивěч пулě, хěртнě хурçă пек пулě. Вăхăт çитě—чăваш юрри те янăраса кайě. Авалхи хуйхă сасси илтěнмě. Телей куç умне тăрě..."—тет.

Çитрě вăл вăхăт. Çеçпěл ěмěчě пурăнăçа кěрсе пырать.

Анчах халě пирěн литература фронтěнче çитменлěхсем те пурха. Тěп çитменлěх—писательсем паянхи куна, пирěн социализм строительствин тěрлě участокěсенче ěçлекен геройсен сăнěсене çителěклě таран тарăннăн, сарлакан сăнласа парайманни пулать. Оборона, патриотизм т. ыт. темăсемпе сахалрах çыраççě. Хăшпěр произведенисенче положительнăй геройсене çиелтен сăнланă, вěсене имшерккерех, вăйсăр çынсем пекрех кăтартнă. Пирěн хамăр геройсене тарăннăн сăнласа, вěсем тăшмансене хирěç вирлěн кěрешме пултарнине кăтартмалла, пирěн геройсем тăшмансен вăйлă тăшманě пулса тăнине çивěч кăтартса памалла. Пирěн писательсем халě çав енěпе те ěçлеме тытăнчěç.

Пирěн литература критики вăйсăр, вăл аялти пусăмра тăрать. Уйрăм писательсен творчествине тарăннăн тěпчесе тěрěс хаклас ěç тивěçлě вырăн йышăнман. Критиксем произведенисене час-часах хăрах енлě хак параççě. К. В. Ивановпа Çеçпěл Мишши творчествисене те юлашки çулчченех тěрěс хакламанни курăнчě. Хăшěсем К. В. Иванова—халăх поэтне, демократилле пысăк писателе—кулакла, миссионерла писатель, пупсен писателě, мистик тесе те çырчěç.

Тěрěссипе илсессěн, акă мěнле хаклатпăр эпир К. В. Иванова: „Константин Иванов—халăх поэчě. Демократилле писатель пулса тăракан Ивановăн мировоззренийě 1905—1907 çулсенчи революциллě событисен обстановкинче, вырăссен классикăллă литературин прогрессивлă идейисен влиянийěпе чăмăртанса çирěпленнě.

Иванов поэзийě çуралса тухни, чăваш литератури хăй çуралса тухни те, 1905—1907 çулсенчи революципе çыхăнса тăрать". („К. В. Ивановăн пурнăçěпе творчестви", докладчиксем валли тезиссем. 5 стр.).

Кунсăр пуçне тата литература теорийě ыйтăвěсемпе ěçлекен те пирěн халě çукпа пěрех. Вилнě писательсен литература наследствине пухас ěç те тин йěркене кěрсе пырать: Шупашкарта литература музейě ěçлеме пуçларě.

Вырăсларан е тата ытти чěлхерен чăвашла куçарнисем пирěн сахалах мар.

Паллах, малашне çитменлěхсене çине тăрса пěтермелле. Марксизм-ленинизм теорийěпе хěçпăшалланнă писательсем, социализмла реализм меточěпе ěçлесе, паянхи пурăнăçпа унăн геройě-

ĕсене сăнласа паракан анлă произведенисене йышлантарĕç. Вырăсла куçарса чăваш поэзийĕн сборникне кăларма тытăнни те пысăк çитĕнÿ пулса тăрать. „Нарспи“ тата „Хĕн-хур айĕнче“ йышши паха произведенисене те вырăсла тата ытти тăван халăхсен чĕлхи çине куçараççĕ. Вĕсем çапла майпа пĕтĕм Совет Союзĕпе сарăлаççĕ. Вĕсем пĕтĕм совет литературинче тивĕç вырăн йышăнĕç, тĕнче литературин анлă çулĕ çине тухĕç.

## С. В. ЭЛКЕР

(1894 ç.)

Семен Васильевич Элкер 1894 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче, Йĕпреç районĕнчи Мăн Упакасси ялĕнче, чухăн хресчен çемьинче çуралнă. Ялти шкултан вĕренсе тухнă хыççăн вăл малалла вĕренеймен, хресчен ĕçĕпе пураннă. 1915 çулта Элкере империализм вăрçине илсе каяççĕ. Австри фронтĕнче вăл йывăр аманать те тыткăна лекет. 1916 çулта Российйăна таврăнать.

1917—1918 çулсенче Элкер Хусанта аслă шкула кĕме хатĕрлекен курсра вĕренет.

1919—1920 çулсенче Хусанта педкурсра вĕренет. 1921—1922 çулсенче хăйсен ялĕнче учительре ĕçлет. Çав вăхăтрах вăл ялти обществăллă-политикăллă ĕçе те активлăн хутшăнать. Ялти чухăнсен комитечĕн председателĕ, Етĕрне уездĕнчи Кушлавăш волисполкомĕн членĕ пулса ĕçлет. 1922 çулта Элкер Шупашкара пичет ĕçне куçать. 1925 çулта партине кĕрет. Халĕ вăл Чăваш Совет писателĕсен правлени членĕ тата „Сунтал" журналăн редакторĕ пулса ĕçлет.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн президиумĕ 1940 çулта **Элкере** литература ĕçĕнче тава тивĕçлĕ пысăк çитĕнусем тунăшăн **Чăваш Халăх поэчĕ** ятне пачĕ. 1941 çулта совет халăхĕ Элкер литературăра ĕçлеме пуçлани 20 çул тултарнине уявласа иртерчĕ.

С. В. Элкер 1917 çултах çырма пуçланă, вăл çырнисем 1921 çултанпа пичетленеççĕ.

Писательсен организацинче Элкер 1923 çултанпа тăрать. Унăн паллă произведенийĕсем çаксем: „Хĕн-хур айĕнче", „Вăрçă кунĕсем", „Шурăмпуç килсен", „Унтри", „Хурçă карап" т. ыт. те. Кĕнекесем: „Самана" (сăвăсен сборникĕ, 1928 ç.), „Хĕн-хур айĕнче" (1931, 1937 ç.), „Вăрçă кунĕсем" (1937 ç.), „Шурăмпуç килсен" (1940 ç.). „Ирĕклĕх юрри" (сăвăсемпе поэмăсен сборникĕ, 1941 ç.)

Элкер—писатель-коммунист, чăваш халăх поэчĕ, чăваш совет литературине пуçараканĕсенчен пĕри. Ĕлĕкхи пурăнăç çинчен-и, революци çинчен-и, хальхи пурăнăç çинчен-и—вăл пурне те тĕрĕс çутатса парать. Темиçе ĕмĕр хушши хĕн-хурта асапланнă халăхсемпе чăваш ĕçхалăхĕ кĕрешӳ урлă ирĕке тухса коммунизм тума тытăнни—Элкер творчествин тĕп содержанийĕ. Унăн творчествинче класс кĕрешĕвĕ малти вырăнта тăрать. Октябрь революцийĕ, класс кĕрешĕвĕ Элкершĕн тĕп тема. Элкер Октябрь революцине

мухтаса ҫырать, ун урлă ĕҫхалăхĕ, вак халăхсем ирĕке тухнишĕн саваннине кăтартать. Элкер патша саманине, иртнĕ пусмăрлăха, хăйне амантса хăварнă империализм вăрҫине ылханать. Ҫавăнпа вăл юн тăкса илнĕ ирĕк ҫĕршыва чĕререн юратса ҫырать. Октябрь революцийĕ пулнишĕн пур ĕҫхалăхĕпе пĕрле савăнать.

Элкерĕн чи малтанхи „Ҫамрăк хурăн“ ятлă сăвви 1921 ҫулхи февралĕн 21-мĕшĕнче „Канаш“ (хальхи „Чăваш коммуни“) хаҫатра пичетленсе тухать. Вăл сăвва Элкер халăх юрри майлă, хăй кăмăлне ҫутҫанталăк илемĕпе ҫыхăнтарса ҫырнă. Ҫурхи ирĕклĕ ҫĕр ҫинче кайăк юррисен ăшă кĕввипе киленсе ларакан ҫамрăк хурăн ҫине пăхса, вăл ҫапла калать:

Ҫавна кура савнăҫпа
Эпĕ хам та юрлама
Хурăн айне вырнаҫап;
Ӑуҫҫуль тăкнă куҫсене
Ĕмĕрлĕхе типĕтсе
Хавас юрă шăратап.

Элкер ҫутҫанталăкри явленисем ҫине идеалистла пăхмасть. Вăл материалист куҫĕпе пăхса, ҫутҫанталăкри явленисем пурнăҫшăн кирлĕ пулнине асăрхать. „Ҫуллахи ҫумăр“ (1923 ҫ.) сăвăра Элкер ҫумăр илемлĕн шăпăртатса ҫунине кăна мар, пуринчен ытла вăл „ҫĕр кăкăрне шăварни“ ҫинчен, тырă-пулă хăват илсе ҫимĕҫ кӳме пикеннине, ҫĕрĕҫлекен хĕпĕртесе ĕмĕт хушса киленнине, ҫуллахи ҫумăрăн кашни тумламĕ „ҫимĕҫ пулса“ ĕҫлекен аллине кĕнине кăтартать.

Малтанхи 1917—1927 ҫулсенче ҫырнă сăввисене Элкер „Самана“ ятлă сборнике пухса кăларнă. „Самана“ сборник халăх „Чуралăх утравĕнчен“ „Тăп ҫыран“ еннелле—социализм саманине куҫса пынине кăтартать. Сборнике эпир ĕҫҫыннисем империализм вăрҫине хирĕҫ, ҫав юнлă вăрҫа пуҫаракан мулхуҫисене хирĕҫ, ҫĕнĕ тĕнчешĕн, ҫĕнĕ саманашăн кĕрешнине куратпăр. Кĕнекере 4 уйрăм: I. Пурăнăҫ, кĕрешӳ, ирĕклĕх; II. Вăрҫăсемпе асапсем; III. Шухăшсемпе ĕмĕтсем; VI. Тĕрлĕрен. 1-мĕш пайĕнче Октябрь революцийĕ пусмăр тĕнчине ишни ҫинчен, ĕҫхалăхĕпе вак халăхсем ирĕке тухни ҫинчен ҫырать.

**„Хурҫă карап“**—символлă сăвă. Вăл революцине пĕлтерет. Карапĕ — парти, тинĕсĕ — халăх, капитанĕ — В. И. Ленин. Чуралăх утравĕ—капитализм, пусмăр тĕнчи. Тăп ҫыран—Телейлĕх ҫĕрĕ, социализм, коммунизм. Ку сăвă—чăваш литературинчи чи паха сăвăсенчен пĕри. Ӑна ҫырасса та аван ҫырнă. Вăл М. Горькийĕн „Песнь о Буревестнике“ ятлă произведенийĕ майлă туйăнать. Элкер ăна Ленин вилни ҫулталăк тулнă ячĕпе ҫырнă. (Малтан 1925 ҫ. „Сунталăн“ 1 №-че пичетленĕ). Сăввăн формипе содержанийĕ те аван килĕшсе тăраҫҫĕ. Ӑна Элкер ҫичĕ сыпăклă сăвăпа мар, тăвата стопаллă амфибрахипе, тоникăпа ҫырнă:

◡— ◡◡— ◡◡— ◡◡ —◡

Кăвак тинĕсре шавлакан хумсем урлă.

Чăваш халăхĕ ирĕке тухнишĕн савăнни çинчен çырнă хушăрах, поэт ĕлĕкхине ылханать: хĕн-хур, асаплăх, сивлек, хаяр, тискер тата ыт. сăмахсемпе те аса илет ăна.

Пуçне хĕсекен хуйхипе шухăшне—
Никам та ан илттĕр, ан кулччăр, тесе,
Юрланă хуллен вăл кичем кĕввине
Хура пӳртсемпе сĕм вăрман хушшинче.

(„Таптаннă, хăртаннă чăваш ĕççынни", 1923 çул).

Е тата: Чăваш ĕççынни!
Чăнах та вара эс сахал чăтрăн-и?
Умлăн та хыçлăн улт-çич ĕмĕрте
Вутра та эс çуннă, шывра та исленнĕ,
Хăвăн юратнă тăван çĕрĕнте
Таçти ют чура пек салхуллăн çӳренĕ.

Çав йывăр пусмăра чăтайманнипе чăваш ĕçхалăхĕ те кĕрешĕве çĕкленет, Разин, Пугачев юхăмĕсене хутшăнать:

Е, вилĕмсĕр Разин вăйпе çыпçăнса,
Хĕнхур пусмăрне эс пикеннĕ сирме;
Е, паттăр Пугачев тусупа пулса,
Тапраннă тăшманăн пуçне силлеме.

Юлашкинчен, 1917 çулта, Российăра ĕçхалăхĕ пусмăр тĕнчине аркатса тăкнă хыççăн, Элкер:

Асту, чăваш, эсĕ текех чура мар!..
Çултан çула чаплăн чысла çак куна.
Эсĕ те, чăвашăн чĕри—Шупашкар,
Çӳлтен çӳлерех тек çĕкле ху ятна!—

тет „ЧАССР-ăн автономи кунне" сăввинче (1924 çул).

Октябрь революцийĕ чăваш ĕçхалăхне ирĕк панине Элкер аван кăтартать:

Пĕр Октябрь вучĕ çеç
Çăлчĕ сана мăшкăлран,
Пĕр Октябрь урлă çеç
Эсĕ çын пек шутланан. („Палла ырăпа усала").

Çапла вара, М. Горькипе К. В. Иванов пекех, Элкер те **этеме** пахалать. Этем уншăн та—чи пахи. Этем çĕршыв хуçи пулнине кăтартса пама тăрăшать.

Пулас çутă пурăнăçа савăнса кĕтнине кăтартать:

Чăваш çынни, паттăрлан,
Ху ĕмĕрне ан çывăр!
Вĕренӳпе маттурлан—
Тĕттĕмлĕх вăл пит йывăр! („Чăваш çынни, паттăрлан", 1918 ç.).
Çара уюсем—пулĕç сад-пахчи;

Хавассăн янтрĕ заводсен сасси!..
(„Тăван республикĕме“, 1926 ç.).

Е тата: Чăваш ĕççынни те часах вăй илсе:
— Этем-çке мĕн эп те!—терĕ вăл хăйне...
... Çĕкленнĕ чăвашăн чĕлхи уçăлать,
... Çĕн юрă-сăвăсем юрлама вăл пуçлать.

Поэтсене те чĕлхене çивĕчлетме чĕнет:

Тăван чĕлхене савакан юлташсем,
Тапранăр, хастарлă ĕçе пуçăнар!..
... Туптар чĕлхене, хăйрар, çивĕчлер.
(„Таптаннă...“, 1923 ç.).

**„Çĕкленнĕ чăвашăн чĕлхи чĕрĕлет“** сăвăра та Элкер чăваш чĕлхи аталанăвĕ пирки çырать. Вăл Иванов, Шелепи, Çеçпĕл пекех, чăваш литературине аталантарассишĕн тăрать. „Эпĕ хамăн пур вăйăма чăваш литературине ӳстерессишĕн пама тăрăшрăм,“—тет вăл хăйĕн юбилейĕ ячĕпе 1941 çулта çырнă статьинче

Нумай сăввисенче Элкер империализм вăрçи асапĕсем çинчен çырать. Халăх юнне тăкнишĕн поэт империалистсене ылханать:

Тĕнчере нумай юнлă кĕтессем,—
Салтак шăммипе акăннă çĕрсем;
... Ку юнсем-шăмсем куçран çĕтĕннĕ,
Симĕс курăкпа шăтса витĕннĕ,
Е сар хăйăрпа ларнă шăлăнса,
Е тинĕс тĕпне путнă явăнса. („Вăрçă хирĕсенче“,
1918 ç.).

**„Каçăр Уçăп“** сăвăра ялти чее пуян çинчен çырать. Выçлăх çул вăл ыттисем умĕнче ахлатам пек тăвать: „Пĕтетпĕр пуль!— Кам тӳсет?!“—тет. Чухăнсене, кӳршĕ-аршăсене хĕрхеннĕ пек калаçать.

Анчах вăл:

Мĕскĕн çынĕ ах!.. тесессĕн,
Хăйĕн ăшне кантарать.
... Хăй пĕрер пăт кивçенлет те,
Пăтшăн иккĕ илмелле...

Анчах Уçăп (кулак) комбедран хăрать. Çавăнпа вăл тилĕ пек чеен калаçса çӳрет. Автор çав „тилĕсене“, ялти тăшмансене, чарма чĕнет:

Ирĕк илнĕ ял чухăнĕсем,—
Чарăр!.. сирĕн чарас ĕç.

**„Селтти“** поэмăра Элкер ĕлĕкхи чухăнсен йывăр пурăнăçне кăтартать. Ку произведени „Арçури“ баллада майлăрах. Селтти— тăлăх карчăк, вăл, „Арçурири“ Хĕветĕр пекех, вутă тиеме вăрмана каять. Анчах, тулли лавпа çырманалла аннă чух, урапи айне пулса вилет. Килте ун Кулюç ятлă чирлĕ хĕрĕ пулнă, амăшĕ

тавранманнине кура, Кулюç ăна шырама вăрмана тухса каять. Тӳнне лав айĕнче амăшĕ виллине курсан, чирлĕ хĕр шари! кăшкăрса ярать, çавăнтах ӳксе вилет. Ĕлĕк çав вырăнтан вара çынсем иртсе çӳреме хăрана-мĕн. Анчах хальхи çамрăксем тĕшмĕшлĕхсенчен хăрамаççĕ, арçурисене, вилнĕ çынсен чунĕсем çӳреççĕ тенисене ĕненмеççĕ.

Элкер тата чăваш юмахĕ тăрăх **„Улăп“** ятлă поэма çырнă (1927 ç. „Сунтал“ № 10. 1940 çулта ăна уйрăм кĕнекен кăларнă). Улăпа вăл Илья Муромец, Святогор т. ыт. паттăрсемпе танлаштарать. Улăп —халăхăн иртнĕ пурнăçне сăнлакан паттăр. Улăп та, Илья Муромец та—халăх паттăрлăхĕн символĕсем. Вĕсем тĕрĕслĕхшĕн çапăçса çӳреççĕ. Т ĕ с л ĕ х:

Куçĕсем ун—шĕл кăвар,
Пĕтĕм тирĕ—йĕплĕ шăрт.
Пĕтĕрĕнсе, чашкăрса
Хăвать çĕлен Ахрата,
Çил урхамах чавкăнса
Вĕçет унран пур вăйпа.
Анчах Ахрат хăрамасть:
Авăрлать те уххине—
Урхамахне кăшт чарать,
Унтан, сăрт пек çĕлене
Хыр пĕрене-йĕтрепе
Яра парать кăкăртан—
Пуçсем шăтнă вырăнтан.
Çĕлен, хыттăн çихĕрсе,
Лăштăр каять çавăнтах,
Куçĕсене сӳнтерсе
Чунсăр пулать самантрах.
Тепре Ахрат, хирте чух,
Çĕр арăслан тĕл пулать,
Арăслансен тĕрек çук,—
Вăл пурне те тĕп тăвать...

**„Шурăмпуç килсен“.** 1905—07 çулсенче чăваш хушшинче пулнă революциллĕ ĕçсем çинчен Элкер „Шурăмпуç килсен“ ятлă пысăк повесть çырнă. Ку повĕçре вăл чăваш ĕçхресченĕсем 1905—1907 çулсенчи революци вăхăтĕнче çĕршĕн, хăйсен граждăнла прависемшĕн революциллĕ кĕрешĕве хутшăнни çинчен çырать. Хресчен çынни революци енне куçса пыни, унăн политикăллă сознанийĕ ӳссе пыни чухăн Муççа образĕнче уйрăмах уççăн курăнать. Ку произведени Салапа Улăхкассинче тата вĕсен таврашĕнче пулнă ĕçсем тăрăх вырăссен малтанхи революцийĕ чăваш хушшинче мĕнле иртнине пĕрлештерсе кăтартать. „Шурăмпуç килсен“—вырăс халăхĕн революциллĕ ирне, чуралăхри чăваш халăхĕ хусканнине тата унăн шурăмпуçĕ çĕкленнине кăтартса парать.

Повĕçре революци ĕçне тăвакансем: Долбиловпа Свистун учительсем, Бурцев рабочи, Çитăр Йăванĕ, Муççа, Ванеç, Павăл, Карсак Çтенкки т. ыт. хресченсем. Вĕсене патша влаçĕ Çĕпĕре ссылкăна ярать.

Революциллĕ юхăма хирĕç: старшина, тиек, пуп, Фролов („Вырăс халăх союзĕн“ членĕ), жандармсемпе полицейски-стражниксем, ялти Вĕçкĕн Сахрун, Карсун Кавăрли, Миххе, Пысăк Унтюк кулаксем тăраççĕ.

Произведени чăваш ялĕсем çĕр хĕсĕккипе хăшкăлнине, çĕршĕн çапăçнине, пусмăрти пур наци халăхĕ революцишĕн тăма хатĕррине кăтартать. Элкер халь ку повĕçĕн 2-мĕш кĕнекине çырать.

Унта вăл ссылкăна янă çынсем, Октябрь революци хыççăн ирĕке тухса, çĕнĕ пурăнăçшăн татах та вирлĕн кĕрешнине кăтартас задача лартнă.

**„Унтри“** калавра („Сунтал“, 1938 ç.) чухăн хресченсемпе рабочисен ĕлĕкхи пурăнăçне кăтартса парать. Унтри, чухăн çын ачи, ялти пуян патĕнче чăпта çапса выçăллă-тутăллă пурăнаканскер, чăтаймасăр, хулана ĕç шырама каять. Çĕрпӳре, Хусанта пекарнисенче ĕçлет. Анчах Унтри ĕçхалăхĕн пурăнăçĕ таçта та йывăррине туять. Вăрçă пуçлансан, ăна вăрçа илсе каяççĕ. Унтан аманса таврăнать. Октябрь революцийĕ Унтрине те асапран хăтарать. Вăл каллех пекарнире. Анчах ĕлĕкхин пек 18—20 сехет мар, 8 сехет кăна ĕçлет. Ударник ятне илет. Ăна грамота, сывлăхне тĕреклетме каймалли путевка парса парнелеççĕ. Унтри—вăл пин-пин ĕçхалăхĕн сăнĕ. Ĕлĕк пусмăрлăхри, асаплăхри çынсем—халĕ, Сталин саманинче, çĕнĕ çын пулса тăраççĕ. Вĕсем стахановецсем, ударниксем, депутатсем, орденоносецсем пулса тăраççĕ. Совет çĕршывне вăйлатассишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлеççĕ.

**„Кивĕ ялта“** калав („Сунтал“ № 9, 1938 ç.) чăваш ялĕнчи ĕлĕкхи пурăнăçа кăтартать. Кунта хут пĕлекен ĕçлĕ çынсем, ĕçкĕ хыççăн кайса, ĕçсене пуянсем майлă тунине, пуянсем чухăнсене пусмăрласа пурăннине кăтартнă. (Варламов судья, Палюк—суд членĕ, взятка илме, ĕçме юратаканскерсем. Вăрăм Сантăрпа Энтип пуянсем—Куçма пек чухăнсене улталаса пурăнакансем). Анчах тĕттĕм Куçмасен куçĕсем вăл вăхăтра уçăлсах çитеймен. Вĕсемпе пуянсем усă курма тăрăшнă.

## ВĂРÇĂ КУНĔСЕМ.

„Вăрçă кунĕсем“—мемуар. Ăна автобиографиллĕ роман-хроника теме юрать. Уйрăм кĕнекен 1937 çулта тухнă. Унччен вăл „Тĕнче вăрçи кунĕсем“ ятпа „Трактор“ альманахра пичетленсе пынă. „Вăрçă кунĕсем“ произведени халăхăн çирĕммĕш ĕмĕр пуçламăшĕнчи трагедиллĕ тапхăрне, вăрçă хирĕсенче асапланакан рядовой салтакăн революциллĕ ăнланăвĕ ӳссе пынине кăтартса парать.

Ку мемуарта Элкер хăй пурăнса иртнерĕ ĕçсем çинчен, империализм вăрçи асаплăхĕ çинчен çырать. Хăйĕн салтакри пурăнăçĕ урлă вăл империализм вăрçин тискерлĕхне аван кăтартса парать. Хăй пек ытти салтаксен, ытти патшалăх салтакĕсен пурăнăçĕпе шухăшĕсене те тĕплĕн çутатса парать. Ку произведенире килĕшӳ (братание), революципе граждан вăрçи епле пуçланса кайни те аван палăрать. Автор мемуарта хăй çинчен аса илет, мемуарта автор çав революци юхăмĕнчен юлмасăр улшăнса пырать. Революцишĕн кĕрешет, ыттисене ăнлантарать т. ыт. те.

„Вăрçă кунĕсем“ мемуар 3 пайран тăрать. I. „Фронтра“; II. „Тыткăнра“; III. „Вăрçа хирĕç—вăрçă“. Малтанхи пайĕнче вăрçă хирĕнчи пурăнăçа кăтартать. Иккĕмĕшĕнче тыткăнра пурăннине, виççĕмĕшĕнче—патша вăрçине хирĕç граждан вăрçи пуçланнине кăтартса парать.

Кунта пире вӑрҫӑ тапхӑрӗнчи салтаксен асаплӑ пурӑнӑҫӗпе вӗсем хушшинче революциллӗ шухӑш ҫурални интереслентерет. Ҫав вӑхӑтрах вӗсене революциленме коммунистсен партийӗ, унӑн ҫулпуҫӗсем Ленинпа Сталин нумай пулӑшнине куратпӑр.

Малалла „Вӑрҫӑ кунӗсем“ мемуарти тӗрлӗ сынсене пӑхса тухар. Положительнӑй типсем: Щербаков, Февралев, Барта, Франс, Васильев т. ыт. те.

Щербаков—ҫирӗп большевик. Империализм вӑрҫи вӑхӑтӗнче вӑл госпитальре кӗҫӗн писарь пулса ӗҫленӗ. Каярах Питӗрте митингсенче патша влаҫне хирӗҫ тухса калаҫать, прокламацисем салатать. Ӑна Кресты текен тӗрмене хупаҫҫӗ. Анчах революци хумӗпе ҫӗкленнӗ рабочисем, матроссем вӗсене тӗрмерен хӑтараҫҫӗ. Революци вӑхӑтӗнче вӑл хастар ӗҫлет. Революци хыҫҫӑн Выборг тата Василеостровски районӗсенчи рабочисемпе салтак депутачӗсен советӗнче ӗҫлет. Граждан вӑрҫи вӑхӑтӗнче, чехсем Хусаналла ҫитсен, Щербаков та Хусана политкомиссар пулса пырать, Хӗрлӗ Ҫар ӗретӗнче ҫапӑҫать. Хӗрлӗ Ҫарти сынсене политикӑллӑ воспитани парассипе ӗҫлет. Щербаков сӑнӗ урлӑ эпир коммунистсем военнӑй коммунизм тапхӑрӗнче тӗрлӗ вырӑнта революцилле ӗҫсем туса пынине куратпӑр.

Февралев (Подгорнов)—революцилле шухӑшлӑ салтак. Фронтра революциллӗ шухӑш сарать, вӑрҫа хирӗҫ агитаци тӑвать, ҫакна сиссе ӑна тытма тӑраҫҫӗ. Анчах та Февралев фронтран тара-тара тӗрлӗрен чаҫсене куҫать, хушаматне улӑштарса урӑх ятсемпе пурӑнать. Аманать, Австро-Венгрие тыткӑна лекет, инвалид шучӗпе Российӑна таврӑнать. Пур ҫӗрте те хӑйӗн революциллӗ ӗҫӗсене тума пӑрахмасть. Граждан вӑрҫи вӑхӑтӗнче Ярославль хулинчи Фроловсен контрреволюциллӗ организацине хирӗҫ кӗрешнӗ ҫӗрте вилет.

Барта—мадьяр санитарӗ. Ун образӗ урлӑ рядовой салтак революци ҫулӗ ҫине тӑни аван курӑнать. „Фронта кайсан тепӗр ҫирӗм москале вӗлермессине-и? Пӗр шеллемесӗр пӗтерӗп вӗсене!“ текен Барта, ытти австри салтакӗсемпе Российӑна тыткӑна лексен, Октябрь революцине ӑнланса, граждан вӑрҫинче шуррисене хирӗҫ ҫапӑҫать. Вӗсем халь пӗлеҫҫӗ: Российӑри революци ӗҫӗ—вӗсен ӗҫех. Ленин пек ҫулпуҫсем хӑйсен ҫӗршывӗнче те пурришӗн савӑнаҫҫӗ, хӑйсен ҫӗршывӗнче те революци пуласса ӗмӗтленеҫҫӗ.

Империализм вӑрҫине хирӗҫ салтаксем йышлансах пыраҫҫӗ. Салтаксем вӑрҫӑ сиенлӗхне сисме пуҫлаҫҫӗ. Вӑл ҫак сӑмахсенчен те паллӑ. Акӑ мӗн калать разведка ярас чух пӗр ватӑ салтак: „Кӗмӗл хӗрес мар, йывӑҫ хӗрес илме ҫӑмӑлтарах пулать унта“,—тет. Франс—тыткӑна лекнӗ чех салтакӗ—империализм вӑрҫине хирӗҫ тарӑхса калаҫать. Австри салтакӗсем, Лукачпа Седлак та, вӑрҫӑра вырӑссене хӗрхенни ҫинчен калаҫҫӗ. Вӗсем вӑрҫӑра никама та вӗлермен. Империализм вӑрҫине кураймаҫҫӗ вӗсем. Барута ятлӑ ҫамрӑк латыш та вӑрҫа хирӗҫ:—„хӑйсене окопалартмалла ҫак вӑрҫа хускатса яракансене, хӑйсене персе пӑрахмалла“,—тесе вӑрҫать. Российӑна таврӑнакан инвалидсене те рево-

люци тума, патша вӑрҫине хирӗҫ тӑма хушса ярать. Ҫапла вара, мемуарта тӗрлӗ государство, тӗрлӗ наци салтакӗсем империализм вӑрҫине хирӗҫ тӑнине куратпӑр. Большевиксен партийӗ ертсе пынипе вӗсем хӑвӑрт революциленсе пыраҫҫӗ.

Революцилле листовкӑсем, сӑвӑсем, юрӑсем, ҫырусем салтаксем хушшинче йышлӑн ҫӳреме пуҫлаҫҫӗ. Вӗсенче патша вӑрҫине ылханаҫҫӗ. Элкер вӗсемпе мемуарта час-часах усӑ курать. Тӗслӗх ҫак сӑвва илер:

> Да за что же берут нас в солдаты
> И везут на чужбину страдать?
> Выдают нам винтовки, гранаты,—
> Заставляют народ убивать...
> Брось присягу!
> Возьмись за винтовку
> и начальство свое перебей.

Питӗрти болшевиксен парти организацийӗ вӑрҫа хирӗҫ прокламацисем кӑларать. Вӗсенче вӑл граждан вӑрҫи тума чӗнет: „Салтаксем! сирӗн тӑшмансем—вырӑс капиталисчӗсемпе вырӑс ҫӗрулпучӗсем тата вӗсен влаҫӗ, самодержави. Ҫавӑрӑр штыксене ҫак тӑшмана хирӗҫ... Сире кура нимӗҫ салтакӗсем те хӑйсен ҫӗрӗнче сирӗн пекех тӑвӗҫ. Тӗп пултӑр вӑрҫӑ. Вӑрҫа хирӗҫ—вӑрҫӑ! Тӗп пултӑр патша влаҫӗ! Сывӑ пултӑр рабочисемпе хресченсен республикӗ!"

Ялти халӑх та вӑрҫӑ вӑрҫнипе ывӑннӑ. Усӑсӑр вӑрҫӑ вӗсен ывӑлӗсене пӗтерни тарӑхтарать. Акӑ, тӗслӗх, Элкер ашшӗ-амӑшӗ ҫырса янӑ ҫырӑва илер: „...Манми ывӑлӑмӑр!.. Хыр пек яштак сывӑ ывӑла пӑсса хучӗҫ... Килте тӑватӑ тӑванунтан пӗри те ҫук. Аслӑ пиччӳ, Хӗветӗр,—Румыни фронтӗнче; Якур—Германи тыткӑнӗнче; Павӑл—Хӗвеланӑҫ фронтӗнче, Тимахви—Пензӑра, кӗҫвӗҫ фронта ярасса кӗтсе пурӑнать... Ял хушшинче сывӑ ҫамрӑк арҫын юлмарӗ..."

Вӑрҫӑ ҫав тери хурлӑх кӑтартнӑшӑн, ялтан савнӑ Клавдийӗ те ылханса ҫырать.

А в т о р (Семен салтак, Васильев) хӑй те империализм вӑрҫине хирӗҫ тӑракан революцилле салтак пулнӑ. Акӑ мӗн ҫырать вӑл мемуарта: „Салтаксем офицерсенчен хӑрами пулса, ҫар дисциплинине хавшатни Россия ҫарӗ чакма пуҫласан пушшех те уҫҫӑн палӑрчӗ... Халиччен „тӑшман"—тесе ютшӑнтарнӑ нимӗҫ салтакех хамшӑн тӑрӑшни, вӑл мана хӗрхенни таҫти, пӗр-пӗрне палламасӑр пурӑнакан ӗҫҫыннисем хушшинче те темле курӑнми тӑванлӑх, хӗрхенӳлӗх пуррине пӗлтерчӗ". Е тата: „Халӑх хушшинче вӑрҫӑпа ывӑнса ҫитни, вӑрҫа хирӗҫ ӳпкелешӳ ӳссе пыни палӑрать" т. ыт. те.

Чӑваш салтакӗсем: Якку, Макҫӑм, Ваҫинк, Урттем, Петюк т. ыт. те империализм вӑрҫине хирӗҫ калаҫаҫҫӗ. Анчах вӑл вӑрҫа кам пуҫланине, тӑшман кам иккенне малтанах уҫҫӑн ӑнланса илме пӗлеймеҫҫӗ.

Патша влаҫӗ улталанине пӗлмесӗр, вӗсем малтан ытти патшалӑх салтакӗсене курайман. Акӑ Якку нимӗҫ-мадьяр салтакӗсене

епле тарăхса вăрçать: „Э-эх, йытăсем!.. Çавсем пирки килсе пĕтетпĕр ĕнтĕ эпир!..“ Патша влаçĕ халăхсене пĕр-пĕрне курайми тунă. Çавăн пек хирĕçӳре шовинистсем те пулнă. Вĕсем пĕр-пĕрин салтакĕсене курайман, вăрçнă, хĕненĕ т. ыт. те. Тĕслĕх: Фролов, Модестов—вырăс шовинисчĕсем; Фенĕш—мадьяр салтакĕ т. ыт. те. Вĕсем интернационаллă шухăшран инçе тăраççĕ. Турра та ĕненеççĕ. Госпитальри Фенĕш: „ваклăттăм москальсене“, „пĕтĕм Россия пирĕн алла кĕрет“,—тесе савăнать. Барта та малтанах, фронта кайсан „пĕр çирĕм москале вĕлерме“ ĕмĕтленет. Еропкин эсер, Питĕрти госпитальри писарь, Российăна тавăрăнакан инвалидсене большевиксем çинчен элеклет, Ленин вăл Германи шпионĕ тесе суя сăмахсем сарма пăхать. Вĕсен тăшманла шухăшĕсене автор тата революцилле салтаксем çĕмĕрсе пыраççĕ. Анланса çитеймен салтаксем те каярах революциенне куçаççĕ, „вăрçа хирĕç—вăрçă“ текен лозунг патне çитеççĕ (Барта т. ыт. те.). Фролов йышшисем çеç пăч-пач тăшман ĕретĕнче юлса революцие хирĕç пыраççĕ.

Çав вăхăтрах автор суеçтерекен салтаксене те сивлет. Вĕсем кĕрешмесĕрех еултавпа чинсем, хĕрессем илнине кăтартать. Сăмахран, Будкевич, разведка командин пуçлăхĕ, нимĕçсене „вĕлерни“ çинчен суйса, георгиевски хĕрес тата медаль илет.

„Вăрçă кунĕсем“ мемуарта автор, тарăн шухăша кайса, вăрçа ылханса хăйĕн шухăшне каласа парать (Авторски отступленисем). Тĕслĕх: „Йĕри-тавра пăхса ларнă вăхăтрах эпĕ пысăк шухăша карăм: кĕçех ку тĕлте акă çапăçу пулĕ... Анчах та эпĕ мĕнле халлĕн юлăп-ши? Тен, ĕмĕрлĕхех çакăнта ӳксе юлăп та, вăрçă чарăнсан, русин ачисем пирĕн çинче сухаласа тырă туса тăрĕç. Вĕсен тырри-пулли пирĕн шăмăсенчен пулнă тăпраран сĕткен сăрхăнтарса илĕ. Ăçта ун чухне вара Çемен? Пулĕç-ши санăн ятна асăнакансем, пĕлĕç-ши аякри тăванусем эсĕ ăçта выртнине? Çук, никам та пĕлеймĕ... Эх, çамрăклăх! Вăхăтсăр вăрçă хирĕсенче пĕтмелле“... (44—45 стр.). Е тата: „Акă эпĕ 21 çулта. Нумай пурăнсан тата 40—50 çул пурăнăттăм... Анчах та... пире çак кĕске ĕмĕре те ирĕклĕн, ватăличчен пурăнма памаççĕ“... (73—74 стр.).

Чĕлхе енчен Элкер мемуара лайăх, ăнланмалла çырнă. Вăл çӳлерех илсе кăтартнă тĕслĕхсенчен те аван палăрать. Сравненисем, метафорăсем т. ыт. те йышлăн тĕл пулаççĕ:

„Поезд кунта, çулĕ начар пирки, суккăр çын хыпашласа утнă пекех, аран мĕшĕлтетсе пырать“. „Итлĕр-ха, ачасем, ку пулемет сасси чисти пирĕн чăваш ялĕсенчи пир çапнă пекех илтĕнет“.

„Типĕ улăм купи çине пăрахнă кăвар часах çулăмланса пысăк пушар кăларса янă пек, большевиксем халăх хушшине панă лозунгсем те рабочисемпе салтаксен массисене хăвăрт çулăмлатса яраççĕ“ т. ыт. те.

„Вăрçă кунĕсем“ мемуарăн пуçламăшĕпе вĕçĕ те çав тери аван. Пуçламăшĕнче автор империализм вăрçи тапранни халăхшăн йывăр инкек пулнине кăтартать:

„Вунтӑваттӑмӗш ҫул. Июль кунӗсем. Саралакан ыраш уйӗсемпе, ешерекен улӑх-вӑрмансемпе, тутлӑ сывлӑшпа варкӑшакан хӗвеллӗ кунсем.

Ҫаран пуррисем утӑ ҫулма тухнӑ. Улӑхсемпе вӑрман ӗшнисенче ҫавасене хӑйраса кӑйӑнклаттарни илтӗнет. Ҫарансенчи чечексем, вичкӗн ҫава ҫитсе лекнипе, уяр ҫанталӑкӑн тӳпинелле юлашки хут чалхӑрса пӑхса, ерипен тайӑлса ӳкеҫҫӗ...

Вӑхӑт шӑвӑнать... Ыраш вырма тухаҫҫӗ. Ҫивӗч ҫурлапа касӑлнӑ ыраш пайӑркисем, хулпуҫҫи урлӑ вӗлтлетсе ӳксе, кӗлте пулса выртаҫҫӗ. Тырӑ выракан ҫемье калаҫса тӑма таваскать. Апат ҫинӗ чух ҫеҫ хӑмӑл ҫине апат чашӑкки тавра ларнӑ ҫемье хуллен мӑкӑртатни илтӗнет...

Сасартӑк—„вӑрҫӑ!"—тени илтӗнет. Ку усал хыпар, пӗр харӑсах миллион ҫӑвартан тухнӑ пек илтӗнсе, пӗр самантрах пӗтӗм ялсенче, уйри ҫӗмелсем хушшинче, улӑхсенче, вӑрмансенче хаяррӑн янтӑраса каять. Вӑрҫӑ пуҫланнине пӗлтерсенех, пур пек ватӑ салтаксене пӗтӗмпех харпӑр уезд хулисене хуса кайрӗҫ. Мӑн ҫулсем тӑрӑх станцисем енне, пристаньсем енне кунран кун, эрнерен эрне ҫӗршерӗн, пиншерӗн ушкӑнпа ват салтаксем иртеҫҫӗ. Вӑйпитти арҫынсем, патша приказӗ тӑрӑх, уй ӗҫӗсене пӑрахса, ачи-пӑчисене хӑварса, вӑрҫӑ вутӗнче ҫунма тухса каяҫҫӗ. Ял хушши пушанать, куҫҫуль тӑкӑнать. Халӑх куҫҫулӗпе пӗрлех ҫанталӑк та йӗрӗхсе, кашни кун ҫумӑр тӑкма тытӑнать..."

Автор кунта этем хуйхине кӗрхи йӗпе ҫанталӑкпа танлаштарать, параллелизм тӑвать.

Мемуар вӗҫӗ те иртнӗ пурӑнӑҫпа тискер вӑрҫа ылханса ҫырнипе пӗтет. Малалла лайӑх пурӑнӑҫ пулассишӗн автор савӑнса ҫырать:

> „Пуҫӑма иртнӗ кунсем, иртнӗ ҫулсем аса килеҫҫӗ... Клавдия мана куҫран тӗллесе пӑхрӗ. Ӑнланать вӑл ман пит тӑрӑх ҫутӑ шыв тумламӗ мӗншӗн юхса аннине. Анчах та, мана йӑпатас тесе, шӑппӑн кулса илет те калать:
>
> — Иртни иртнех пултӑр ӗнтӗ, Ҫемен. Вӑл пире нумай тарӑхтарнӑ, халь акӑ пирӗн умра ҫӗнӗ пурӑнӑҫ,—тет.
>
> Эпӗ Клавдипе килӗшетӗп:
>
> — Тӗрӗс, тусӑм. Пирӗн умра ҫӗнӗ пурӑнӑҫ, ҫӗнӗ кӗрешӳ. Халӗ ӗнтӗ эпир харампырсен ырлӑхӗшӗн мар, хамӑрӑн телейлӗ пурӑнӑҫшӑн кӗрешетпӗр,—тесе хуратӑп унӑн сӑмахне хирӗҫ".

„Вӑрҫӑ кунӗсем" мемуар империализм вӑрҫин тискерлӗхне тата авторӑн асаплӑ, хӗн-хурлӑ иртнӗ пурӑнӑҫне кӑтартса парать. Элкер пек салтаксем вӑл вӑрҫӑра сахал мар аманнӑ, ҫамрӑк пуҫӗсене хунӑ. Элкерӗн мемуарӗ ҫав тапхӑра кӑтартакан вӑйлӑ произведени пулса тӑрать.

## ХӖН-ХУР АЙӖНЧЕ.

„Хӗн-хур айӗнче"—историллӗ поэма, эпопея. Ӑна Элкер 1923 ҫулта ҫырма пуҫланӑ. „Хӗн-хур айӗнче" поэмӑра Элкер хӗн-хур

саманине, пусмăр тĕнчине хирĕç чăваш ĕçхалăхĕ, вырăс тата ытти халăхсемпе пĕр пулса, кĕрешĕве çĕкленнине кăтартса парать. Поэма чăваш хушшинче Пугачев юхăмĕ хыççăн, Пугачев çыннисем ертсе пынипе пулнă уйрăм пăлханусене кăтартса парать. Пугачев юхăмĕ 1773—75 çулсенче пулнă пулсан, кунти ĕçсем вара вунă çул кайран, 1783—1885 çулсенче, пулса иртеççĕ. Ун çинчен поэмăн çак вырăнĕ каласа парать:

— Çук ĕнтĕ Пугачев! Çирĕç ун пуçне!..
Анчах, манас çук эпир ун ĕçне!..
Ак вун çул иртет... эпир унтанпа
... Çӳретпĕр ишсе сĕм-сĕм вăрманпа. (Пахомка сăмахĕ).

„Хĕн-хур айĕнче“ поэма чăвашсен ĕлĕкхи пурăнăçне пĕлме нумай пулăшать. Поэмăна фольклор материалĕсемпе тата чăваш историне çутатса паракан кĕнекесемпе, документсемпе усă курса çырнă.

Кунта эпир чăвашсем икĕ пусмăр айĕнче пурăннине куратпăр. Пĕр енчен—патша влаçĕн пусмăрĕ (патша чиновникĕсем: пурмис, тиек тата ыт. те), тепĕр енчен—чăваш пуянĕсем (Алапит, Текей) халăха пусмăрласа тăнине куратпăр. Кунсăр пуçне христиан тĕнне ирĕксĕр тыттарни те халăха хытă тарăхтарнă. Чăвашсем ун чухне хăйсен тĕнĕпе пурăннă. Иконăсене сакайĕсене пытарнă, христиан тĕнĕпе пуп панă ятсене йышăнман.

Ачасĕне ирĕксĕр чиркĕве илсе кайса христиан тĕнне кĕртнĕ хыççăн, пуп хунă ята йышăнмасăр, вĕсене килте чăваш ячĕсем ятне панă (Чакка, Итапай, Ятарин т. ыт. те). Пуянсем те кивĕ тĕне манайман. Алапит те ĕçкĕ вăхăтĕнче хăй патне пупсем пынине курсан тин иконине сакайĕнчен кăларса çакать. Пупсене „кĕтмен хăнасем“ тесе çиленет. Унăн чӳк ĕçки те чăвашсен йăлипех пулса иртет.

Колонизаципе христианизаци тапхăрĕнче чăвашсем хушшинче те вырăс улпучĕсем тата чиркӳсемпе монастырьсем лайăх çĕрсене касса илме, халăха хĕсĕрлеме пуçлаççĕ. Вĕсем хресченсене хăйсем патĕнче ĕçлеттернĕ (барщина), чухăнсем вĕсене чĕререн тарăхнă. Çавăнпа эпир Кольцов улпут аллинчи вырăс хресченĕсем тыткăна лекнĕ Чаккана вăрттăн хăтарнине те куратпăр. Наци ыйтăвне те Элкер тĕрĕс кăтартса парать. Поэмăра тĕрлĕ наци ĕçхалăхĕ пĕр шухăшлă пулнине куратпăр. Тĕслĕх, Кольцов улпут аллинчи вырăс хресченĕсем Чаккана тартни, Атăл хĕрринче тĕл пулнă Абдул ятлă тутар-бурлак калаçни т. ыт. Бурлакра тĕрлĕ халăх пĕр çемье пек пурăнать. Вĕсем пурте пĕр шутлă. Пĕр-пĕриншĕн тăрăшаççĕ. Чакка вилме пулçласан, Абдул çапла калать:

Çӳренĕ нумай старикпе, эй-эй!..
Аван çынччĕ ул—Ахвунька пичей.

Чаккана бурлакра Афонька тесе чĕннĕ. Чакка хăйĕн чăн ятне пытарнă.

Е тата Илюш хӑй чӑваш пирки бурлака кайма хӑраса тӑрсан, ӑна Абдул ҫапла калать:

„Бурлак хушшинче ун пек мӑшкӑл ҫук:
Чӑваш-и, вырӑс-и, пурин те пӗр чун...“

Ҫав вӑхӑтрах поэма харпӑрхӑй наци пуянӗсем чухӑнсемшӗн чи усал тӑшман пулнине те пит аван кӑтартать, класс кӗрешӗвӗн ыйтӑвне тӗрӗс ҫутатса парать. Пуян Алапит Чаккана хӑйӗн ывӑлӗ вырӑнне салтака тытса парать, вӑл патша йыттисемпе туслӑ пурӑнать, вӗсемпе пӗрле ӗҫсе ҫиет. Автор чӑваш хушшинчи класс кӗрешӗвне чухӑн Тевенеш сӑмахӗпе ҫапла каласа кӑтартать:

„Ҫапла, ун пирки эсӗ хӗн куран...
Мӑнланнӑ чӑваш—чӑвашах ҫиет!
Пурмис та, пуп та шуйттанпа тӑван;
Вӑл пур—вӗсемпе ӗҫет те ҫиет!“

Чакка та пуянсене тарӑхса ҫапла калать:

„Ых, эсрел ҫынни!..
Епле сывалам...
Пуян ҫын кулли
Тума кӑтартам!..“

Чакка виличченех Алапит таврашӗсене тарӑхса пурӑнать, вӗсемпе кӗрешет. Илюшне те, темле йывӑр пулсан та, вӗсем патне каялла тарҫа кайма хушмасть:

„Анчах та итле:
Ялта эс ҫунан упа йӗннинче...
Хура сӗлӗхсен хыт ытамӗнче
Пиҫен пиҫмелле...
Ан кай каялла,
Ачам, вӑл яла...
Абдул, ак Филька... нумай ман туссем,
Пӑрахмӗҫ сана...“

Тӗрлӗ наци ӗҫхалӑхӗсем пусмӑра тӳсеймесӗр Разин, Пугачев юхӑмӗсене хутшӑнса, патша йӗркине хирӗҫ, улпутсене, пуянсене, пупсене хирӗҫ кӗрешнӗ. Пугачев хыҫҫӑн Пахомка ертсе пыракан ушкӑнра та тӗрлӗ наци ҫыннисем пулнӑ. Йывӑр пурӑнӑҫ, пусмӑрлӑх чӑвашсене те Разинпа Пугачев юхӑмӗсене хутшӑнтарнӑ.

„Хӗн-хур айӗнче“ поэмӑри геройсене икӗ ушкӑна пайлама пулать. Положительнӑй геройсем: Чакка, Пахомка, Тевенеш, Тайпи, Илюш, Юксар, Ятарин, Кулине, Абдул т. ыт. Отрицательнӑй геройсем: Алапит, Итрен, Текей, пуп, тиек, пурмистр, офицерсемпе казаксем т. ыт. те.

**Чакка**—поэмӑн тӗп геройӗ. Вӑл ун чухнехи ялӑн, ун чухнехи стройӑн пӗтӗм социальнӑй пусмӑрӗ айне пулнӑ чухӑн хресченӗн

типĕ. Çав пусмăрлăха хирĕç вăл пĕтĕм вăйне хурса кĕрешет. Алапит хăйĕн ывăлĕ вырăнне Чаккана салтака тытса пани Чаккана шăплăх картинчен кăларать. Вăл кĕрешме пуçлать. Мĕншĕн тесен, капла пурăннинчен усси çук: „Иртнийĕ çеç мар, малашнехи те ăна хăратать, ним канлĕх памасть“.

Чăвашсем хушшинче Чакка вырăс улпучĕсене, пупĕсене, чăваш пуянĕсене, патша йыттисене хирĕç кĕрешӳ пуçлать. Юлашкинчен Пахомка шайкине хутшăнать. Пугачев çыннисем, вĕсен вăрă-хурахла ĕçĕсем пулнă пулин те, чăннипе вĕсем ун чухнехи пусмăра хирĕç кĕрешекенсем пулнă. Çавăнпа Чакка Пахомка ушкăнне хутшăнать. Кушлавăшри чухăн хресченсем те вĕсене кăмăлласçĕ: „Пугачев ятне чĕртнĕ таркăнсем хĕн-хур çыннине хушаççĕ çунат“. Анчах Кушлавăш хресченĕсем кĕрешĕве çĕкленме иккĕленеççĕ, шикленеççĕ, хăраса тăраççĕ. Пугачев восстанийĕ хыççăн вĕсене хытă хĕсĕрлени, юнпа шăварни хăратса тăнă: „Пăлхав тапратсан, каллех кĕт çавна“,— тет хресченсенчен пĕри. Чакка та вара: „Ман урлă хĕн-хурлăх ан тивтĕр яла“ тесе, ялĕнчен тухса каять, малалла кĕрешме май çуккине ăнланать.

Чуралăха, пусмăрлăха, тискерлĕхе пĕтерес тесен, хресченсен пурте Пахомка пек пулмалла, вара: „Ниçта та, никам та чура пулас çук...“—тет Чакка Кольцов улпут патĕнче ĕçлекен мужиксене. Анчах ун пек паттăрсем ун чухне сахал пулнă. Чакка хăй чăннипех çав Пахомка пек герой. Мĕн виличченех вăл хăйĕн шухăшне, хăйĕн çулне çирĕп тытать.

Ан кил!.. Ан çывхар!
Ман чун тухас чух эс кунта ан лар!..

тесе хаярран вăрçать вăл пуян Текее.

Чакка—вăйлă, паттăр тип. Ун пек çынсем историре сахалах пулман. Вĕсем хăюллă та хастар пулнă, çутă ĕмĕтлĕ, тӳрĕ кăмăллă пулнă; тен, хăш чухне вĕсем йăнăшнă та, хăйсен юхăмне кансĕрлекен ĕçсене те хушăран тунă пулĕ,—çапах та вĕсем малалла туртăннă, халăх ĕмĕчĕпе пурăннă. Чакка вăл—халăхăн иксĕлми паттăрлăхне кăтартса тăракан герой. Чакка XVIII-мĕш ĕмĕрти хресченсен пăлхавĕсенче хутшăнса кĕрешекенĕн типĕ.

Чаккасем çĕнтерейменни хресченсем сапаланса тата тĕттĕмлĕхре пурăннинчен, мĕншĕн кĕрешме кирлине уççăн ăнланманнинчен килнĕ. Вĕсем хăйсен тĕллевĕшĕн кĕрешме çирĕп организаци тата тĕреклĕ çар тăвайман. Ун чухне тата хресченсен шанчăклă союзник—организациленнĕ рабочи класс пулман.

**Тевенеш**—ялти хисеплĕ старик. Вăл тĕрĕслĕхшĕн, асаплă чухăнсен интересĕшĕн тăрать. Чаккана Алапит салтака тытса янине те вăл каласа парать. Алапит, унăн çăварне хуплас тесе, ăна ĕçкĕпе хăй енне çавăрма пăхсан, вăл çапла тавăрать:

Пулмасть пуль ĕçсе, Алапит тиллĕм.
Шăлса ĕçтерсе мана çаврас çук...
Пĕлен эс, мана пур ял хисеплет...

Пĕр çав хисепе ĕçкĕ ĕçтерсе
Çаврасшăн эс халь ху май илĕртсе...

Пухура та вăл патша йыттисене хирĕç таварать. Чакка кĕрешĕвне мухтать. Ăна вара тытса каяççĕ, вĕлереççĕ.

Илюш—Чакка ывăлĕ, ашшĕ пек паттăрах мар. Вăл 16 çултанах Текей патĕнче тарçăра пурăнать. Иывăр ĕçпе супать. Çамрăксен вăййисене те тухса кураймасть. Пуянсене хирĕç калаçни те курăнмасть. Автор та Илюша сахал кăтартнă. Атăл хĕрринче ашшĕне курсан та, Илюш, тӳрех пырса калаçас вырăнне, пуян Текейрен çапла ыйтса тăрать:

Хускалчĕ Илюш, ыйтать Текейрен:
— Атте-и ку ман?..—Аçу çав!—тет леш.

Ашшĕн—„ял—упа йĕнни..." тенĕ сăмахĕсене аса илсен тин Текейсене тарăхма пуçлать. Ашшĕ çулĕ çине тухать:

Яла таврăнсан—каллех халченхи:
Куштан-пуяна пуççап та тек пиç!..
Текей пусмăрне—ан шутла, ан виç!
Вăрман тĕпĕнче хĕн-хур тӳсиччен,
Тухам тĕнчене—çӳрем çаврăнса...—

тет те, баржăсем хыççăн чупать, бурлаксемпе каять.

Ашшĕ калашле:

Бурлак пурăнăç те, чăн та, çăмăл мар,
Анчах çăмăлне ăçта халь тупар?!
Çапах та Атăл уçă вăл—тĕнче!..
Сан пек этемсем пинпех ун çинче.
Вĕсен хушшинче чунна йăпатан:
Пĕрле канашлан... пĕрле халаплан...

Тайпи (Чакка арăмĕ), Кулине (Чакка арăмĕн йăмăкĕ), Ятарин (Чакка шăлнĕ), Юксар (кĕслеçĕ), Ериле, Итапай т. ыт. те паллă вырăн йышăнса тăмаççĕ. Вĕсем çинчен автор сахал çырнă. Çапах та вĕсем чухăнсен сăнĕсене кăтартса параççĕ. Кĕрешӳрен хăраса тăни çук вĕсен те. Савкай мучи—куланай картпа пухни, Алапит патĕнче кӳршĕ хĕрĕ Алтӳт хăйă майласа тăни т. ыт. те чăвашсен ĕлĕкхи тĕттĕм пурăнăçне, кулак пусмăрне кăтартаççĕ.

Пахомка—вăл Пугачев хыççăн пулнă пĕчĕк пăлхавсене ертсе пыракан çын. Вăл пуянсене хирĕç кĕрешме Атăл çинчи тĕрлĕ наци ĕçхалăхне явăçтарнă. Вĕсем унăн çыннисен ячĕсенчен те паллă. Тĕслĕх: Ахвунька, Яшут, Алтын т. ыт. те. Пахомка—улпут аллинче ĕçпе пиçĕхсе пурăннă çын. Атăл хĕрринче баржăсем сĕтĕрсе çӳрет. Пугачев юхăмне çыпçăнса улпут таврашне çĕмĕрни çинчен Чаккана каласа парать вăл. Пугачев вилнишĕн, кĕрешӳ çиеле тухайманнишĕн кулянса çапла калать:

— Пахом! Эх, Пахомка! пурăнăçу начар—
Ирĕкшĕн тăрса хĕсрĕн кун-çулна.
Асту: вунă çул йĕрлеççĕ сана!..

Çапах вăл кантурсене, улпутсен çурчĕсене çунтарма манмасть. Халăха Пугачев вăхăтĕнчи пек вĕсене хирĕç тăма чĕнет:

„Йăтар хĕçпăшал та каяр кантура...

Çĕмрер кантура та, унтан малалла..“ тет. Малалла! тени хресченсен вăрçине малалла сарса пырас тенине пĕлтерет.

Алапит—чăваш пуянĕ, чееexcept. Тиекпе туслашса, ăна пылсем парса, вăл аслă ывăлне салтака каясран хăтарать. Чухăн Чаккана тытса парать. Ун çинчен автор çапла çырать:

Чакка ялĕнчех, чи ял варринче,
Пурăнать пĕр куштан—пуян Алапит.
Кун пек çын сайра Кушлавăш енче:
Никам умĕнче чакмасть вăл пĕр шит.
Алапит паллă, ун ячĕ хаяр:
Пурмис-тиек те унпа тус пурнать.
Мулне кура ун йыш та пĕчĕк мар:
Виç ывăл, пĕр хĕр унăн ял касать.

Алапит (вырăсла ячĕ Александр) кивĕлле те пурăнать. Чӳк ĕçкисем тăвать. Ĕлĕкхи чăваш туррисене кĕлтăвать. Анчах пурăнасса вăл вырăс пуянĕсем майлă, вĕсемпе пĕр шухăшлă пулса пурăнма тăрăшать:

Алапит кил-çурчĕ вырăсла манер...
Ун пӳрчĕ катмар, ялта пĕр пĕччен
Çĕн май, шурăлла лартнă тăсăк пӳрт.

Яла пыракан пурмиса, тиеке т. ыт. те вăл хăй патĕнче хăналать. Вĕсем урлă хăй ĕçне тума тăрăшать. Алапит чухăнсемпе хутшăнмасть, вĕсене кураймасть. Акă мĕн калать вăл чухăнсем пирки:

Çынна ан хĕрхен, нихçан ан каçар:
Пырши тухсассăн—пыршине тапта!
Кам-ха вăл начар? Кахал,—çав начар.
Çавсем хапсăнаç çынри ямăта...

Пуянăн шухăшĕ те урăхла. Ун чĕри яланах кашкăрăн. Ял-йыш та пуян Алапите кураймасăр пурăннă. Çапла вара куштан-пуян Алапите Чаккасем вĕлерсен, ялти чухăнсем савăнаççĕ.

Алапит пуянăн Итрен ятлă ывăлĕ те ашшĕ пекех куштан. Ашшĕ хыççăн Итрен ял пуянĕ пулса юлать. Текейпе пĕрле шыв арманĕсем лартаççĕ, капитализм çулĕ çине тăраççĕ.

„Хĕн-хур айĕнче“ историлле поэма—иртнĕ пурăнăçăн тискер сăн-сăпатне, чухăнсен пусмăрти пурăнăçне аван кăтартса парать. Вăл чăннипех те—эпопея. Ун чухнехи йывăр кунçулпа класс кĕрешĕвĕ çинчен пĕлни малашнехи çутă кунçула уççăнрах курма

пулăшать, ĕççыннисен социализм строительствинчи хастарлăхне çĕклет. Социализм тума чăрмантаракан тăшмансене—патша йыттисене, ĕмĕрхи алапитсен тымарĕсене пĕр хĕрхенмесĕр тĕппех кăкласа ывăтма пулăшать.

„Хĕн-хур айĕнче“ поэма пек пысăк та паха произведенисем пирĕн чăваш литературинче сахал. Вăл чăвашсен пусмăрти асаплă пурăнăçĕпе вĕсен кĕрешĕвне кăтартакан лайăх произведени пулса тăрать. Вăл чăвашсен иртнĕ ĕмĕрне пĕтĕçтерсе, тараннăн, тĕрĕс кăтартса парать. Ирсĕр тăшмансен юлашкисемпе малашне те вăйлăн кĕрешме чĕнет. Поэма тăрăх çырнă „Чакка“ пьеса та, сцена çинчен анмасăр, иртнĕ асаплă пурăнăçа аса илтерĕ.

## М. Д. ТРУБИНА.

(1888 ç.)

Марфа Дмитриевна Трубина (Трубина Мархви) 1888 çулта, Куславкка районĕнчи Куснар ялĕнче çуралнă. 1903-мĕш çулта Чĕмпĕрти Чăваш шкулĕн приготовительнăй класне вĕренме кĕрет. 1909-мĕш çулта Чĕмпĕрти (Ульяновск) учительсене хатĕрлекен Чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Çавăнтанпа халиччenех хăйсен ялĕнче учительница пулса ĕçлет. Çырма Марфа Дмитриевна Чĕмпĕрте вĕреннĕ чухнех тытăнса пăхнă. Унăн творчестви Октябрь революцийĕ хыççăн çеç палăрса сарăлма тытăнать. М. Трубинан малтанхи произведенийĕсем „Шурăмпуç" (1918 ç.), „Сунтал" журналсенче, хаçатсенче, тĕрлĕ хрестоматисенче тата уйрăм кĕнекен те пичетленсе тухнă.

Унăн паллă произведенийĕсем çаксем: „Мучар", „Ĕç тухмарĕ", „Праски йăнăшĕ", „Хĕрлĕ галстук", „Хăнаран", „Килет" т. ыт. те. Кĕнекесем: „Ачасем валли çырнă юмахсем" (1924 ç.), „Хĕрлĕ галстук" (1925 ç.), „Ача-пăча сăввисем" (1926 ç.), „Çĕнтерчĕ" (1928 ç.), „Марине" (1929 ç.), „Пĕчĕк бригадирсем" (1931 ç.), „Ĕç тухмарĕ" (1933 ç.), „Калавсем" (1933 ç.), „Мучар" (1934 ç.), „Хĕллехи каçсенче" (1935 ç.). Халĕ Трубина повесть çырать. Трубина ячĕ чăваш литературинче паллă вырăн йышăнса тăрать. Унăн „Хĕрлĕ галстук", „Мучар" т. ыт. калавĕсене нумайăшĕ пĕлеççĕ, юратса вулаççĕ.

Вăл хăйĕн произведенийĕсенче ялти пурăнăçпа колхоз строительстви çинчен, чăваш хĕрарăмĕ çинчен ытларах çырать. Класс тăшманĕсен сăнне, вĕсем колхоз строительствине хирĕç епле кĕрешнине Трубина тарăн кăтартса парать. Анчах унăн произведенийĕсенче положительнăй типсем схемăллăрах, шупкарах тухаççĕ. Ку пысăк çитменлĕх пулса тăрать. Пирĕн геройсен сăнĕсем вăйлă пулмалла. Вĕсем тăшмансенчен вăйлине тĕрĕссĕн сăнласа кăтартмалла. Комсомолецсем, пионерсем, учительсем ĕçленине автор кăтартать пулин те, ялти класс тăшманĕсемпе кĕрешес ĕçри тĕп вăйсемпе парти руководстви произведенисенче çителĕклĕ тарăн курăнмаççĕ.

Калавсен сюжечĕсем пуян. Колхоз строительстви тапхăрĕнчи ял пурăнăçне кăтартас енчен унăн произведенийĕсем паллă вырăн йышăнса тăраççĕ.

Малтанхи çулсенче Трубина сăвăсем те çырнă: „Ĕçĕр, чăвашсем, ĕçĕр" („Сунтал" № 1, 1924 ç.). „Пукани", „Автан автать",

„Куян юрри“, „Марук чăххи“ („Сунтал“ № 4, 1924 ç.). „Çамрăка“ („Сунтал“ № 6, 1924 ç.), „Тырă акаканăн юрри“, „Çумăр хыççăн“ („Сунтал“ № 4, 1925 ç.).

**„Ĕçĕр, чăвашсем, ĕçĕр“** сăвва самогонка юхтарса тыррисене ĕçсе пĕтерекен çынсене тĕртсе çырнă. „Ĕçĕр, черккепе мар, алтăрпа“,—тесе тăрăхласа питлет.

**„Тырă акаканăн юрри“** сăвăра çĕр ĕçĕ пĕччен хуçалăхра епле йывăр пулнине кăтартса парать. Колхоз тума чĕнет:

Пĕччен, пĕччен тарăхса
Ĕçлемĕпĕр малашне,—тет.

**„Çамрăка“** сăввинче, Чĕкеç Ç. поэта хисеплесе çырнăскерĕнче, пусмăр тĕнчине ылханса çырать. Автора хăйне çамрăк чух пусмăр самани ӳсме, çырма, уççăн юрлама ирĕк паман пулсан, революци хыççăн çамрăксен сассисем уççăн янăранине кăтартать:

Эпĕ ӳснĕ пусмăрпа,
Манăн юрă çавăнпа
Уçă, çирĕп янрамасть.
Вутлă-хĕмлĕ тухаймасть.

Эсĕ пултăн каярах.
Сана пусмăр пит ватман.
Сан сассу та уçăрах,—
Çирĕп килĕ аякран.

Колхозсем организацилеччĕнхи тапхăрта Трубина „Пасар кунĕ“, „Хĕрлĕ галстук“, „Малалла“, „Марине“, „Вупăр“, „Хăнаран“, „Эрех çулĕ“, „Лапчăк пӳртре“ калавсем çырнă. Вĕсенче автор ялти кивĕ йăласем çĕнĕ пурăнăç тума чăрмантарнине, пуринчен ытла хĕрарăмсен йывăр пурăнăçне кăтартса парать.

**„Хăнаран“**, **„Эрех çулĕ“** калавсенче ĕçкĕ сиенне—ĕçке кайнă çынсем шăнса вилнине, ачисене шăнтса вĕлернине кăтартать. **„Малалла“**, **„Марине“**, **„Хĕрлĕ галстук“** калавĕсенче ял çĕнелсе пынине сăнласа парать.

Каярах çырнă „Мучар“, „Килет“, „Ĕç тухмарĕ“, „Праски йăнăшĕ“ т. ыт. произведенийĕсем колхоз строительствин тĕрлĕ тапхăрĕсене кăтартса параççĕ.

**„Мучар“** ятла повĕçре Трубина Мархви колхоз строительстви тавра пыракан класс кĕрешĕвне кăтартса парать. Колхоза хирĕç кĕрешекен тăшмансем колхоза шалтан аркатма пăхаççĕ. Мучар, чее майсемпе „чухăн“ ятне илсе, колхоза кĕрсе, унта хăйĕн тăшманла ĕçĕсене тума пуçлать. Колхоза хирĕç тĕрлĕ сăмах сарать, колхоза кĕрес текен çынсене тĕрлĕ майпа хăратма пăхать. Çавăн пирки Анушки, Савин Михали, Хумма т. ыт. те малтанах колхоза кĕмесĕр юлаççĕ. Анчах кулакăн шалчи тулать. Унăн вăрттăн ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларса, ăна тытса каяççĕ. Чухăнсемпе вăтамсем колхоза йышлăн кĕме пуçлаççĕ. Савин Михали те колхоза кĕрсе активлă ĕçлеме пуçлать.

Мучар—ялти кулак. Совет влаçĕ, колхоз юхăмĕ мучарсен капиталистла ĕмĕтне çапса хуçрĕ. Çавăнпа вĕсем туллашаççĕ, кĕрешеççĕ. Каллех хăйсен саманине тавăрасшăн кĕрешеççĕ. Мучар та колхозсем пĕтессе ĕмĕтленет, колхоза хирĕç кĕрешет. Ылттăнпа сутă тăвакан Иван Михалч тăшманпа иккĕш калаçнинче

Мучар пире хăйĕн чăн-чăн тăшманла чĕрине уçса кăтартать. Акă мĕн калаçать Мучар: „Эпир хăть иксĕмĕр те чеерех пулса, хамăра хамăр раскулачить турăмăр. Да... Пирĕн пĕр шăрпăк та Совета каймарĕ. Чухăна кĕрсе ĕлкĕртĕмĕр. Чышкă пек пўртсенче пурăнатпăр. Полнăй пролетари вĕт эпир, хи-хи-хи! Раскулачить тăвăр ĕнтĕ пире. Мĕн илесси пур пирĕнне?..

Власть урăхла çаврăнас пулсан, халех эпĕ хула пек çурт лартăттăм, çĕлен пек кукăр мăйлă хура йăйăр туянăттăм. Ялти чухăнсене пĕтĕмпе алла çавăрса илсе, кирпĕч завочĕ е мĕн те пулин çавăн пек пуймалли ĕç пуçласа ярăттăм. Халь пур—çурран, çĕтĕк пиншакпа, çăпатапа лапсăртатса çўре. Хăçан пĕтĕ-ши кун пек тарăхасси? Хăçан совет влаçĕ ўпне-питне çаврăнса ўксе чикеленсе кайĕ-ши? Совет влаçĕ пĕтессине ĕмĕтленсе кăна пурăнатăп. Ах, пĕттĕрччĕ хăвăртрах!“. Çавăн пек шутлать Мучар—сурăх тирне пĕркеннĕ кашкăр.

Анчах хăйĕн пурăнăçĕ-ĕмĕчĕ сасартăк татăлнипе, Мучар, хаяр тăшман, урсах каять. Çиллине шăнараймасăр, вăл тем тума та хатĕр. Хăйĕн пĕчĕк ачине те алăк урлă ывăтать. Çывăракан ачисене çĕçĕ ярса илсе вĕлерме тăрать: „Вилччĕр! Пĕтчĕр! Пур ачине те вĕлеретĕп! Пире пурăнма ирĕк памаççĕ. Луччă вилччĕр!“—тет Мучар. „Мучар куçне-пуçне чарса пăрахнă, пырĕ хăрăлтатать, шăлĕсене йĕрсе шатăртаттарать“,—тет автор Мучар пирки.

Калаври положительнăй типсене—Арманов, Анна Петровна сăнĕсене автор таранннăн илсе кăтартман. Вĕсем чĕрĕ çын пекех курăнмаççĕ. Вĕсен урлă авторăн тăшманпа кĕрешекен вăйлă çынсен сăнне памалла пулнă. Кулака хирĕç кĕрешекен тĕп вăйсене имшерккерех кăтартнă. Анушки сăнне илсен, автор ăна аван кăтартнă. Савин Михали те лайăх тип пулса тухнă.

„Мучар“ повесть колхоз строительстви тапхăрĕнчи класс тăшманĕсен чее ĕçĕсене кăтартса парать, класс тăшманĕсене тупса тăрă шыв çине кăларма пулăшать. Колхозри аван пурăнăçа та автор лайăх сăнлать: ача сачĕ, ясли, столовăй, радио т. ыт. те. Çав вăхăтрах, колхоза кĕмен çынсен пурăнăçне те танлаштарса кăтартать. Тĕслĕх: „Анушки хутаçран çăкăрпа тăвар, тымарĕпех тăпăлтарнă сухан кăларса хыврĕ... Типсе кушса кайнă çăкăра пĕчĕк витрери шывпа сыпса çиет“. Михаля та, „краççин çутмасăрах, хуранти сивĕ яшкана сыпса выртрĕ“.

Калава çăмăл чĕлхепе, ăнланмалла çырнă. Автор ял пурăнăçне лайăх пĕлсе, сăнаса çырать. Çавăнпа та картинисем чĕрĕ тухаççĕ. Тĕслĕх: „Михаля Анушки çумне суратран пĕр кĕлте илсе ларчĕ“. „Ăна выртма пит кансĕр. Çурăм айĕнче те тăпра муклашки, те чул татки шăтарас пек ыраттарать... Михаля ўслĕкне те çавăрса ярать“. „Тырă пĕтерсен, лашапах куккусем патне панулми кайса илĕпĕр“ тени те халăх калаçнипе вырăнлă усă курса çырнине кăтартать. Чĕлхене илемлетекен майсем (танлаштару, эпитет т. ыт. те) нумай тĕл пулаççĕ. Тĕслĕх: „Колхозăн урпа пусси хĕррипе пысăк кайăк евĕрлĕ машина хăлаçланса çаврăнать. Хăлаçланать, васкаса чупса çаврăнать пусă йĕри-тавра

улăпла "кайăк—машина". „Урпа пĕр пучахсăр, шăпăр пек ларать" т. ыт. те.

„**Ĕç тухмарĕ**" калав класс тăшманĕсен юлашкисем чее майсемпе пытанса пурăннипе колхоза çаратса, хăйсен ирсĕр ĕçне тăсма хăтланнине кăтартать. Хветут, ĕлĕк арман хуçи патĕнче тарçăра пурăннăскер, халь колхоз арманĕнче заведующи пулса ĕçлет. Хветут арманта колхозшăн тăрăшсах ĕçлет. Талăкра 20—25 пăт кĕреçе çăнăхĕ кăларса, колхоза йĕркеллĕ парса пырать. Пĕрре вăл, Кавăрлепе арман ураписене майланă çĕрте кунĕпе ĕçлесе ывăннипе, ĕçес шухăша тытать. Халиччен вăл ĕçмен. Унăн арăмĕ Мариç, делегатка, ăна хытă тытнă. Укçине шутласа усранă. Укçа пĕтернĕшĕн арăмĕ вăрçасран хăраса, Хветут арманти пĕр пăт çăнăха илсе, Кавăрлепе пĕрле Московкина патне ĕçме кайнă. Мариç часах сисет: „Ара, арман çăнăхне сутса ĕçнĕ пулĕ-çке кусем?"—тет. Упăшки колхоз пурлăхне салатма пуçлани çинчен правленине пĕлтерет. Пухура Хветута заведующинчен кăларма тата суда пама, Московкинăна ялтан хуса яма ял канашне пĕлтерме йышăнаççĕ.

Кам-ха вăл Московкина? Докуменчĕсем тăрăх вăл—мал енчи чухăн чăваш хĕрĕ. Кунта вăл ик-виç уйăх каялла килсе кĕнĕ, кукăль тата сăра сутса пурăнать. Юлашкинчен эрех иле-иле сутать. Ухтару тусан, Московкина кам иккенĕ палăрнă. Вăл—раскулаченнăй çын арăмĕ-мĕн, çавăн хыççăн ăна района тытса каяççĕ. Мариç вара: „Тухăçлă çын тупрăм, терĕ пуль Хветута çыпçăнса та... анчах ĕç тухмарĕ",—тет.

Ку калав кулаксем колхоза хирĕç кĕрешес ĕçре хăйсен ĕçне тĕттĕмрех те кая юлнă колхозниксем урлă тунине кăтартать. Хветута хăй майлă çавăрса, Московкина колхоз пурлăхне çаратасшăн пулнă. Вăл, суя документпа çÿресе, пуяс шутпа спекуляцие тытăнать. Хăй лишенка пулнине, раскулаченнăй иккенне пытарса пурăнать. Вăл—класс тăшманĕ. Ăна тивĕçлипе тытса кайнă.

Хветут малтан лайăх колхозник пулнă. Колхозшăн тăрăшнă. Анчах арман çăнăхне Московкина патне ĕçес шутпа илсе кайни —колхоз пурлăхне, социализм пурлăхне салатни пулса тăрать. Арăмĕ вăхăтра асăрхаман пулсан, Московкина илĕртнипе, вăл колхоз çăнăхне татах та йăтма пултарнă. Мĕншĕн тесен вăл ĕçме кашни кунах кайма пуçланă. Кунта Хветут кулаксем чейине сисме пултарайманни паллă. Политика енĕпе вăл кайра тăнă. Çавăнпа та калав колхозниксене вĕрентме, вĕсен сисĕмлĕхне хăпартма кирлине кăтартать. Çынна тĕттĕмлĕх тăшман аллине кĕртсе ÿкерме пултарать. Хветут вĕреннĕ пулсан, кĕнеке-хаçатсем вуласа пынă пулсан, унăн политика енчен сисĕмлĕх, сыхăлăх пулнă пулĕччĕ. Çапла илĕртекен Московкинана вăл хăй тыттарнă пулĕччĕ.

Арăмĕ, Мариç, вăл енчен сисĕмлĕ хĕрарăм. Вăл—делегатка, çĕнĕ хĕрарăм. Московкина Хветута улталама пуçланине часах сиссе, ăна тыттарать. Упăшки çинчен те правленине тĕрĕс каласа парать. Вăл колхоз пурлăхне çаратма никама та ирĕк памасть. Çавăнпа Хветута та тивĕçлĕ айăпланă. Çапла вара, ку

калав колхозниксен класс сисĕмлĕхне, политикăпа культура пĕлĕвне хăпартма кирлине кăтартать. Марисем яла çĕнетес ĕçре, тăшмансене тăрă шыв çине кăларас ĕçре активлă кĕрешекен хĕрарăмсем пулса тăраççĕ. Вĕсем ялсенче совет влаçне вăйлатассишĕн кĕрешеççĕ.

**„Праски йăнăшĕ“** калава 1934 çулта çырнă. Унăн содержанийĕ çапла. Колхоз тунă вăхăтра (1930 çул) Праскисем колхоза кĕреççĕ. Анчах Праски, Селле ятлă сектантла мăнаккăшĕ илĕртни хыççăн кайса, колхозран тухать. Йăлăм вăрманне ĕçлеме каять. 4 çул пурăннă хыççăн ялне таврăнать те пиччĕшĕсем колхозра çав тери лайăх пурăннине курать. Иванăн çĕнĕ пӳрт, выльăх чĕрлĕхсем те, япаласем те нумай. Праски тухса кайнă чух унăн лапчăк пӳртсĕр пуçне нимĕн те пулман. Çиме те çитмен. Праски тĕлĕнсех каять халь. Хăй те вара колхоза кĕрсе ĕçлеме пуçлать. „Йăнăш пулчĕ ман, йăнăштарчĕ мана мăнакка. Пысăк йăнăш турăм эпĕ...“ тет.

Ку калавра Трубина колхозсем çирĕпленсе çитнĕ вăхăта кăтартать. Çак енчен калав „Мучар“ повĕçри событисен малалли тапхăрĕ пек пулса тăрать. „Мучар“ колхозсене организациленĕ вăхăтсене кăтартать пулсан, „Праски йăнăшĕ“ калав коммунистсен партийĕ, пирĕн Сталин çулпуç ертсе пынипе колхозсем большевикла, колхозниксем пуян та культурăллă пурăнăçпа пурăнма пуçланине кăтартса парать.

„Праски йăнăшĕ“ калавра Трубина чухăнсем колхоза кĕрсе, ударлă ĕçлесе лайăх пурăнма пуçланине сăнласа парать. Ĕлĕкрен лайăх пурăнăç çинчен юмахсенче çеç илтнĕ чухăнсем халь чăнчăн пурăнăçпа тулли пуянлăхра пурăнаççĕ. Ивансем те, ялти ытти колхозниксем те лайăх пурăна пуçланă. Павăл пичче, Микула пичче, Варуç аппасем т. ыт. çĕнĕ пӳрт лартнă. Кашни колхозник ĕне, чăх-чĕп, сурăх, сысна усрать. Ял сăнĕ те пĕтĕмпех улшăннă. Колхозра клуб, пысăк мунча, сĕт-çу ферми, чăх-чĕп ферми, пахча-çимĕç тăварламалли, типĕтмелли завод, лаша витисем, парикмахерская т. ыт. туса лартнă. Армана электричество двигателĕ лартма хатĕрленеççĕ, килсене Ильич лампочки кĕртеççĕ т. ыт. те. Çакăн пек картина тухса тăрать Праски умне: колхозлă ял, пиччĕш çемьи, колхозниксен пурăнăçĕ.

Яла киличчен Праски умĕнче çаплах хăй тухса кайнă чухнехи кивĕ ял сăнĕ курăнса тăнă.

Праски, хăй пысăк йăнăш тунине сиссе, халь колхоза кĕрет. Сектант мăнаккăшĕ çинчен те тарăхса аса илет. „Мĕншĕн мăнакка сăмахне итлерĕм-ши?“ — тесе ӳкĕнет, йĕрет: „Пурăнăттăм эпĕ, сирĕн патăрта, анчах эпĕ, эсир çак пурăнăçа тунă чух... эпĕ... эпĕ сиртен уйăрăлса пурăннă. Кунта ĕçлемен... Çук çинчен тухса кайрăм та, пур çине килсе кĕтĕм. Йăнăш пулчĕ ман, йăнăштарчĕ мана мăнакка. Пысăк йăнăш турăм эпĕ, пичче, пысăк йăнăш!..“—тет пиччĕшĕнчен намăс пулнăран. Праские хăйĕн шухăшĕ, йăнăш ĕçĕ намăслантарнă. Анчах пиччĕшĕсем ун çине ап-

ла пăхма шутламан та. Вĕсем Праски таврăнса хăйсемпе малалла колхозра ĕçлеме килĕшнишĕн савăннă.

Пиччĕшĕ те, çемьи те йăнăшнă Праски çине тĕрĕс куçпа пăхаççĕ. Ăна халь вĕсем ырă çын тăвасшăн. Ĕлĕкхи Праские вăрçнă пулсан, хальхи Праские юратаççĕ.

Колхоз пикенсех çĕнĕ пурăнăç тăвать. Колхозниксем те çĕнелсех пыраççĕ. Иван пек колхозниксем колхозра хăйсен телейĕсене тупнă. Тырă-пулă тулăх, выльăх-чĕрлĕх йышлă, апат-çимĕç çителĕклĕ, пӳртри пӳлĕмсенче радио, патефон, балалайка, тимĕр кроватьсем, чечексем, фотоаппарат, çĕлемелли машина, „Молни" лампа, венски пукансем, хура-кĕрен тĕслĕ ваткăллă утиялсем, аэроплан моделĕсем, стена çинче Ленин, Сталин, Молотов, Крупская сăнĕсем, совет писателĕсем çырнă кĕнекесем, хаçатсем т. ыт. те пӳрте илемлетсе тăраççĕ. Çири чаплă тумсем пĕве илемлетеççĕ. Хĕрлĕ питре юн выляса тăрать. Ват çынсем те лайăх пурăнăçра ватăласшăн мар. Вĕсем те чĕрĕ, патвар, сывлăхлă: çамрăксем пек юрлама, ташлама, шӳт тума та пултараççĕ. Мики пичче те колхоз парикмахерскинче сухалне те, пуçне те хыртарать. Одеколонпа уçăлтарать. Çамрăкланнă Микине арăмĕ те паллаймасть. Анчах та колхозсен çакнашкал ӳсĕмĕсене калав геройĕ таçта, упа шăтăкĕнчи пек пурăнса, 4 çул хушшинче пачах пĕлмен те илтмен пек туса çырнине ĕненесех килмест. Праски кайса пурăннă çĕрте те çынсем çĕнĕ пурăнăç юхăмĕнчен аякра уйрăм тăмаççĕ ĕнтĕ.

Калав вулакансене, колхозниксемпе колхозницăсене лайăх ĕçлеме, лайăх пурăнăç тума чĕнет. Пуян та культурăллă пурăнăç колхозра çеç пулма пултарнине ĕнентерӳллĕ кăтартса парать. Вăл пур вулакан колхозниксене Праски пиччĕшĕ пек пурăнма чĕнет. Уйрăм хуçалăхпа пурăнакансене тĕрĕс çул кăтартса парать, вĕсене колхоза кĕме чĕнет.

**„Килет"**—3 пайлă пьеса („Сунтал" № 10—11, 12, 1930 ç.) колхоз организациленнĕ вăхăтри кĕрешĕве кăтартать. Содержанийĕ çапла. Колхоз председателĕ Тамир Павăлĕ çĕнĕ ĕçшĕн вăйне хурса ĕçлет. Арăмĕ, Мавра, Анна ятлă сектантка тата Юс илĕртнипе, колхозран тухать. Упăшкинчен уйрăлса, сектантсемпе çыхăнса каять. Класс тăшманĕ, кулаксене сутăннă Юс колхоза пĕтерес тесе, суя документсем тăвать, чухăнсемпе вăтамсене хăратса, колхозран тухма заявлени çырса парать. Шĕшлĕне колхоз вăрлăхне çĕртме хушать. Колхоза хирĕç пуху тăвать. Анчах вăл пухăва часах салатса яраççĕ. Пионера кĕме хатĕрленнĕ 11 çулхи Çемен, Юс ывăлĕ,—Шĕшлĕне колхоз вăрлăхне çĕртме тата ытти тăшманла ĕçсем тума çынсене хăйĕн ашшĕ хушнине Тамир ывăлне—Михха пионера—каласа парать. Вара Шĕшлĕне, Юса часах тытаççĕ те района ăсатаççĕ. Хăвартрах вăрлăх хатĕрлеме, пухма колхозниксемпе колхозницăсем çĕнĕрен вăй пухаççĕ, тенкĕсем, мăй çыххисем, сехетсем, сурпан çаккисем, пирсем, укçасем т. ыт. те параççĕ. Çав кун яла трактор килет. Пьеса Тамир сăмахĕпе пĕтет. „Вăрлăх тупса ĕнтĕ, колхоз уйне шурататпăр!

Колхоз тăшманран хăтăлса юлчĕ. Тăшмансем çĕнĕ пурăнăç юхăмне тем пек тăрăшсан та чараймарĕç. Вăйлăн юхать вăл! Вăйлăн килет! Килет-килетех! (Трактор кĕрленине илтсе.) Илтетĕр-и? Ав кĕрлет! Çĕнĕ пурăнăç çак сасăпа, машина сассипе çыхăнать. Килет ĕнтĕ вăл! Килет! Нимĕнле тăшман та чараймасть! Килет!"

Пьеса çĕнĕ пурăнăç, колхоз юхăмĕ вăйлăн аталанса пынине, çав вăхăтрах ăна класс тăшманĕсем тĕрлĕ майсемпе чăрмантарнине, вĕсемпе çине тăрса вирлĕн кĕрешме кирлине кăтартать.

## ХУСАНКАЙ.

(1907 ç.)

Петр Петрович Хусанкай 1907 çулта, Тутар республикинче, Анат-Элкел районĕнчи Сиктĕрме ялĕнче, вăтам хресчен çемьинче çуралнă. 1923—25-мĕш çулсенче Хусанти Чăваш педтехникумĕнче вĕреннĕ. 1927-мĕш çулта, Хусанти Восточный Педагогически институтри Чăваш отделенине кĕрсе, икĕ çул вĕренет. Ун хыççăн Мускаври „Коммунар" хаçат редакцинче ĕçлет. Юлашки çулсенче литература ĕçĕпе пурăнать. Унăн çакăн пек кĕнекесем тухнă: „Уяртсан" (1928 ç.), „Çирĕм ултта" (1930 ç.), „Сăвăсемпе поэмăсем" (1931 ç.), „Çĕрйĕркелӳ" (1933 ç.), „Магнитту" (1933 ç.). Вăл вырăсларан чылай произведенисем куçарнă (В. Маяковскин „В. И. Ленин", „Пĕтĕм саспа", А. Пушкинăн „Евгений Онегин" т. ыт. те). „Нарспи" поэмăна вырăсла куçарнă.

Хусанкай 1923 çулта çырма пуçланă. „Сунтал" тухма пуçласанах, унăн сăввисем унта тăтăшах пичетленсе пыраççĕ. „Сунталăн" 1924 çулта тухнă чи малтанхи номерĕнчех унăн виçĕ сăвă пичетленсе тухнă: „Хĕвел тухрĕ", „Хресчен, вăран", „Ан айăплăр". Ку сăвăсенче вăл ирĕке тухнă халăха хисеплесе çырать. Каярахри сăввисенче те Хусанкай Октябрь революцийĕ хыççăн ирĕке алла илнĕ ĕçхалăх пурăнăçĕпе çутçанталăк илемне сăнласа парать. Тĕслĕх: „Малтанхи пароход çинче", „Эпир хатĕр", „Тарçă хĕре", „Тăвăл иртсен", „Ирĕк тимĕрçĕ", „Ирĕк çĕршывăма", „Н. И. Уç поэта сума-суса" т. ыт. те.

Акă, тĕслĕх, хăшпĕр сăввисене илсе пăхар:

Çук... вăхăт çитрĕ,
Тĕттĕм çĕнес çук;
Хĕвел çиçсе тухрĕ,—
Ĕмĕр анас çук. („Хĕвел тухрĕ").

Мăшкăллăх, чуралăх сӳнчĕ те кĕлленчĕ,—
Хĕрхенӳсĕр пулчĕ тимлĕ Вут Ама.
Çитмĕл çичĕ халăх ирĕкпе киленчĕ,
Харăссăн пикенчĕ ăна мухтама. („Тăвăл иртсен").

Хытăрах янтра,
Çĕнтерӳ юрри!
Пĕтĕм çĕр тавра
Пĕттĕр мул хурри!..

Çӳлерех çĕклен,
Ирĕк мăлатук!
Сана хĕсĕрлен
Урăх чĕрлес çук.
(„Ирĕк тимĕрçĕ").

Чăваш ҫынни те ак паян макăрмасть.
Паян—ирĕк хĕвел савнă чух. („Н. И. Уҫ поэта
сума-суса").

Каярахри ҫулсенче те вăл аван произведенисем ҫырать. Тĕслĕх: „Ҫирĕм ултă" „Ҫĕрйĕркелӳ", „Магнитту", „Хас", „Маяковские асăнса", „Пул примерлă ленинҫă", „Басмач" тата ытти те.

Анчах Хусанкай пĕр вăхăтра тĕрĕс ҫул ҫинчен пăрăнса, индивидуализм, есенинщина еннелле сулăннăччĕ. Ку вăхăт—1926—30 ҫулсем. Ун чухне бужуаллă националистсем, социализм строительствин тĕрлĕ участокĕсенче йăва ҫавăрса, тăшманла ĕҫсем туса пынă. Буржуаллă националистсем Хусанкая хăйсен поэчĕ тăвасшăн пулнă. Пулхăрăн „ылттăн ĕмĕрĕ" патнелле каялла туртнă. Пулхăр ĕмĕрне мухтаса юрлама илĕртнĕ.

Вăл вăхăтра вĕсем Хусанкая ҫеҫ мар, ытти писательсене те буржуаллă национализм танатине лектерме тăрăшнă. Облаҫри руководительсем пулса, буржуаллă националистсем чăваш литературине те тĕрĕс ҫултан пăрса яма хăтланнă. Чăваш писателĕсемпе журналистсен союзне „Пулхăр писателĕсен союзĕ" тесе улăштарма пăхнă т. ыт. те.

Ҫамрăк поэт вăл вăхăтра пулхăршăн йĕрсе ҫырма тытăнать:

Чăвашсем вĕт пулнă тет пулхăр,
Асăнсанах йĕрессĕм килет. („Тăван поэта").

Ĕлĕк-авал
Ак пулнă тет пĕр пулхăр,
Леш ылттăн ордасем...
Вот это—да! („Пушкинпа калаҫни").

Хусанкай хăйне тăшмансем йăнăш ҫул ҫине туртнине сисет, йăнăшсене юсама, тӳрленме пуҫлать:

Хутлăн-хутлăн сийленнĕ кун-ҫул тĕми витĕр
Хыпалатăп, тĕпчетĕп тăкăс авала.
Пĕр сăмах, пĕр иероглиф пытарнă пур сий те:
Вăл чуралăх кирек те мĕнле хыпала.
Пултăр пулхăр, чăваш, анчах эпир пĕлетпĕр:
Чи малтан унта пур—пуянпа чухăнсем, —

тет хăйĕн пĕр сăввинче.

Кунсăр пуҫне Хусанкайăн маларах мăнкăмăллă, индивидуалистла „Эп" текен шухăшĕ те палăратчĕ.

Тĕслĕх: Часах пĕлĕҫ сан ывăлу камне,—
Чăвашсен урăх ҫук ман пекки. (Ятсăр сăвă).

Эпĕ вĕт, аппаҫăм, „паллă сăвăҫă" („Аппана").

Паянтан мана та „паллă лирик“
Тесе ят хураççĕ пулĕ тен. („Каçар“).

Сыв пулăр хам сире çывхариччен.
(„Пушкинпа калаçни“).

Хăй йăнăш çырнисене Хусанкай майĕпе сивлесе те пырать. Çынсем хыççăн кайса аташнишĕн те хăйне ÿпкелет.

Ют çын юрри, ют çыннăн. Ах, ман мар!
Пĕлетĕр пулĕ вĕт: хупах... Есенин...
Анчах тупа тăвап ăна манма,
Шыратăп урăх юрă, урăх çемĕ.
Тăван çĕршыв утать çĕнĕ çулпа.
Ăна пăхса та курмасассăн çылăх.
Çампа çак вуннăмĕш çитес Юпа
Атте-анне пек хаклă мана, çывăх.
Илтетне эс—мĕскер юрлать ав масса...
(„Сунтал“ № 4—5, 1930 ç.).

Хусанкай сăвă техникипе формине аван тăвать, çĕнĕ формăсем шырать. Çав майпа вăл вырăс поэчĕсенчен те вĕренет. Анчах вĕсемпе вăл хăшпĕр чухне тĕрĕс усă курмасть. Формипе пĕрле содержанине те илнипе хăйĕн сăввисен хакне чакарать. Акă çак примера илсе пăхар:

| Доронин | Хусанкай |
|---|---|
| Эх, да что я, | Эх, мĕскершĕн, |
| Эх, да что я | Эх, мĕскершĕн |
| Все глотаю в хате дым? | Эп ларатăп пăчăхса? |
| Выйду в поле | Уттарам-ха, |
| Золотое, | Чуптарам-ха, |
| Выйду к нивам молодым... | Çаврăнам-ха хир пăхса... |
| | („Уй-хир юрри“). |

**„Çирĕм ултта“** („Сунтал“ № 6, 1927 ç.). Ку поэма Хусанкайăн чи аван, чи вăйлă произведенийĕ. Унăн форми те, содержанийĕ те лайăх килĕшсе пыраççĕ. Большевиксен Бакури çирĕм ултă комиссарне тискер тăшмансем вĕлерни çинчен калакан хурлăхлă поэма вулакан чĕрине ыраттарать.

Поэма граждан вăрçи вăхăтĕнчи, 1918 çулти, ĕçе кăтартса парать. Вăл вăхăтра çамрăк республикăна капиталистла государствăсем таптаса пăрахма шутланă. Йĕри-тавра хура çăхансем явăнса çÿренĕ. Поэмăра автор совет влаçĕшĕн хăйсен пуçĕсене хунă Кавказри çирĕм ултă комиссар (Шаумян, Фиолетов, Джапаридзе, Малыгин, Азизбеков т. ыт.) çинчен хурланмалла çырать.

Авăн уйăхĕн çирĕммĕш кунĕ,
Тамăкри пек вунсаккăрмĕш çул.
Кам пытарĕ паян, кам тунĕ?

Авӑн уйӑхӗн ҫирӗммӗш кунӗ
Ҫирӗм ултӑ маттур—пулчӗҫ ҫук.

Каспи тинӗс чӑнах та йӗрет-ҫке—
Ҫирӗм ултӑ ята асӑнать.

Анчах Совет влаҫӗ тискер тӑшмансене, интервентсене Совет ҫӗрне таптама памасть:

Ӗҫҫынни! Эс кала: „памӑп, памӑп!
Ҫирӗм ulttӑн ҫеҫ мар эпир!" те.

Революцишӗн вилнӗ комиссарсене тӑван ҫӗршыв нихӑҫан та манас ҫук. Вӗсен ячӗ ӗҫхалӑх чӗринче ӗмӗр-ӗмӗр пурӑнӗ. Вӗсен ҫӗршывӗ чечекленсех пырӗ.

... Таса юн, эс пӗр айӑпсӑр юхрӑн.
Икҫӗр ҫиччӗмӗш юнлӑ ҫухрӑм;
Вӑл паян та ҫаплах хӗрлӗ-ши?

Саксаул тӗмӗсем чӗрӗ юнлӑ,
Ӑна курӗҫ пайтах мӗльюн.
Ҫирӗм улттӑн ҫеҫ мар эпир юлнӑ.
Саксаул тӗмӗсем чӗрӗ юнлӑ,
Хӑйӑра сӑрхӑнаймӗ вӑл юн.

Поэмӑра малтанах ҫитменлӗхсем те тата хӑшпӗр тӗлте тӗрӗс мар шухӑшсем те пулнӑ (сӑмахран, большевиксен тӑван ҫӗршывӗ ҫинчен каланӑ вырӑн). Ку ҫитменлӗхсене автор, кайран тепӗр хут пӑхса тухса, тӳрлетсе ҫырнӑ.

Чӗлхе енчен автор поэмӑна аван ҫырнӑ. 26 комиссар вилни ӗҫхалӑхӗшӗн епле йывӑр пулнине автор тӗрлӗ майсемпе кӑтартса парать. 26 комиссаршӑн ҫутҫанталӑк та йӗрет.

Каспи тинӗс чӑнах та йӗрет-ҫке,
Каҫпала эс итле-ха, сӑна...
Ҫирӗм ултӑ ята асӑнать.

Ав самум та ҫаплах йӗрсе илчӗ—
Ҫирӗм ултӑ ята асӑнать.

Ҫухрӑмсем вӗлтлетеҫҫӗ хисепсӗр,
Кӑвакарчӗ кӗрхи тӗттӗм каҫ.
Ах, сисетпӗр, сисетпӗр, сисетпӗр!
Тенӗнех пралуксем янӑраҫ.

Каспи тинӗсӗн парӑнми хумӗсем те, „Ҫирӗм улттӑн вӗсем, ҫирӗм улттӑн!"—тесе, ҫырана пыра-пыра ҫапӑнаҫҫӗ... Вӗсен ятне ҫухатмасӑр усраҫҫӗ.

„Ҫирӗм ултӑ" поэмӑна Хусанкай виҫӗ стопаллӑ анапестпа ҫырнӑ. Тӗслӗх:

◡ ◡ — ◡ ◡ — ◡ ◡ — ◡
Ҫирӗм улттӑн вӗсем, ҫирӗм улттӑн,
Ҫирӗм ултӑ чӑн-чӑн коммунар.

Рифмăсене те аван тунă. Вулана чух вĕсем çăмăллăн, хăйсемех шăрçаланса пыраççĕ. Тĕслĕх: улттăн—ылттăн, кунĕ—тунĕ, мар-ши—маршĕ. Е çак куплета илер:

Ман çеç мар, тĕнчери пур ĕçхалăх
Паян кун çăлăнăç тилмĕрет.
Малашне тек асаймĕ чуралăх,
Юлашки хут ларап тĕрмере.

**„Басмач"** („Сунтал" № 9—10, 1933 ç., 3—4, 5, 1934 ç.). „Басмач" поэмăна автор 1928 çулта çырма пуçланă. Ăна çырса пĕтермен-ха. Автор ку поэма пирки умсăмахĕнче çапла çырать: „Унта эп Туркестанăн çурма-феодаллă пурăнăçне Октябрь революцийĕ пырса кĕнине, вырăнти тĕрлĕ сийлĕ халăх ăна епле йышăннине кăтартасшăнччĕ. Тĕп герой—Рахманкул. Вăл, чухăн çын ывăлĕ фанатик-мусульман, килти „телей" ăнманнине кура, басмачсен ордине пырса кĕрет. Анчах ăна кавычкăпа çеç басмач теме пулать. Вăл аташса кайнă йĕкĕт. Поэмăн юлашки пайĕсенче вăл хĕрлисем майлă çаврăнса ӳкет, ӳкĕнĕçлĕ юрăсемпе хăйĕн йăнăшĕсене сӳтсе-явса, хĕрлисене Хассанбекăн (чăн басмачсен хӳтĕлевçин) карташне илсе пырать, ăна тыттарать".

Поэма тĕрлĕ тĕнлĕ, тĕрлĕ чĕлхеллĕ ĕçхалăхĕ те совет влаçне тĕрĕс ăнланма, ун енне куçма пуçланине кăтартать. Рахманкул та поэмăра хăйне çапла ӳкĕтлет:

„Йăнăш, тет вăл хăйне – йăнăш,
Тӳрленейми эп йăнăшнă!
Ну, Рахманкул, сыхлан, тăрăш
Кĕмешкĕн тепĕр роль ăшне..."

Поэма хĕвелтухăç енчи халăхсен кивĕ йăлисемпе те аван паллаштарать. Поэмăн содержанийĕ вăйлă. Форми енчен те аван, илемлĕ, çăмăл вуланать. Тĕслĕх:

Мĕлке пек икĕ паранджа
Шăваççĕ уйăх çуттинче.
Кĕтсе аптранă тур лаша
Çĕре чавать çыр хĕрринче.

**„Çĕрйĕркелӳ"**—историри событисене (Разин, Пугачев, 1905 çул, 1917 çул), историри кĕрешӳсен çулйĕрне кăтартакан поэма. Автор ĕçхалăхĕн ĕлĕкхи йывăр пурăнăçĕ вĕсене кĕрешĕве хĕтĕртнине кăтартать. „Пиçиххи пек ансăр вырттаççĕ анасем" тет ĕлĕкхи çинчен. Йывăр, выçă пурăнăç чухăна пуян патне уттарать, пуян ĕçне ĕçлеттерет. Çав вăхăтрах:

Пуян Карукпа
Хыткукар Михетерĕн
Кĕлет тулли тыра çĕрет.

Историри тĕрлĕ тапхăрти нумай событисене, кĕрешӳ тапхăрĕсене кăтартса кайнипе, поэма схемăллă тухнă. Чĕлхе енчен поэмăра ăнланма йывăр тата яка мар вырăнсем тĕл пулаççĕ. Тĕслĕх:

Никам пулăшмасăр,
пĕр хамăр вăйпа
тăран транспорта,
сассăр завода.

Е тата: ... пирĕн вăй кооперацире,
ун урлă
ӳсетпĕр
социализма.

**„Магнитту“** поэмăра автор Магнитогорскри комбинатшăн кĕрешекен çĕнĕ çынсем, социализм çыннисем çитĕннине кăтартать. Ĕçлекенсем хушшинче социализмла харпăрлăха упрас шухăш та çирĕпленсе пырать. Тĕслĕх, мăкшă çынни пăр айне ӳкнĕ лома анса илни т. ыт. те. Сехре Терентейĕ те изобретатель пулса, çĕрĕ-çĕрĕпе ĕçлесе, çĕршыва пулăшасшăн, техникăна вăйлатасшăн кĕрешет. Çав вăхăтрах шалти тăшман тĕттĕм каçсенче мĕнле вăрттăн ĕçленине те поэма аван кăтартса парать. Анчах тăшмансем революци пуçарнă ĕçе пĕтерсе лартайрас çук нихăçан та, мĕншĕн тесен:

Çăлтăрсем...
вĕсенчен
нумай хут чее—
Çăлтăр куçлă çынсем
хуралласçĕ:
Урала,
çĕршыва,
революцие.

Анчах „Магнитту“ поэма та, авторĕ калашле, чăнах та:

„Вăл
литературăн
магниттăвĕ мар,—
Магнитту çинчен
литература çеç“.

„Çĕрйĕркелӳ“ поэмăри çитменлĕхсем кунта та палăраççĕ. Чĕлхи ăнланмалла мар, йывăр вуланать.

Социализм строительствипе кĕрешӳ çинчен çырнă „Çĕрйĕркелӳ“, „Магнитту“ поэмăсем Хусанкай тĕрĕс çул çине тухса пынине кăтартаççĕ.

1936-мĕш çулта Хусанкай Н. И. Полорусов-Шелепие чысласа пĕр сăвăллă произведени çырчĕ. Унта вăл—чăваш писателĕ-поэчĕсене асăнса тухнă. Малтанхи йĕркесенче ĕлĕкхи пусмăр тĕнчине вăрçса çырнă. Хăйĕн „Хас“ сăввинчи пекех, кунта та чăваш пек ха-

лăхсен кĕнекине ĕне (буржуази) çисе янă тесе калакан халапа асăнса илет. Октябрь революцийĕ хыççăн чăваш поэчĕсем йышлă çемье пулса тăнине кăтартать. Автор кунта чăваш литературин çитĕнĕвĕсемпе пĕрлех çитменлĕхĕсене те кăтартать. Тĕслĕх, поэтсем ятшăн, хушаматшăн çунаççĕ, анчах пурнăçа тĕплĕн те тарăннăн илсе çырнă произведенисем пирĕн çукрах-ха, тет.

Хусанкай творчестви пысăк улшăну тапхăрне çитсе тăчĕ. Пĕр хушă çырмасăр тăнă хыççăн, халь вăл çĕнĕрен çырма пуçларĕ. „Сунталра“ сăввисене пичетлеме тытăнчĕ. („Элтиван пичче“, „Мухтав аслă Ленина, мухтав аслă Сталина“ юрă т. ыт.). Ĕлĕкхипе хальхи чăваш ялĕнчи типсене сăнласа лайăх сăвăсем тунă, халăх юмахĕсемпе халапĕсем тăрăх сăвăласа юмахсем çырать.

## УЙĂП МИШШИ.

(1911 ç.)

Михаил Данилович Шумилов (Уйăп Мишши) 1911 çулта, Шупашкар районĕнчи Мăштавăш ялĕнче, вăтам хресчен çемьинче çуралнă. Шупашкарти школа-коммунăра вĕреннĕ. 1926 çулта комсомола кĕнĕ. 1927—1930 çулсенче Шупашкарти педтехникумра вĕренет. 1930—1933 çулсенче Горькири пединститутра истори факультетĕнче вĕренет. Вĕренсе тухсан, 1933—34 çç., Шупашкарти ялхуçалăх рабфакĕнче истори вĕрентет. 1934 çулхи кĕркунне Уйăп Мишши Хĕрлĕ Çара каять. Хĕрлĕ Çартан таврăнсассăн, курссенче вĕрентет, „Сунтал" редакцинче ĕçлеме пуçлать. 1938—39 çулсенче Уйăп Мишши Чăваш Совет писателĕсен правлени председателĕ пулса ĕçлет. 1939 çул Уйăп Мишши каллех Хĕрлĕ Çара каять.

1940 çулта Чăваш АССР Верховный Совечĕн президиумĕ Уйăп Мишшине Хисеплĕ Грамотăпа наградăланă.

Уйăп Мишшин çакăн пек кĕнекесем тухнă: „Сăвăсем" (1930 ç. ытти авторсемпе пĕрле), „Автозавод" (1930 ç.), „Машинăсем кĕрленĕ çĕрте" (1931 ç.), „Çамрăк вăй" (1931 ç.), „Тăван çĕршыв" (1938 ç.), „Пирĕн юрă" (1940 ç.).

Уйăп Мишши сăввисем çĕнĕ пурăнăç хаваслăхĕпе тулнă. Вĕсем пирĕн тăван çĕршыва савса янăраççĕ. Уйăп Мишшин тематики анлă. Çĕршывра пулса пыракан ĕçсене вăл часах çивчĕ асăрхать. Пурăнăçпа пĕртан утса пырать: Хĕрлĕ Çар çинчен çырать-и вăл, юрату, колхоз, завод çинчен-и—пурне те вăл тĕрĕс çутатса парать, класс интересне çирĕп тытса пырать. Вăл литература ĕçхалăхĕшĕн пулмаллине аван пĕлет. Çавăнпа та Уйăп Мишши:

Нумай эп сăвă сăвăларăм<br>Çĕршыв мухтав ĕçĕ çинчен.<br>Унтан хисеплĕ чаплă парăм<br>Ман çук çĕршывăм умĕнче,—

тет „Çурçĕр сăввисенчен" сăвăра.

Уйăп Мишши 1924 çултах çырма пуçланă. Унăн сăввисем содержани енчен те, формипе те аван. Вĕсене çамрăксем питĕ юратса вулаççĕ. Кам пĕлмест Уйăпăн „Автобуспа", „Завод шавĕ", „Ленин мавзолейĕнче" т. ыт. сăввисене? Шкул ачисем вĕсене пăхмасăр калаççĕ. Шупашкартан автобуспа ларса тухакан та унăн „Автобуспа" сăввине аса илет:

Автобусĕ пĕр хашкарĕ,
Пĕр вĕçтерчĕ çивĕччĕн.
Сывă пулах, Шупашкарĕ,
Эпир тепре киличчен!..

Автор хăйĕн сăввисене чĕререн юратса çырать. Çавăнпа та вĕсем вулакансен кăмăлне те каяççĕ. Малтанхи тапхăрта çырнă сăвăсенчен Уйăп Мишшин **„Ленин мавзолейĕнче“** сăвви паллă вырăн йышăнса тăрать. Вăл сăвăра автор хăй Ленина кайса курни çинчен çырать. Автор революцин генилле çулпуçне курнă чух хумханмасăр чăтма пултарайман. Çавăнпа сăвă вулакан чĕрине те хумхантарать. Автор вулакана та ĕмĕр манми Ленин çинчен тарăн шухăша ярать. Вĕсем вулакана та Ленин вилнишĕн хурлантараççĕ. Тĕслĕх, çак вырăнсене илсе пăхар:

Хуркайăк пек карталанса
Черет кĕтсе тăратпăр.
Хуллен-хуллен шăватпăр,
Çамрăк чĕре карт сикет.
Акă çитрĕмĕр. Пăхатпăр,
Ленин атте çывăрать...
Ах! Вăл питĕ лăпкă выртать.
Тăрас пекех туйăнать.
Çук, тăмарĕ. Ĕмĕрлĕхех
Куçне хупнă курăнать...
Çапла асăннă Ленина
Ĕнтĕ куртăм пĕр хутчен!
Ĕмĕр манмăп. Вăл каяс çук
Манăн куçăм умĕнчен.

Ленин вилнишĕн автор ытти сăввисенче те хурланса çырать:

Хĕвел ав куççулленнĕ.
Ав куççулленнĕ çил.
Паян вĕт вилнĕ Ленин,
Çил-тăвăл йыхравçи.

Çук пуçлăх,—çук Ленин...
Тет завод, мĕкĕрет.
Куççулĕпе хулленĕн
Хурланчăклăн йĕрет...

(„Çук пуçлăх“).

Анчах Ленин вилнĕ пулин те, унăн ĕçĕ пурăнать. Автор Ленин кăтартнă çулпа пыма чĕнет; коммунистсен партийĕпе Сталин çулпуç кăтартнă çулпа таччăн пĕрлешсе пыма йыхăрать:

Вилнĕ... Тапмасть чĕри унăн.
Анчах ларас çук кулянса.
Ĕççынни мĕльюн-мĕльюнăн
Сталин тавра пухăнса

Унăн ĕçне пикеннĕ.
Чĕрĕ вăл, Аслă Ленин
Кашни ĕççын чĕринче!

(„Ленин“).

Аслă Сталин тытать пирĕн çут çулйĕре
Чи хаваслă çут пурăнăç патне.

(„Çунатлă çĕршыв“).

Ленинăн хурçă партийĕ—
Пирĕн çĕнтерӳллĕ çулпуç.

(„Вăл чĕрĕ“).

Уйăп Мишши тăван çĕршыва ырласа сăвăсем нумай çырать. Унăн çитĕнĕвĕсене кăтартать. Совет Союзĕ çитĕнĕвĕсемпе пĕрлех Чăваш республикĕн чаплă ĕçĕсем çинчен те çырать. Çĕршывпа пĕрле автор хăй те савăнать. Ирĕке кăларнă Октябрьти Аслă революцине автор яланах аса илет:

Çут Октябрь, хаяр вутлă тăвăл пулса,
Ĕмĕрхи пусмăра ишсе тăкрĕ тĕпрен.
... Пурнăçларĕ çĕршыв ĕмĕрсен ĕмĕтне.

(„Ĕмĕрсен ĕмĕчĕ“).

Çак кун тулнă
Пусмăр тĕнчийĕн шăпи,
Çак кун ăна ишнĕ
Тĕпрен çĕмĕрсе.

Çак кун кĕрĕслетнĕ
„Аврора“ туппи,
Çĕн ĕмĕр пуçламĕш
Çинчен пĕлтерсе.

(„Октябрь юрри“).

Çĕршывăн хĕрӳллĕ ĕçне автор çак сăмахсемпе кăтартать:

Кунсем тӳсме çук хăвăртлаççĕ.
Ах, вăхăт ытлах та хĕрнĕ çав.
Çĕршыв паян—тимĕрĕç лаçĕ,
Унта хурçăлаç пурнăçа.
Çĕршыв паян пысăк ĕç тытнă,
Мĕльюнлă алăпа вăл ĕçлет.

(„Эпир ударник“).

Ĕççынни хăй камшăн ĕçленине те пĕлет халь. Вăл хăйшĕн, хăйĕн çĕршывне тĕреклетессишĕн ĕçлет.

Çап, ĕççыннийĕ!
Мăлатуккăна çап!
Эс мĕн тунийĕн
Эс хăв кăна хуçа!..

(„Ударниксен маршĕ“).

Уйрăм строительство ĕçĕсем çинчен те автор сăвăсемпе поэмăсем çырать. Вĕсем Совет çĕршывне çĕнетсе улăштарас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăнине кăтартать. Тĕслĕх: „Юлашки штурмсем“, „Днепрострой“ (Сунтал“ № 3—4, 1933 ç.).

**„Юлашки штурмсем“** (поэма сыпăкĕ, „Трактор“ № 8, 1934 ç.). Автор кунта Горькири автозавода туни çинчен, завода тунă çĕрте ĕçлекен çамрăк паттăрсем çинчен çырать. Çамрăксем за-

вода туса пĕтерессишĕн ҫавтери тăрăшса ĕҫлеҫҫĕ. Завода тунă ҫĕрте тĕрлĕ наци ĕҫхалăхĕ ĕҫленине те кăтартать автор. Вĕсен пурин те пĕр тĕллев—завода часрах туса пĕтересси. Акă Америка инженерĕ Стэн, ялтан килнĕ хĕр Марине т. ыт. те. Марине „тăвать рекорд хыҫҫăн рекорд". Кунта ĕҫлеме килекен те нумай:

Утаҫҫĕ пиншерĕн ĕҫҫынĕ
Автогиганта пулăшма.
Эшелон-эшелонăн, вĕҫсĕр
Килет пролетари кунта...

Кунне-ҫĕрне пăхмасăр ĕҫлет кунта халăх. Акă гаваньре строй-материалсене шыв иле пуҫланă. Пурте ҫĕрхутах ĕҫлеҫҫĕ, унта каяҫҫĕ:

Пурте каларĕҫ:
— Атьăр!
Хăҫан эпир мĕне ҫĕнтермен?
Ялан ҫапăҫмашкăн хатĕр!

Ĕҫленĕ хыҫҫăн каҫсерен ҫамрăксем аван канаҫҫĕ. Купăс сасси, ташă янăрать бараксенче:

Ҫухăр, купăс!
Ҫиҫет ҫамрăк кăмăл.
Ҫухăр, купăс!
Савнин пек сассу.

Тухрĕ Петĕр.
Ури-алли ҫăмăл.
Эх, ташлать,
Урай те пур, те ҫук...

Ҫапла ҫăмăл ташлать ĕнерхи батрак, Петĕр кĕтӳҫ,—паянхи автозавод хуҫи.

Ҫав вăхăтрах ĕҫрен таракансем—летунсемпе рвачсем те тĕлпулаҫҫĕ. Вĕсем пивнойсенче Есенин сăввисене каласа, хĕрарăмсемпе алхасса вăхăта ирттереҫҫĕ:

Ҫынсем ҫунаҫ хĕрӳ штурмра.
Кусен—эрех черкки умра...
Ҫынсем ĕҫре хавас тупаҫ.
Кусем эрех ĕҫсе супаҫ.

Паллах, завода та вĕсем усă тума пыман, ĕҫрен те хăранă:

— Кунта ĕҫ тухмасть.
Кунта ĕҫ йывăр.
Завода туччăр пирĕнсĕрех,—

тет таркăн Ваҫук, хăйĕн виҫĕ юлташне тарма хĕтĕртет. Вăл—арман хуҫи ывăлĕ. Ваҫук пек тăшмансем: „Автозавод тăвакансем выҫă лараҫҫĕ, укҫа памаҫҫĕ" тесе, элек сараҫҫĕ ялта.

Анчах арман хуҫи ывăлĕ завода епле лекме пултарни вулакансене паллă мар.

**„Автобуспа“** сăвăра Шупашкарпа Канаш хушшинчи çул илемĕ çинчен, Чăваш çĕршывĕ çинчен çырнă. Автобус çӳреме пуçлани Чăваш республикишĕн, унăн ĕçхалăхĕшĕн пысăк çитĕнӳ пулнă. Вăл сăвăрах Уйăп Шупашкара поезд пырасси çинчен çырнă. Уйăп Мишши автобуспа пынă чух таврари илеме те асăрхать, социализм çĕршывĕ улшăннине курать:

Ыраш хумĕ уй урлах
Кусать, ăçта çитет-ши?
Мĕн чул жнейка та çурла
Вĕсене кĕтет-ши?

Канашра ухлать кунта
Хурçă паровозĕ,
Вăл та çак çитес кунах
Шупашкара куçĕ..

Уйăп Мишшин пуринчен ытла граждан вăрçи, Хĕрлĕ Çар, сыхлăх темипе çырнă сăвăсем нумай. Вĕсем содержанипе форми енчен те Уйăпăн чи аван сăввисем пулса тăраççĕ. Тĕслĕх: „Кунсем“ (поэма сыпăкĕ), „Çунатлă çĕршыв“, „Çилхи витĕр çил вĕрет“, „Чикĕре тăнă чух“, „Тĕттĕм каç“, „Чикĕре“, „Çурçĕр сăввисем“, „Тинĕс тӳлеккĕн тĕлĕрет“, „Хĕрлĕ часовой“, „Çĕнетпĕр эпирех“, „Çĕнтерӳ юрри“, „Икĕ ăсату“, „Ăсату каçĕ“ т. ыт. те.

**„Кунсем“** поэма сыпăкĕнче граждан вăрçинче Хĕрлĕ Çар паттăрăн çапăçса, Врангель, Деникин, Колчак, Юденич т. ыт. империализм йыттисене хамăр çĕршывран хăваласа яни çинчен çырать. Партипе унăн çулпуçĕсем—Ленинпа Сталин ертсе пынипе çĕршыв ӳсни çинчен, вăл никам çĕнтерейми крепость пулса тăни çинчен илемлĕ формăпа сăвăласа парать.

Поэма сыпăкĕ Совет çĕршывне тĕрлĕ шурă генералсем тапăннă вăхăтпа пуçланать:

Йăлт хупăрланă,
йăлт...
Кашни хăйранă
шăл.

Врангель, Деникин,
ав,
Хĕсрĕ Колчакĕ
шав.

Вăрçрĕ Юденич
хыт—
Ватă йӳтенĕ
йыт.

Анчах Совет Союзĕ вăйлă, хастар:

Вăхăт, ытла та
ан ур.
Пирĕн те вăй-хал
пур.
... Тытăр кашнийĕ
штык.

Эй, ĕççыннийĕ,
тух,—
Тăвăл кĕрленĕ
чух!
Халăх, мĕльюнăн
тăр!

Малалла Совет çĕршывĕ 12 çул хушшинче мĕнле улшăннине кăтартать. Унтан тепĕр революци пулса, тĕнчипе пусмăр çухаласса кĕтет автор:

Кашнă заводăн янăран
сасси—
Тăшман вăхăтне шутлан
часси...

Çулăмпа эс хыпăнсан,
тĕнче,
Пусмăрлăх çухалĕ сан
çинчен...

Сăвă техники унăн çăмăл, вулама питĕ аван. Техника енчен Уйăп Мишши тăрăшса ĕçлет. Илемлĕ литература форма енчен, образлăхĕ енчен уйрăм япала пулмаллине аван пĕлет вăл. Çавăнпа вăл сăввисене образлă, илемлĕ формăпа, илемлĕ янăракан рифмăсемпе çырать. Тĕслĕх, „Кунсем" сыпăкри çӳлте кăтартнă вырăнсем те ун çинчен аван кăтартаççĕ. Маяковский пек, сăмаха татса, куçарса рифмăлани те тĕл пулать:

Халăх, мĕльюнăн
тăр!
Е татах юнăх-
тăр.

**„Çилхи витĕр çил вĕрет"** сăвăра пирĕн çĕршыв, тăшман тапăнас пулсан, ăна яланах çапса çĕмĕрме хатĕрри çинчен çырать:

Хĕççине хăйрать тăшман, пире юнать,
Тупписем тăсасшăн вутлă чĕлхине.
Юхтарасшăн мĕн вĕсем пирĕн юна,
Тавăрасшăн каяллах ĕлĕкхине.

Анчах: Кам пулсан та, шикленесси—пире ют!
Тыт-ха, тусăм, çирĕпреххĕн чĕлпĕре.
Урхамахăм, урхамахăм,—çивĕч ут.
Çилхи витĕр, çилхи витĕр çил вĕрет.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар мирлĕ саманана, социализм строительствине сыхласа тăнине те аван сăнлать автор:

Эй, кашлать, кашлать хирте колхоз тырри,
Колхоз халăхĕ ĕçлет-çке савăнса!
Тăшман юнлă аллине çеç тăстăр-и—
Вилĕм тупĕ ăçтан килнĕ çавăнтах.

Çапла, Совет çĕрне, колхоз хирне тăшмана таптама памасть пирĕн Хĕрлĕ Çар, пирĕн ĕçхалăхĕ. Тăшман килес пулсан:

Эпир хатĕр, Ворошилов чĕнтĕр çеç,
Чĕнтĕр çеç Буденный—çивĕч командир,—
Шĕл-кăвар пек утсене кĕçентерсе,
Ăмăрткайăксем пек вĕçĕпĕр эпир.

**Тинĕс тӳлеккĕн тĕлĕрет"** сăвăра та (ăна символлă сăвă теме пулать) этемлĕх тинĕсĕ çинчен çырать. Вăл тинĕс хумханса кайсан, хамăр çĕршыва сыхлама пурин те алла пăшал тытма кирлине кăтартать автор. Сăввине автор пиллĕкшер йĕркеллĕ куплетсемпе çырнă; малтанхи йĕрки куплет вĕçĕнче тепĕр хут вуланать, ун пек куплетсене эстраднăй куплетсем теççĕ.

Т ĕ с л ĕ х: Анчах асрах эс тыт ăна:
Вĕççĕр тинĕс тӳлекĕнче
Хăрушă тăвăл пытанать,
Хăрушă тăваллă тĕнче!..
Ялан асра эс тыт ăна..,

„Хăрушă тăвăл“ тесе автор тăшмансем вăрçăпа тухассине калать. „Этемлĕх тинĕсĕ хаяррине“ систерет автор. Çавăнпа чикĕри хурал вăйлă пулмаллине кăтартать Уйăп Мишши.

Çĕршыв тулашĕнчи тăшмансемпе пĕрлех, автор шалти çĕленкалтасем те пирĕн телейлĕ çĕршыва хирĕç вăрттăн сăтăрла ĕçсем тунине ылханса çырать. Троцкист-зиновьевецсен вăрă-хурахла банди Кирова вĕлерни тата ытти ĕçĕсем шалти тăшмансем çавтери урса хăтланнине кăтартаççĕ. Мĕнпур ĕçхалăхĕпе пĕрле хăйĕн **„Вилĕм тăшмансене“** ятлă сăввинче „çĕршыв чĕрине вилĕм тĕллесе“ тăракан вăрă-хурахла бандăна автор ылханлă вилĕм сунать:

Ылхан сире!
Пĕр вилĕмпе ылхан çеç!
Ылхан сире пур халăх чĕринчен!

Мĕншĕн тесен вăл тăшмансем пирĕн çĕршыва, пирĕн çулпуçсене пĕтересшĕн пулнă:

Аслă садра йăшаланса çĕленĕн
Наркăмăшласшăн унăн çимĕçне,
Юнлă аллисене тăшман çĕкленĕ...

**„Çĕнĕ çул курки“** сăвăра çĕнĕ çулта çĕршывri пулас çĕнĕ çитĕнÿсемшĕн савăнса куркасене çĕкленине кăтартать. Çĕнĕ çула хаваспа кĕтсе илет, ăна саламлать:

Тавăрăнми иртсе юлать
Асран кайми мухтавлă çулĕ.
Куркамăрсем çĕкленччĕр çÿллĕ,
Салам, салам Çĕнĕ çула!
Çĕнĕ страница уçăлать
Телейлĕ халăхсен çĕршывĕн...

Çав вăхăтрах çĕнĕ çулта Испани ĕçхалăхĕ ирĕклĕхшĕн юн юхтарать. Вĕсемшĕн тата пур тĕнчери ĕçхалăхĕшĕн çĕнĕ çул ирĕклĕх кÿрен çул пулса тăмаллине кăтартать автор:

Инçетре тупăсем улаç.
Юн юхтарать Испани сынĕ...
Шанатпăр, пур ĕçхалăх çĕнĕ!
Салам çĕнÿ кÿрен çула!

**„Çурçĕр сăввисем“** цикл Уйăпăн лирикăллă чи аван сăввисем пулса тăраççĕ. Кунта эпир чăн-чăн пролетариллĕ лирика мĕнле пулмаллине аван куратпăр. Кунта çĕршывri сыхлăх ĕçĕ те, юрату ыйтăвĕ те, сăвă çырасси т. ыт. те—пурте çĕнĕ пурăнăçпа килĕшсе тăраççĕ. Нăйкăшу сăввисем, мещенле юратусем кунта ют япала. Вĕсене кураймăн. Кунта савнисем, çамрăксем тăван çĕршыва сыхлама хатĕр. Çĕршывшăн çунаççĕ.

Уншăн кунне-çĕрне пĕлмесĕр

Тăратпăр эпир вахтăра,—
тенĕ Совет çĕршывне сыхлани çинчен.

Тăшман тапăнас-мĕн пулсан, совет халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывĕн чиккине сыхлама яланах хатĕр:

Васкаса шăвать поезд. Çил кассăн
Вăркăшать. Эп вĕçĕп кăнтăра,
Килелле! Анчах, кирлĕ пулсассăн,
Эпир хатĕр хăть хăш самантра
Каялла таврăнмашкăн! Илтетĕп:
Лăпкă мар ман çĕршыв чиккинче.
Эпир тăрăпăр сыхă, килте те
Эпир манмăпăр чикĕ çинчен. („Çурçĕр экспресĕ").

**„Çурçĕр сăввисенчен"** сăвăри куплетсем ытарма çук илемлĕ. Вĕсене темиçе хут вулас килет.

Карели, эп сана юратрăм,
Эп саврăм сулхăн çурçĕре.
Эс çĕнĕ сăвăсем çуратрăн
Ман çамрăк, шухă чĕрере.

Е тата: Карели каçĕ калама çук капăр.
Карели каçĕ кантăк пек кăвак.
Ак иртсе кайрĕ шартлама декабрь...
Çăлтăрсем тухнă аслă пухăва.
Çеп-çемçе мамăк пек выртать-çке юрĕ,
Тытса анчах пыр çăмăл йĕлтĕре!
Çак капăр каç та тин янранă юрă
Ак кĕç иртсе юлаççĕ пĕлтĕре...
... Ман чĕрере вăранĕ шур декабрь,
Эс пулăн Çурçĕр çăлтăрĕ хăвах...
Карели каçĕ калама çук капăр!
Карели каçĕ сан куç пек кăвак.

(„Çурçĕр çăлтăрĕ").

Хĕрлĕ Çара кайма юрăхлă пулнишĕн пирĕн çамрăксем савăнаççĕ. Вĕсем çеç мар, килтисем те, савнийĕсем те хĕпĕртеççĕ уншăн.

Савăнсах ăсатаççĕ вĕсем савнисене Хĕрлĕ Çара, çĕршыва сыхлама:

Ăсататăп сана кулянмасăр...
Анчах ан ман... хăв савнă чуна...

(„Ăсату каçĕ").

**„Икĕ ăсату"** сăвăра ĕлĕк салтака мĕнле ăсатнине кăтартнă. Ĕлĕк хурлăхлă юрăсем юрласа, чĕререн татăлса йĕнипе вăлылханлă ĕмĕрти çав хурлăхлă юрăсем пирки автор çапла çырать:

Ăçтан çынсем вăл юрра манĕç.
Вĕсем каймаççĕ асăмран.
Салтак юрри!
Ăçта юхман эс
Пусмăр тӳсен çĕршывăмра?

Халь ăсатни çинчен çапла çырать автор:

Чуптуса килйышĕ сунчĕ сывлăх,
Ӳлесе утмарĕ хыçалтан.
Чи хисеплĕ çын-мĕн вĕсен ывăлĕ,
Чи хисеплĕ çын—хĕрлĕ салтак.

Ĕлĕкхи пурăнăç асаплăхĕ çинчен, ăна хирĕç ĕçхалăхĕ кĕрешме тухни çинчен те Уйăп Мишши сăвăсем çырнă. Т ĕ с л ĕ х: „Сулă çинчи юрă“, „Атăл кĕвви“ т. ыт. те.

**„Сулă çинчи юрăра“** автор Атăл хĕрне тухсассăн, пулса иртнĕ ĕçсем çинчен аса илнине çырать. Кунта вăл Атăл тăрăх ĕлĕк Разин хастар кĕрешсе çӳренине асăнать. Атăл çыранĕ бурлаксен, ĕçхалăхĕн юнне, тарне ĕлĕк мĕнчул сăхман-ши? тесе аса илет:

Бурлаксен шăммисем мар-и
Çав шур хăйăр айĕнче?—

тет автор „Атăл кĕвви“ сăввинче.

Уйăп Мишшин колхоз, юрату, вĕренӳ, комсомол, хĕрарăм т. ыт. пирки çырнă сăвăсем те нумай. Пуринче те вăл ирĕк çĕршыв аванни çинчен çырать. Вăл вĕренме, лайăх пурăнма, çын пулма ирĕк панине савăнса кăтартать.

Т ĕ с л ĕ х:

Кам шур пĕркенчĕк айĕнче тăрса
Халь хӳхлесе хăй пурнăçне ылханĕ?
Паян вăл, пурçăн парашют карса,
Çиччĕмĕш пĕлĕт çӳллĕшĕнчен анĕ.
Эпир—ирĕклĕ çĕршывăн хĕрĕсем!
Пирĕн алăпа кĕнекесем çыранаççĕ.
Шăрçан эрешленеççĕ тĕрĕсем,
Самолет рулĕсем те çавранаççĕ.

(„Телейлĕ çамрăклăх“ цикл).

Вĕренӳ çинчен те автор нумай çырать: ваттисем те, çамрăккисем те вĕренесшĕн çуннине кăтартать:

Паян ак кĕркунне тулта,
Çамрăксен шухăшсем—шкултах...
... Ӳссе çитнĕ аппам Альтин
Вĕренесшĕн çунать халь тин,

... Мĕншĕн, мĕншĕн-ха ман йĕрес?
Ĕлĕк юлнăшăн халь вĕренес!
(„Вĕренӳшĕн").

Акă икĕ савни тĕрлĕ хулана вĕренме каяççĕ, пĕр-пĕрне лайăх вĕренме сунаççĕ:

Çуллахи вăхăт иртсе карĕ...
Каятăп эп... эсир юлатăр...
Кĕтет мана ват Шупашкарĕ,
Сана кĕтет инçе Улатăр...
... Халь вĕренме сăмах паратпăр
Пуçсем чечен те çамрăк чух.
(„Уйрăлнă каç").

Юлашки çулсенче Уйăп Мишши „Ĕмĕрсен ĕмĕчĕ", „Шупашкар", „Октябрь юрри" т. ыт. сăвăсем çырса кăларчĕ.

**„Ĕмĕрсен ĕмĕчĕ"** сăвăра автор этемлĕх мĕн ĕлĕкрен ĕмĕтленнĕ лайăх пурăнăç—„ĕмĕрсен ĕмĕчĕ"—Совет Союзĕнче пурăнăçланни çинчен çырать. „Халиччен çын курман ĕмĕрпе" „халиччен нихăш ĕмĕр курман çĕнĕ çынсем" çинчен çырать Уйăп:

Шăранса çĕкленет юрă ман чĕрере
Чаплă ĕмĕр çинчен чаплă юррăм пур ман.
Халиччен çын курманччĕ кун пек ĕмĕре,
Çук, кун пек çынсене нихăш ĕмĕр курман!
... Пурнăçларĕ çĕршыв ĕмĕрсен ĕмĕтне.

Ĕмĕрсен ĕмĕтне пурăнăçа кĕртессишĕн ĕçленĕ Ленинпа Сталин çулпуçсене ырă ятпа асăнать автор.

„Октябрь юрри" сăвăра та пирĕн ĕçхалăх телейлĕ, савăнăçлă ĕмĕрте пурăннине кăтартать:

Нихçан та хĕвел кун пек çутă пулман—
Çак чаплă ĕмĕр çĕр çине киличчен.
Никам пирĕн пек халиччен пурăнман,
Никам пирĕн пек юрламан халиччен.

**„Шупашкар"** сăвăра кивĕ Шупашкар—вăрман промышленникĕ пулнă Ехрем хуçасен Шупашкарĕ—тĕпренех улшăнни çинчен çырать.

Шупашкар!
Ирĕк халăхăн ирĕк хули!
Çурчĕсем епле çӳллĕ,
Патмаррăн çĕкленчĕç.
Хĕвĕшет халăх
Аслă урамсем тулли.
Сачĕсем—пирĕн пурнăç пек
Чечекленчĕç.

Уйăп Мишшин прозăпа çырнă произведенисем те чылай. Сăмахран, **„Автозавод“**, **„Автостройра“**, **„Эмма çырăвĕ“**, **„Ачасем патĕнче хăнара“**, **„Тĕлпулу“** т. ыт. те. Малтанхи икĕ очеркĕнче Уйăп Мишши Горькири автозавода епле туни çинчен çырать. Тĕрлĕ наци, 4 пин ĕçхалăхĕ хутшăнса ĕçленине кăтартать. Культура енчен Горькири чăваш вĕренекенсем те завода пулăшнине кăтартать (хаçат кăларни, вечер, хор организацилени т. ыт. те).

**„Эмма çырăвĕ“** (калав) „Хĕрлĕ Октябрь“ ятлă пусма фабрикĕнче ĕçлекен Фрида ятлă чăваш хĕрĕ патне Германирен нимĕç хĕрĕ Эмма çыру янă. Фрида Эммапа Германи рабочисен делегацийĕ Совет Союзне Май уявне курма килсен паллашнă-мĕн.

Эмма хăйĕн çырăвĕнче Совет Союзĕн ӳсĕмĕ пирки буржуази хаçачĕсенче суйни çинчен çырать. „Ĕмĕрсем тăршшипе, сыпăкран сыпăка этемлĕх ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсене кулленхи ĕçре пурăнăçа кĕртетĕр эсир“ тесе çырать Эмма Штейнер,—комсомолка. Фридăпа пĕрле фабрикăри ĕçлекенсем те Эмма патне ответлесе çыру çырса яраççĕ, çыхăну тытаççĕ.

**„Тĕлпулу“** калавра Хĕрлĕ Çара каякансен призывне кăтартать. Прием пӳлĕмĕнче Санька хăй ĕлĕк палланă Вениамина тĕл пулать. Вениамин—пуп ывăлĕ. Ăна мĕнле салтака илме пултарнă-ха, тесе тĕлĕнет Санька. Хăй пуп ывăлĕ пулнине комиссартан вăл пытарнă пулмалла тесе, комисси председателĕ ячĕпе Санька çыру çырать. Çавăн хыççăн Вениамина Хĕрлĕ Çара илмеççĕ. Калав Санька чăн-чăн патриот пулнине аван кăтартса парать. Тăшмансенчен çĕршыва сыхлама тăшманла çынна яма юраманнине аван пĕлет вăл.

**„Ачасем патĕнче хăнара“** очерк („Сунтал“ № 5—6, 1935 ç.) автор хăй Куйбышев облаçĕнче Ялавăр ялĕнчи чăваш шкулĕнче пулнине кăтартать. Уйăп Мишши ачасем тăрăшса вĕренни çинчен, вĕсем чăваш литературипе интересленни çинчен çырать.

Уйăп Мишши чăваш ĕççамрăкĕсемпе, ĕçхалăхĕпе çывăх тăрать. Унăн сăввисем—халăхшăн çырнăскерсем.

Унăн сăввисенче яланах çуркунне.

... Ман чĕрене, юрра, манăн сăвва та
Нихçан та витмĕ çăмăр, сивĕ çил. („Телейлĕ çамрăклăх“).

Е тата: Чи мухтавлă çĕршывра
Чи телейлĕ пурăнатпăр.
Хамăр юрă-сăвăра
Çав телей çинчен юрлатпăр. (Çавăнтах).

Уйăп Мишши сăввисем идеологи енчен çивĕч, анчах хăшпĕр сăввисем лозунгсем майлăрах тухаççĕ. („Итле, тĕнче“, „Ударниксен маршĕ“, „1-мĕш Май“, „Интернационал кунĕ“ т. ыт. те).

Уйăп Мишши прозăпа çырнă произведенийĕсене чĕлхе енчен илсе пăхар. Тĕслĕх: „Вĕтлĕх вăрман тăрăх хăйăрлă çулпа урасемпе хăйăра пăтратса пыратпăр. Акă, сип-симĕс çерем. Чулхулари хăлтăр-халтăр хытă чул хыççăн симĕс кĕççе пек çемçе çерем çине пуссан, хыт сухари хыççăн çемçе çăкăр çинĕннех туйăнса каять.

Аван та канлӗ ҫерем тӑрӑх утса пыма... Фотографсем, таҫта пушар тухсан ҫынсем пушар сӳнтерме багорсем йӑтса чупнӑ пек, аппаратсене йӑтса чупаҫҫӗ... Е вӗсем аппарачӗсене лартса, ҫӑмарта тӑвас чӑхла, йӗри-тавра кускалаҫҫӗ-кускалаҫҫӗ те, ӳкерсе илсе, татах малалла чупаҫҫӗ... Кино-операторсем те ӑҫта кирлӗ шӑтӑртаттарса лараҫҫӗ. Вӗсем те чупаҫҫӗ: пурте чупаҫҫӗ, васкаҫҫӗ... Аслӑ шыв юххи пек юхан халӑха, унӑн пиншер пичӗсем ҫинче йӑлтӑртатакан хаваслӑхпа унӑн хытӑ хӑватлӑ, хытӑ чупан пурӑнӑҫне ӳкерсе илесшӗн вӗсем, ӳкерсе юласшӑн... Анчах ӑҫтан пурӑнӑҫ юхӑмне йӑлтах ӳкерсе ҫитерес? Пурӑнӑҫ юхӑмӗ вӑл ҫавтери анлӑ та тарӑн... Хытӑ юхать. Вӑл нихӑш куҫ ытамне те, нихӑщ аппарат ӑшне те шӑнӑҫаймасть..." („Автогигант").

Е тата ҫавӑнтанах, Горький заводне тума пуҫланӑ чух, унӑн никӗсӗ айне акт ҫырса хунине илер: „Ҫапла ҫак завод никӗсӗн малтанхи чулӗ ҫак акта ӗмӗр-ӗмӗрех пусса выртса аяла пулчӗ. Вӑл ӑна пулас ҫынсем валли усрать... Тен, тепӗр пин ҫултан ҫак вырӑнта, хальхинчен йӑлт урӑх, ирӗклӗ телейлӗ ҫынсем ҫак акта тупса вуласа пӑхӗҫ те, паянхи кун ҫавӑнта ҫапла чаплӑ уяв туса малтанхи революциллӗ патшалӑхра—Совет Союзӗнче пӗрремӗш автомобиль завочӗн никӗсне хуни ҫинчен пӗлӗҫ..."

Малалла Уйӑп Мишши сӑвъисене форми енчен сӑнар.

Сӑвӑ виҫи енчен Уйӑп Мишши анапестпа ытларах ҫырать.

Тӗслӗх: Шӑранса ҫӗкленет юрӑ ман чӗремре
Чаплӑ ӗмӗр ҫинчен чаплӑ юррӑм пур ман.
(„Ӗмӗрсен ӗмӗчӗ").

Ку—тӑвата стопаллӑ анапест.

Ман ӳмра ак шӑп-шурӑ тӗтрелле
Ҫурхи ир ерипен тӑрӑлать.
Сывӑ пул, сулхӑн ҫурҫӗр Карели!
Эп вӗҫтертӗм кӑнтӑралла. („Ҫурҫӗр экспресӗ").

Ку—виҫӗ стопаллӑ анапест.

Тӑп-тӑрӑ уйӑхлӑ каҫ.
Ҫӑлтӑр ҫӳлте пит нумай... („Колхозри каҫ").

Ку—3 стопаллӑ дактиль.

Ӳнрать вӑл мӗнпур тӗнчене илтӗнсе... („Октябрь юрри").

Ку—4 стопаллӑ амфибрахий:

Эй, кашлах, кашлах, хирти тырпул,
Кашласа юлас-ха тетӗн пулӗ...
Выр, мучи, ав, пуҫ тӑкать урпу. („Пропеллер")

Ку—5 стопаллӑ хорей.

Рифмӑсенчен перекрестнӑй рифма—абаб нумай тӗл пулать. Вӑл пур поэтсен те нумай: 4 йӗркеллӗ куплетпа перекрестнӑй рифма пулакан сӑвӑсем 80% иртеҫҫӗ темелле.

Тĕслĕх: Перекрестная рифма:

Автобусĕ пĕр хашкарĕ, (а)
Пĕр вĕçтерчĕ çивĕччĕн. (б)
Сывă пулах Шупашкарĕ, (а)
Эпир тепре киличчен! (б)

(„Автобуспа").

Охватная рифма:

Таварăнми иртсе юлать (а)
Асран кайми мухтавлă çулĕ. (б)
Куркамăрсем çĕкленччĕр çӳллĕ, (б)
Салам, салам Çĕнĕ çула. (а)

(„Çĕнĕ çул курки").

Юнашар рифмăсем:

Хастарлă пăлхавçă мĕнле пуçне çинĕ, (а)
Çавна асăнса ав юрлать Атăл сынĕ, (а)
Çавна асăнса Атăл хумĕ кĕрлет, (б)
Çавна асăнап вĕсемпе эп пĕрлех... (б)

(„Сулă çинчи юрă").

1, 2-мĕш йĕркисем женская рифма пулаççĕ, 3, 4—мужская.

Уйăпăн рифмисем хитре янăраççĕ: çивĕччĕн—киличчен, кĕрлет—пĕрлех, уççинче—ут çинче, ларĕ—юрлар-и т. ыт. те.

Тĕслĕх:

Ман чĕрере вăранĕ шур декабрь,
Эс пулăн Çурçĕр çăлтăрĕ хăвах...
Карели касĕ калама çук капăр!
Карели касĕ кантăк пек кăвак.

Уйăп аллитераципе ассонанссемпе йышлăн усă курать.

Тĕслĕх: Çĕршыв çийĕн çут хĕвел çиçсе çунать... (ç)
Умра хӳхĕм хĕвелтухăçĕ çунать... (х, у)
Карели касĕ калама çук капăр!
Карели касĕ кантăк пек кăвак. (к)
Çесен хирĕн вĕççĕр ирĕк уççинче...
Çилхи витĕр, çилхи витĕр çил вĕрет... (и, ç)

Çутçанталăкри сасăсене, хусканусене те Уйăп аван евĕрлесе кăтартать. Ана звукоподражание теççĕ.

Тĕслĕх, поезд епле хытă кайнине вăл çапла кăтартать:

Поезд чупать,
Чупать, чупать.
Тимĕр çулпа,
Тӳп-тӳр çулпа.

Чупать, чупать
Тимĕр çулпа.
Чупа-чупа
Кăшкăрать: çул пар!

Урапӑсем,
Шӑлт-шалт туса,
Рельса тӑрӑх
Пыраҫҫӗ кусса...

Пурӑнӑҫваскать,
Васкать, васкать.
Эс те васка,
Васка, васка!

(„Поезд ҫинче").

Вырӑссен те поезд ҫинчен ҫапла туни пур: „Мост! мост!"— паровоз хашкани. „Пошел! Пошел!"—вагонсем халтлатни. „По-е-ха-ли! По-е-ха-ли!"—урапасем кӑлтӑртатни.

Е тата ҫава туптанӑ сасса евӗрленине илер:

Хӑшӗн ҫави лупаткашӑн,
Лупаткашӑн ҫави хӑшӗн:
Кӑшин—кашин! кӑшин—кашин!
Кӑшин—кашин, кӑшин—кашин!

(„Утӑ ҫинче").

„Автобуспа" сӑвви те, автобус чупнӑ пекех, ҫӑмӑллӑн вуланать:

Лаша пычӗ, пычӗ те,
Кам пӗлет, тем пулчӗ,—
Инҫете, таҫта ҫите
Кӑпӑкланса юлчӗ...

Чуп, автобус, хытӑ чуп!
Парсан, пар ӑна тӑн.
Сӑпкари пек пынӑ чух

Канлӗн ярӑнатӑн...
Вӗлт! ҫиҫеҫҫӗ умрисем.
Шӑранать июль ҫеҫ...
Автобуса йӑмрисем
Ачашласа юлчӗҫ...

Ак вӑрманӗ...
Ак Кӳкеҫ...

тенисем те автобус хытӑ пынине кӑтартаҫҫӗ.

Чӗлхене илемлетекен майсемпе те Уйӑп Мишши йышлӑн усӑ курать:

Карели каҫӗ кантӑк пек кӑвак. (**Танлаштару.**)

Ҫут хӗвелӗн ҫуттинче
Тӗлӗрет ҫӗршывӑмҫӑм. (**Метафора.**)

Эс хӳхӗм сӑвӑсем вӑратрӑн
Хастарлӑ сӑвӑҫ чӗринче... (**Эпитет.**)

— Уҫ-ха, Михал Данилыч Уйӑп.
Уҫсам, уҫсам, теп, алӑкна?
Ман алӑка яр! уҫса ячӗ
Ҫӗнӗ ҫирӗм тӑххӑрмӗш ҫул. (**Олицетворени.**)

Уйӑп Мишши хӑйӗн сӑввисене лайӑх тума тӑрӑшать. Хӑшпӗр сӑввисене юрӑ та тунӑ („Пирӗн тав", „Майӑн 1-мӗшӗ", „Юрӑ," „Хурӑҫ кайӑксем" т. ыт.). Содержани енчен тарӑн, чун-чӗререн ҫырнӑ, чӗлхе пуянлӑхӗпе тата поэзин тӗрлӗ формисемпе усӑ курса, шӑратса кӑларнӑ произведенисем, паллах, паха пулаҫҫӗ, вулакансен кӑмӑлне килеҫҫӗ.

## П. Н. ОСИПОВ

(1900 ç.)

Петр Николаевич Осипов 1900 çулта, Октябрьски районĕнчи Кутемер ялĕнче, пуян хресчен çемьинче çуралнă. Вăл 10 çулта чухне унăн ашшĕ-амăшĕсем вилнĕ. Ялти шкулта вĕренсе тухсан, 1910—1918 çулсенче Хусанти гимназире вĕренет. 1918 çулта Хусанти государственнăй университета, медицина факультетне, вĕренме кĕрет. 1924 çулта унтан вăл вĕренсе тухать.

1924—1927 çулсенче П. Н. Осипов Хусанти университет клиникинче ординатор пулса ĕçлет, çав хушăрах вăл Хусанти Чăваш педтехникумĕнче врач пулса ĕçлет. 1927 çулта Шупашкара ĕçлеме куçать. Больницăра врач пулса ĕçлет. Çав вăхăтрах музыкăпа театр техникумĕнче вĕрентет. Халĕ П. Н. Осипов Шупашкарти поликлиника директорĕ. Çав вăхăтрах литература енĕпе те ĕçлет, пьесăсем çырать. Совет писателĕсен союзĕн членĕ.

Хусанта 1918 çулта Чăваш театрĕ ĕçлеме пуçласан, вăл унта паллă артист шутланнă. Театр ĕçĕпе 1930 çулччене ĕçленĕ. Техникумра скрипка калама вĕрентнĕ. Чăваш музыкине, халăх юррисене, фольклорне лайăх пĕлни унăн пьесисенче те палăрать. Пьесисене вăл витĕмлĕ, илемлĕ тăвас енчен нумай ĕçленĕ. Хусанта ĕçленĕ чухне вăл хăйĕн пьесисене литература кружокĕсенче, секцисенче вуласа тишкĕрме тата сцена çинче кăтартса сӳтсе-явма панă, ун хыççăн татах юсанă, улăштарса çырнă. Унăн пьесисем 1924—25 çулсенче пичетленме пуçланнă. Вăл çырнă пьесăсем çаксем: „Икĕ каччăн пĕр шухăш" („Сунтал" № 7, 1925 ç.), „Ĕмĕр сакки сарлака", („Сунтал" 10, 11, 1926 ç.), „Кушар" (уйрăм кĕнеке, 1927 ç.), „Хĕрлĕ хунав" („Сунтал" 11, 12, 1928 ç.) „Çĕнĕ хум" („Трактор" № 8, 1933 ç.), „Айдар" (уйрăм кĕнеке, 1937 ç.), „Кулленхи симфони" (уйрăм кĕнеке, 1938 ç.).

П. Н. Осиповăн куçарнă пьесăсем те пур. Сăмахран, „Хаярлăхпа юрату" („Коварство и любовь") Шиллерăн, „Усал сывлăш" („Нечистая сила") Л. Н. Толстойăн, „Лекция о вреде табака", Чеховăн, „Горе от ума" Грибоедовăн т. ыт. те. Кунсăр пуçне вăл К. В. Ивановăн „Нарспи" поэмине пьеса тунă пулнă.

1940 çулта Чăваш АССР Верховный Совечĕн президиумĕ П. Н. Осипова Чăваш АССР Искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ ятне панă.

Осипован творчестви тематика тата композици енĕпе те ӳссе пынине сăнас майпа, пьесисен содержанийĕсемпе кĕскен паллашса тухар.

**„Икĕ каччăн пĕр шухăш“**—4 пайлă пьеса. Икĕ каччăн пĕр шухăш—иккĕшĕ те Санюка юратаççĕ. Пĕри—Тимуш, чухăнскер, салтак ачи, тепри—Петĕр, хăмла хуçи ывăлĕ, салтакран укçа парса юлнăскер. Тимуш салтака кайсан, Петĕр ултавпа Санюка качча илесшĕн çӳрет. Анчах Тимуш таврăнма ĕлкĕрет, Санюка качча илет.

**„Кушар“**—4 пайлă, 5 картинăллă драма. Ку драма та „Икĕ каччăн пĕр шухăш“ пекех, пуянсем иртĕхсе пурăннине, чухăнсенчен мăшкăланине кăтартса парать.

Кушар тесе çамрăксен çуркунне улăхра пулакан уявне калаççĕ. Ку драмăри ĕçсем патша вăрçи вăхăтĕнче пулса иртеççĕ. Драмăра пуян Энтрей хĕрĕ Лисук, чухăн Хветюк ывăлне, Вальккана, килĕштерсе пурăннине кăтартнă. Кушар вăхăтĕнче пуян Тикка ывăлĕ Эрхип, эрехшĕн çунакан Мурсай пек юлташĕсемпе пĕрле канашласа, Лисука вăрласа каять. Вальккапа салтак ачисем Лисука çăлаççĕ. Лисук вара, Валькка салтакра чух, ут кĕтӳçĕ Марки пичче патĕнче пурăнма пуçлать. Анчах Эрхип Лисука вĕлерет.

Ку драма кулаксен тискер ĕçне кăтартать. Укçапа пуянлăх вĕсене пуçпулса иртĕхсе пурăнма май панă. Хăйсен ирсĕр ĕçĕсене вĕсем эрех карланкисем урлă туса пынă.

**„Ĕмĕр сакки сарлака“**—4 пайлă, 5 картинăллă драма. Выçлăхран, йывăр пурăнăçран хăтăлас тесен, нумай пусăллă уя куçма кирлине кăтартса парать. Ишмук Павăлĕ, агрономи кăтартнă тăрăх ĕçлесе, тĕрлĕрен çимĕçсем тулăх туса илет. Хресченсене те хăй пек ĕçлеме чĕнет. Анчах Микуç пиччепе Кавăрле пеккисем ăна хирĕç. Вĕсем чӳксем туса аппаланаççĕ, агрономи уссине чухламаççĕ. Микуç пиччен Хĕветĕр ятлă ывăлĕ Ишмук Павăлĕн Верукне килĕштерет. Верук Чĕмпĕрте вĕренет. Хĕветĕре ашшĕ, ĕçлеме кирлĕ тесе, вĕренме ямасть. Часах Хĕветĕр салтака каять. Выçлăх çул çитет. Хĕветĕрĕн ашшĕ-амăшĕ тата Алтатти ятлă йăмăкĕ чирлеççĕ. Верук вĕсене пулăшкалать. Хĕветĕр таврăнсанах, ашшĕпе Алтатти вилсе каяççĕ. Хĕветĕр вара: „Пирĕн çамрăк тӳре-шара пулăшу паратех. Унччен кĕтер. Павăл пичче сăмахĕсене манас мар: выçлăхпа чире çĕнесси—вĕреннинчен килет, ăна вырăна кӳртесси—çамрăксенче!“—тет.

Çапла вара, драма хресченсене 1920—21 çулсенчи пек йывăр пурăнăçран хăтăлмашкăн нумай пусăллă уя куçма, агрономи кăтартнă пек пурăнма чĕнет. Паллах, нушаран чухăнсем вăл çулпа тухайрас çук. Ушкăнлă хуçалăх урлă кăна пуян, культурăллă пурăнăç тума пулать. Халĕ пирĕн колхозсем аслă уй-хирсенче машинăсемпе ĕçлеççĕ, агрономи кăтартнă тăрăх ĕçлесе пыраççĕ. Хĕветĕр ашшĕ пек „килте ĕçлекен çук“ тесе, çамрăксене те вĕренме чарса тăмаççĕ. Шкулсем те ялсенчех уçăлаççĕ. Пьеса ялти иртнĕ пурăнăçа кăтартса парас енчен пысăк вырăн йышăнса тăрать.

„Трахома юрри“ (1926 ç.) политика енчен йăнăш, пессимистла пьеса пулса тухнă. Пьесăри хăшпĕр геройсем тепĕр вун-вунпилĕк çултан чăвашсем пурте трахомланса—суккăрланса пĕтесси çинчен калаçаççĕ. Пирĕн партипе правительство, совет влаçĕ трахома пĕтересси енĕпе кĕрешнине, трахпунктсем уçнине, куç тухтăрĕсем, трахсестрасем вĕрентсе хатĕрлессипе ĕçленине пьесăра кăтартса паман.

Культурăллă, таса пурăнма вĕрентсе, колхозсем туса, больницăсем лартса, эпир трахома тĕппипех пĕтерсе пыратпăр. Çавăнпа та „пурăна-киле чăвашсем пурте суккăр пулĕç“ тесе калакан сиенлĕ шухăша пьесăра вирлĕн çĕмĕрсе тăкмалла пулнă.

Элкей, Васильч, Емелька врачсем, чăваш студенчĕсем уйрăммăн кĕрешнипе, суккăр ыйткалакансене купăс, укçа панипе, эрех ĕçтернипе, тост çĕклесе ĕçнипе трахома пĕтерме çук. Осипов пьесинчи пек хальхи пурăнăçа тĕрĕс курма пултарайман тата курасшăн пулман пессимистла геройсем пирĕн çĕршывра пулкаланă. Вĕсем тĕрĕс мар çулпа пыраççĕ. Автор çав йăнăш шухăшĕсене çирĕппĕн сивлесе тăкман, трахомпа кĕрешмелли чăн-чăн тĕрĕс çула, вăл çул çинчи геройла ĕçсене çутатса парайман.

„Çĕнĕ хум“ пьесинче (1934 ç.) Осипов хăйĕн йăнăшĕсене юсать. Тĕслĕх, ку пьесăра призывниксем хушшинче те трахомлисен шучĕ çулран çулах чакса пынине кăтартнă. Акă мĕн калаççĕ кунти докторсем:

Ватă доктор: Годнăйсем кăçал 60—70%-сем тупăнмалла. А вĕт ĕлĕк 10—12% аран тупаттăмăр ку районта: ыттисем е трахомлă, е начар ӳпкеллĕччĕ.

Çамрăк доктор: Кăçал трахомлисен шучĕ 10% мала пулас çук, трахома пункчĕсем вăйлă ĕçленĕ.

Воен. комиссар: Пожалуй... 1928 çулта кунти призывниксем хушшинче трахомлисем 45% пулнă, пĕлтĕр—19, кăçал—ман шутпа та 10—12%-ран мала пулма кирлĕ мар. (Пьесăн 3 пайĕ, 4-мĕш курăнни).

**„Çĕнĕ хум“** (5 пайлă драма) класс тăшманĕсем колхоза кĕрсе, шалтан вăрттăн сăтăр туса пурăннине кăтартать. Вĕсене ялти комсомолецсем тăрă шыв çине кăлараççĕ.

Класс тăшманĕсем (Лариван, Усламов, Сухал Васлейĕ т. ыт.) колхоза ертсе пыракансен ĕретне те кĕрсе кайнă: бригадирсенче, счетоводсенче ĕçлеççĕ. Колхоз председательне те вĕсем хăйсем майлă çавăраççĕ. Кустăрма Палюкĕ пек шанчăклă чухăнсене „тăшман“ туса айăплама пăхаççĕ. Палюк ывăлĕ Ахваниç колхоза кĕрсе, Хĕрлĕ Çара кайма тăрсан, ун ашшĕ çинчен Лариван призывной комиссине: „Вĕсем—кулаксем; тырăпа сут тунă, урапасем туса сутнă, арман тытнă“,—тесе элекле çыру ярать. Çапла вара Ахваниçе, Хĕрлĕ Çара илнĕскерех, хăварттарать. Ахваниç „Çилтимĕр“ колхозри класс тăшманĕсем çинчен хаçата статья çырса кăларсан, тăшмансем ăна пĕтерме тăрăшаççĕ. 1-мĕш бригадăра вăрттăн, кулакла пуху туса, Ахваниçсене „тăшмансем“ тесе колхозран кăларма пикенеççĕ. Колхоз председателĕ те, тăшман кам-

не пĕлмесĕр, йĕркеллĕ чухăнсене колхозран хăвалама ĕшкĕртет. Колхоз счетоводствинче тата ĕçкунĕсене çырса пырассинче тăшмансем пăтратса пынипе, ăна шăлса лартас шутпа пушар кăлараççĕ. Ахваниçсем тивертсе янă, тесе сăмах сараççĕ. Вĕсене çав майпа кулаксем вутта пăрахасшăн. Анчах Праски, Лариван ултавне чăтаймасăр, ăна тыттарать. Кам тĕртнине каласа парать. Кулаксен тымарне колхозран туртса кăлараççĕ.

Драма кулаксен вăрттăн ĕçне кăтартса, тăшмансене тупса тăрă шыв çине кăларма вĕрентет. Пьесăра положительнăй геройсене, парти руководствине тарăнах кăтартайман. Тăшмана ăнсăртран кăна тытаççĕ-мĕн.

**„Айдар“**—прологлă, 5 пайлă (6 картинăллă) драма. Вăл 1937 ç. уйрăм кĕнекен тухнă.

„Айдар“ драма II-мĕш Екатерина патша вăхăтĕнчи (XVIII-мĕш ĕмĕр вĕçĕнчи) чăваш хушшинчи пурăнăçа кăтартса парать. Ун çинчен драмăри пролог пĕлтерет. Прологра Екатерина патша указне граф О... вуласа парать. Указра Екатерина патша чăвашсен тĕне кĕнĕ çыннине—Айдара, вăл Пугачев юхăмне пусарнă çĕрте активлă ĕçленĕшĕн, Энĕш шывĕ тăрăхĕнчи улăхсене, вăрмансене панине кăтартнă. Указ ун ячĕпе Акчура ялне те Айдарово ятлă тума сĕнет. Умсăмахĕнче Сентиер Çеменĕн халапĕ Айдар вăхăтĕнчи ĕçсене аса илтерет. Сентиер Çеменĕ—Айдара хирĕç кĕрешекен Сентиер йăхĕ-мĕн. Айдар пек улпутсен пуçмăрне тўсеймесĕр Пугачев юхăмне хутшăннăшăн Сентиер ашшĕне вĕлернĕ. Ашшĕшĕн Сентиер Айдара тавăрать. Айдара пĕтерме ĕлкĕрет. Вăл пĕтĕм халăха Айдара хирĕç тăратать, ун çаранĕсене туртса илеççĕ.

Драмăри тĕп геройсем: Сентиер, Пинерпи, Айдар. Ыттисем е Айдар майлă, е ăна хирĕç Сентиер майлă çынсем пулса тăраççĕ. Виççĕмĕш ушкăнĕ (Ахтубай, Пичура)—малтан Айдар майлă кайнă, каярах ун ултавне сиссе, ăна хирĕç каякан ушкăн.

Сентиер—чухăнсен представителĕ. Вăл нимрен те хăраса тăмасть. Айдара хирĕç вăрçă пуçласа ярать. Вăл айдарсем епле пуйнине, халăха пусмăрланине аван пĕлет. Çавăнпа та халăх хăй майлă пулассине сисет. Унăн ашшĕ те Пугачев юхăмне хутшăнса улпутсемпе патша влаçне хирĕç кĕрешнĕ. Ĕçхалăхĕшĕн пуçне хунă. Ашшĕне те Айдарах тытса панă-мĕн. Сентиер кивĕ самана йĕркисене, ирĕксĕр качча парассине хирĕç тăрать. Тĕрĕслĕхшĕн çапăçать. Çавăнпа ун майлисем йышлансах пыраççĕ. Пичура та, Ахтубай та каярах халăх енне куçаççĕ. Айдара пĕтерме пулăшаççĕ.

Пинерпине пуян Айдар качча илесссине пĕлсен, Сентиер çапла калать: „Айдара?! Таврари вăрă-хураха! Мĕн чухлĕ улăх, мĕн чухлĕ çĕр тыта-тыта илчĕ вăл хамăр таврари ялсенне, çавна эсĕ качча каясшăн?!. Айдар та пирĕн яла чăнахах килсе çĕмĕрсен, хамăн пуçăма хĕрхенмĕп! Халь çакăнта Айдар тăрас пулсассăн, эпĕ ăна хам алăмпа хам пăвса пăрахăттăм! Айдара мар, пĕтĕм таврари кичемлĕ пурăнăçа çапса салатас килет!... Ăçта-ши ирĕк?“—тет Сентиер, Пинерпипе вăрмана тарма шутлать. Анчах Ахтубай çитсе кĕрет.

Халăх Айдара хирĕç каяссине те Сентиер сисет, анчах ăна ертсе пыракан çук. Çак ертсе пыраканĕ вăл хăех пулать. Айдар унăн савнă хĕрне Пинерпие ирĕксĕр качча илме тăни Сентиере кĕрешӳ çулĕ çиле хăвăртрах тухма пулăшать. Акă мĕнле питлет вăл Айдара хĕр паракан Ахтубая: „Айдара хĕр паратăп тесе, ял-йыша хирĕç пырас терĕн-им? Юрĕ! Ахтубай çеç мар, пирĕн майлисем те тупăнĕç-ха. Халăх! Ăçта сирĕн намăс? Çак пĕр вăрă-хурахран хăратăр-и? Улăхсене тытса илет тесе, Айдарпа хурăнташлă пулас тетĕр-и? Мĕн пăхса тăрас? Ун пек çынна вĕлерсен те çылăх пулас çук, май килнĕ чух тытăр!"—тесе халăха вăратать.

Тĕшмĕшлĕхсене, юмăççене те Сентиер ĕненмест. Хăйне суккăр тăвакан тăшмана Айдара пĕтерес çилĕ ун ăшчиккинче капланать. Çавăнпа вăл: „Нухрат мар, унăн чĕри тĕлне çивĕч çĕçĕ тăрăнтармалла!"—тет. Çак сăмахсем Сентиер кĕрешӳ çулĕ çине çирĕп тăнине кăтартаççĕ. Улăхри ут капанĕсене, яла вут хыпса илсен те, Сентиер вăл усал ĕçе Айдар çыннисем тунине пĕлет. Çавăнпа вăл: „Эпĕ, халăх умне тухса, Айдара хирĕç тăма чĕнетĕп... Инкек килсе çапмасăр пирĕн халăха ăс кĕмест çав!... Айдар ĕçĕ ку. Пĕтĕм ялпа кайса Айдара пĕтерес пулать. Халăх, айтăр халех вăрмана: Айдар кулли пулас мар. Тавăрмалли вăхăт çитрĕ... Васкас! "—тесе халăха ертсе каять. Айдара вĕлерет. Вара çапла калать: „Пуçламăшне тунă, халĕ каяр малалла!"—тет.

Сентиерăн çивĕч çĕççи кама вĕлермеллине тупрĕ. Сентиер хăйне хăй чикĕнсе вилес шухăша пăрахать, тăшмана вĕлерет.

Сентиер XVIII-XIX-мĕш ĕмĕрсенчи халăх геройĕ. Сентиерсем пуянсене хирĕç кĕрешни—патша йĕркин никĕсне хускатма пуçланине кăтартать. Улай та Сентиер пекех паттăр çамрăк. Айдара хирĕç кĕрешес ĕçре вăл чи паттăрри. Вăл тăшмансемпе çапăçма чĕнет. Ахтубая та вăл çапла ĕнентерет: „Сентиер мар санăн тăшману, Ахтубай пичче, вăрă-хурах Айдар!.." тет, ăна кайса тапăнма чĕнет. Айдар çыннисем те пурте хуçи майлах мар. Таса чĕреллĕ тарçăсем Айдар пусмăрне, ирсĕр хуçине килĕштерсе пурăнма пултарайман. Çавăнпа хăшĕсем (Пичура т. ыт.) ăна хирĕç каяççĕ; хăшĕсем (çамрăк хуралçă) хуçи каланипе пурăнмаççĕ, хирĕçле ĕçсем тăваççĕ т. ыт. те. Çапла вара, Айдара хирĕç кĕрешӳре ертсе пыракан тупăнсан, халăх вăл кĕрешĕве хутшăнма хатĕр пулни паллă. Халăх чĕри Айдара хирĕç пулнă. Анчах пĕчченшерĕн ăна хирĕç тапранма хăранă, пултарайман. Çак енчен, кĕрешĕве ертсе пырас ĕçе хăйсем çине илнĕ Сентиерсем, Улайсем, Пичурасем халăхăн чăн-чăн паттăрĕсем пулса тăнă та. Вĕсем кĕрешĕве ертсе пыма пултарнă, Айдар пек пуянсене хирĕç хăюллăн кайнă.

Пинерпи—Ахтубай хĕрĕ. Вăл телейлĕ пурăнăç пуянлăхра маррине аван пĕлет. Çав тери пуян Айдара та хирĕçет: „Санпа эпĕ пур-пĕр юратса пурăнас çук",—тет. Çитменнине пуян патĕнче йытă пурăнăçĕ пулассине те сисет вăл. Укçалла илнĕ хĕре Айдар хĕрхенсе тăрас çук ĕнтĕ. Малтанхи икĕ арăмне те вăл хĕнесех вĕлернĕ-мĕн. Пинерпи ăна та аван пĕлет. Айдара ылханать.

Айдар хăйсен ял улăхне туртса илме тата яла çунтарма шутланине те пĕлет вăл.

Ахтубай—пуянсем майлă кайма пăхакан çын. Вăл, Пинерпине Айдара парса, пуян Айдарпа хурăнташлă пулма тăрăшать. Пуянсен урапи çине ларасшăн.

Ахальтен мар вăл: „Мĕн куратăп? Тĕксĕм киремет ачи ман хĕре хапсăннă...“— тесе вăрçать Сентиере. „Халĕ пĕтĕм халăх ман алăра“,—тет Ахтубай та. Айдар сăмахĕнчен тухас мар тесе, Ахтубай Айдар тăшманне, Сентиере, вĕлерме тăрать. Анчах вăл кайран Айдар тăшман иккенне пĕлсе çитет те халăха Айдара хирĕç илсе каять.

Айдар—чăваш улпучĕ. Вăл малтан чеепе тĕне кĕнĕ. Пугачев майлă çынсене Михельсон генерал аллине тытса панă. Çав шутра Сентиер ашшĕ те лекнĕ. Çавăншăн II-мĕш Екатерина патша Айдара Энĕш улăхне, вăрмансене парать. Тата грамотăпа хĕç парать. Çав майпа Айдар вара чапа тухнă, пуян пулса кайнă. Халăха хăратса пурăнма тытăннă. „Айдар ĕлĕкренпех хăватлă: уншăн пурăнăçра чару çук, пурте ăна парăмлă... Айдар вăйлă!.. Айдар хăватлă!.. Айдартан сĕм вăрман та чĕтĕресе тăрать... Айдар нихăçан та никамран ниепле канаш ыйтмасть... Кам хăять Айдара хирĕç тăма?.. Айдаршăн чару çук, унăн чапĕ нихăçан та сӳнес çук!.. Айдар нихăçан та тарса курман“...—тет Айдар хăй çинчен. Вăл иртĕхсе пурăннă. Ватă пуçĕпе çамрăк хитре хĕрсене арăм туса, йытă вырăнĕнче усрать, темиçе арăма та çитет. Халăх улăхĕсене туртса илме тăрать т. ыт. те. Анчах, „ку таранччен никамран хăраман Айдарăн“ шалчи тулать. Халăхăн тӳсĕмĕ тулса çитет. Улăхри утта тата яла çунтаракан Айдара вилĕм çитет. Ĕçхалăхĕ—пысăк вăй. Ăна Айдар пек пуянсем те, патша влаçĕ те тытса чараймасть. Акă мĕн калать Сентиер Айдар пирки: „Айдарсенчен хăраса тăмалла-и пирĕн? Ялĕ-ялĕпе хирĕç тăрсан, эпир айдарсене мар, пĕтĕм улпутсене хирĕç тăма пултаратпăр“,—тет. Халăх чăнах та пултарать. Ахальтен пулман 1905 çулхи революци. Ахальтен пулман 1917 çулхи Октябрьти революци, ирĕке хамăр алла илесси.

„Айдар“ драма чăвашсен ĕлĕкхи пурăнăçне, кĕрешĕвне, йăлисене аван кăтартса парать. Вăйă ачисен юррисем, туй юррисем, мăнкĕрӳ сăмахĕсем (фольклортан илсе драмăна кĕртнĕскерсем) т. ыт. те ĕлĕкхи пурăнăçа лайăх çутатса параççĕ. Ĕлĕкхи пурăнăç асаплăхне кăтартса, драма ăна ылханма чĕнет. Вулакан е куракан, Айдарсене ылханнипе пĕрлех, Сентиер, Пичура, Улай, Пинерпи т. ыт. паттăрсене чĕререн юратса асăнать. „Айдар“ П. Н. Осиповăн чи вăйлă пьеси.

**„Кулленхи симфони“**—5 пайлă, 7 картинăллă пьеса. Ку пьеса совет наукин çитĕнĕвĕсене тата нациллĕ кадрсем ӳснине кăтартса парать.

Автор ку пьесăра хальхи пурăнăçăн нумай ыйтăвĕсене татса парать. Пĕр енчен, Совет Союзĕнче пур специальность та, пур халăх та, арçынĕ те, хĕрарăмĕ те, ватти те, çамрăкки те çĕршывшăн пĕр пекех паха пулнине Сталинла Конституци кăтартнă пек

çутатса парать. Пур наука та, пур халăх искусстви те, музыки те Совет Союзĕнче хăйсен вырăнĕнче кирлĕ, паха пулса тăнине кăтартать автор. Акă мĕн калать Арасланов хăйсен наукăллă ĕçĕ пирки: „Пирĕн ĕçе лайăх хак параççĕ пулсан, вăл эпир пурте тачă çыхăнса ĕçленинчен килет. Пире ертсе пыракан профессор Разумовăн тарăн шухăшлă ăстăнĕ, ĕмĕр çамрăк, кирлĕ чухне хăй пурăнăçне те парнелеме хатĕр энтузиазмлă Борис Яковлевич, çемçе кăмăллă та ĕçре хастар Поляпа Дарья Клементьевна—палăрман геройсем, юлашкинчен тата çын телейĕн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем патнелле хавассăн чĕнекен Евгения Михайловнăн творчестви—**акă пирĕн кулленхи савăнăçлă симфони,**"—тет.

Анчах, çав вăхăтрах, пирĕн социализм çĕршывĕнче çав кулленхи симфони айккинче тăракан е ăна чăрмантаракан шовинистла, мещенле Гортинский профессор йышшисем те пур-ха. Гортинский, „рафинированный интеллигент" текенскер, ĕçхалăх искусствине хирĕç пырать. Великороссен шовинисчĕ. Чăваш пек халăхсене юратмасть, музыкине те „примитивлă" тет. Тата профессор хĕрĕпе явăçса, хăйĕн арăмĕпе çемьине уйăрса яни те киревсĕр ĕç. Акă мĕнле тăрăхласа калать вăл Женяна чăваш музыки пирки: „... А эсир çаплах чăвашсен мелодийĕсемпе аппаланатăр мĕн?.. Ку музыка пуринчен ытла сирĕн няньăна юрăхлă пек туйăнмасть-и?.. Хăвăрăн хаклă вăхăта тата энергине никама кирлĕ мар чухăн сас-чĕвĕрен пухнă симфони валли сая яратăр... Ĕненĕр мана, дикарьсем пурĕпĕрех ăна итлес çук, издательство шкапĕсенче кирлĕ мар сочиненисен купине ӳстерни çеç пулать".

Пьесăри тĕп герой—Арасланов. Вăл наука фронтĕнче пысăк çитĕнӳсем тăвакан çĕнĕрен ӳснĕ специалист образĕ, чăваш ученăйĕ. Ун урлă автор национальнăй кадр ӳссе пынине кăтартать. Арасланов аслă шкулта аспирантура пĕтернĕ. Вăл Мускавра Разумов профессорпа пĕрле наукăра çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешет: микробиологи тĕлĕшĕпе открытисем тăвать. Çавăнпа ăна профессор хăй патнех ассистента хăварасшăн пулнă.

Анчах, Чăваш республикине килсен те, Арасланов наука ĕçне пăрахмасть. Борис Яковлевич врачпа наукăри пысăк ыйтăва татса параççĕ. Наукăра пысăк открыти тунă Араслановпа Разумов профессор Наукăсен Академийĕн конференцинче доклад тума тивĕçлĕ пулаççĕ. Арасланов пек паттăр ученăйсем кашни халăхранах йышланса пыраççĕ. Пирĕн чăвашсенчен те наука фронтĕнче ĕçлекенсем сахал мар (проф. Владимиров, Шăхасан районĕнчен т. ыт.).

Арасланов—ĕçхалăх хушшинчен тухнă çамрăк ученăй. Вăл ĕçхалăхĕпе унăн çитĕнĕвĕсене юрататъ, хисеплет. Чăваш музыкипе те интересленет, вĕсене пухать.

Поля, Дарья Клементьевна, ĕçхалăхĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекенскерсем, хăйсен ĕçне хисепленĕшĕн вĕсем хĕпĕртеççĕ. Акă мĕн калать Поля: „Эпĕ калама пĕлместĕп... Кунта эпĕ ялтан килнĕ. Ман халăха мĕнпе те пулсан пулăшас килетчĕ. Кунта мана ĕçлеме вĕрентрĕç. Халь эпĕ ăнлантăм: иртнĕ сама-

нара хĕсĕкре, тĕттĕмре пуранннисем те пысăк ученăйсемпе танах ĕçлеме пултараççĕ иккен... Çавăнпа пирĕн куранманĕç те çынсен телейлĕхĕшĕн пултăрччĕ!"—тесе хавасланать.

Женя (Евгения Михайловна)—Разумов профессорăн хĕрĕ. Музыка консерваторинчен вĕренсе тухать. Дипломлă ĕç валли сочинени (прелюди) çырать. Анчах вăл, Арасланов калашле, „ăнсăртран пухăннă сасă çех. Мелодийĕ çук. Тĕтреллĕ шухăшлă, ăшран ирĕксĕр пăчăртаса кăларнă япала" çех. Ĕçхалăхĕшĕн ăнланмалла япала мар. Çавна Женя каярах ăнланать. Хăйĕн темине улăштарать. Арасланов сĕннĕ тăрăх вăл чăваш мелодисене вĕренсе, сăнаса, вĕсем тăрăх диплом ĕçĕ çырать. Çапла вара, Женя каярах халăх мелодине те хаклама пуçлать: „Çапла... Пирĕн классиксем вĕсемпе нумай усă курнă",—тет. Гортинские те хирĕç тавăрма пуçлать. Акă вĕсем тавлашнине илсе пăхар:

Гортинский. Ĕмĕртенпе пухнă творчество опычĕсене эсир атавизмлă элементсемпе хутăштарасшăн, чăвашсен нимӗнле сассем темелле мар мелодийĕсемпе музыка ятне вараласшăн... Укта эсир, интернационаллă музыка витĕмĕпе пĕркенсе, примитивлă элементсем кĕртесшĕн.

Женя. Намăс мар-и сире, консерватори профессорне, кун пек сăмахсене калама? Чайковский, Римский-Корсаков халăх юррисемпе усă курман-и мĕн?.. Пурĕпĕрех эпĕ хамăн сочиненинчен кулма памастăп. Ан чарăр мана ĕçлеме.

Чăнах та, консерваторире Женя сочиненине „отлично" паллăпа хакланă. Вăл—халăх музыкĕ, халăхшăн ăнланмалла. Çавăнпа ăна выляна чух, профессор та, няня та хумханмасăр итлеме пултарайман. Няньăна вăл музыка йĕртнĕ. Акă мĕн калать унăн сочиненийĕ пирки няня:

Няня. Ик ывăлне те çак юрăпа пытартăм. Нумай вăхăт иртрĕ унтанпа... Патша вăхăтĕнче больницăра няньăра ĕçлеттĕм. Ял тулашĕнче, аслă çул хĕрринче ларатчĕ пирĕн больница... Ун умĕнчен чăваш салтак ачисем кунĕн-çĕрĕн ирте-ирте каятчĕç... Макăра-макăра, çак юрра юрлатчĕç... Манăн та çак юрăпах карĕç... Карĕç те таврăнмарĕç...

Профессор. Мĕн эсĕ, нянюшка, йĕрсе те ятăн-и? Сăмахсăрах ăнлантăн-им апла?

Няня. Ăнлантăм, тăванăм, ăнлантăм...

Е тата Женя сочиненине ашшĕ хакланине илер:

Профессор. Санăн сочиненин пĕр вырăн пур — „Адажио", салтак юрри темипе çырнăскер...

Женя (рояльпе выляса кăтартать). Çак вырăн-и?

Профессор. Вара, вара... Мана хама ку мелоди пит кăмăла килет... Кăштах астунă пек те туйăнать... Анчах, Женя, пĕрисем ăна тинкерсех итлĕç, теприсем: ытла та кичемлĕ мелоди, хăçан вĕçĕ пулать-ши, теме те пултараççĕ... Тата урăх тĕрлисем—хăйсенчен ытларах пĕлекеннисем: „Яланхи хĕвелтухăç мелодийĕ",—тесе çеç калĕç... Анчах çав хушăрах куççулленсе итлекеннисем те тупăнĕç: ку мелодипе пĕрле вĕсем ĕлĕкхи йывăр саманана аса илсе, кашни эсĕ çырнă нотăна чунтан итлĕç.

Çапла Женя та музыка фронтĕнче пысăк çитĕнӳсем тăвать.

Профессор Разумов — ватă ученăй. Вăл совет наукине вăйлатассишĕн тăрăшать. Вăл кулленех наукăри çĕнĕ проблемăсене пурăнăçлассишĕн кĕрешет. Çынсене те пултарулăхне кура хаклать. Сăмахран, Арасланов ятлă чăваш аспирантне хăй патне ассистента хăварма йышăнни тата ытти те. Арасланов чирлесен, ăна чĕртме Шупашкара вĕçсе килет. Хăйпе пĕрле Академинче доклад тума ăна та чĕнет.

Борис Яковлевич врач та больницăра тăрăшса ĕçлет. Ватă пулин те, çивчĕ, яланах савăнăçлă çын, вăл 2 №-лĕ вируса сăнасси енĕпе хăй вилессинчен хăрамасăрах, хăй çинче опыт тутарать. Наукăшăн, ĕçхалăхĕшĕн хăй пурăнăçне пама хатĕр. Акă мĕн калать вăл опыт тăвасси пирки. „Шатраллă тифа çĕнтеретпĕрех! Ун çинчен пĕтĕм тĕнче пĕлĕ акă. Паян эпĕ хама тиф ертетĕп,—чирлеместĕп пулĕ, тетĕп-ха!..“ Арасланов прививка тунă свинкăсем вуннăшĕ те сывă иккенне пĕлтерет. Çавăнпа хăрамасăрах вăл тиф вирусне хăйне ертме аса илтерет. „Эсĕ шухăшна улăштарнă пулсан, хам çинче опыт тăвас тетĕп эпĕ“,—тет Арасланов. Борис Яковлевич ăна хирĕçет: „Çук, çук! Сана юрамасть. Сăнаканĕ кам пулать вара? Эпĕ сăмах пани—хурçăпа пĕрех: хамăн шухăша эпĕ нихăçан та улăштармастăп, мĕншĕн тесессĕн, таркăн салтака Сократ: „хăравçă“,—тенĕ; эпĕ хăравçă мар“,—тет. Хăйĕн калаçăвĕнче вăл ялан шӳтсемпе, Кузьма Прутков афоризмĕсемпе усă курать.

Пьеса совет ученăйĕсем хăйсен ĕçĕсене юратса тунине аван кăтартать. Çав вăхăтрах наука фронтĕнчи киревсĕр ученăйсем епле сăтăр тума пăхнине те лайăх уçса парать.

# КУЗЬМА ПАЙРАШ.

(1906 ç.)

Кузьма Ильич Пайраш 1906 çулта, Ишлей районĕнчи Вускасси ялĕнче çуралнă. 1925—1927 çулсенче Шупашкарти Совпартшколăра вĕреннĕ. 1927—1929 çулсенче редакцинче сотрудник пулса ĕçленĕ. 1929 çулта Пайраш Мускаври мединститута вĕренме кĕрет. Унтан вĕренсе тухнă хыççăн икĕ çул хушши, 1933—1935 çулсенче, Мăн Сĕнтĕрти больницăра врач пулса ĕçлет. 1935 çултанпа Шупашкарти больницăра хирурги уйрăмĕнче врач-хирург пулса ĕçлет.

Пайраш 1927 çулта çырма пуçланă. Малтанхи тапхăрта вăл сăвăсем, фельетонсем çырнă. 1928 çулта унăн „Телейсĕр кунсем" ятлă пьеси уйрăм кĕнекен пичетленсе тухать. 1934 çулта „Лайăх эмель" ятлă калавсен кĕнеки тухать. Кунсăр пуçне унăн калавĕсем журналсенче йышлăн пичетленме пуçлаççĕ: „Прорыв" („Сунтал" № 3—4, 1931 ç.), „Йывăр килсен" („Трактор" альманах, № 2, 1932 ç.), „Валя мĕн калĕ" („Сунтал" № 3—4, 1932 ç.), „Комсомол билечĕ" („Сунтал" № 12, 1927 ç., № 1, 1938 ç.), „Лида йăнăшĕ" („Сунтал" № 7, 1938 ç.), „Сестра" („Сунтал" № 8, 1938 ç.), „Шофер" („Сунтал" № 6, 1940 ç.), „Тĕрĕс тăватăп-ши эпĕ?" („Сунтал" № 3, 1941 ç.), „Отпускра" („Сунтал" № 4, 1941ç). Кунсăр пуçне Пайраш вырăсларан чăвашла та куçарать. Медицина енĕпе статьясем çырать.

К. Пайраш—писатель-врач. Çавăнпа унăн калавĕсем те нумайăшĕ медицина ыйтăвĕсене, медицина енĕпе ĕçлекенсен сăнĕсене кăтартса параççĕ. Вĕсене автор пурăнăçри ытти ыйтусемпе çыхăнтарса çырать.

Пайраш пуринчен ытла çамрăксем çинчен çырать. Ăна чăваш çамрăк интеллигенцийĕ: врач, студент, учительница, агроном т. ыт. интереслентерет. Тĕрлĕ специалистсен пурăнăçне кăтартакан произведенисем пирĕн сахал. Пайраш ку енчен оригиналлă писатель пулса тăрать. Çавăнпа вăл вулакансемшĕн те интереслĕ. Чĕлхе енчен те Пайраш калавсене илемлĕ, культурăллă, вулас килмелле çырать. Пайрашăн геройĕсем—чăн-чăн совет çыннисем, социализмла патриотсем (Нина Михайловна Розова, Строилов, Никит Сергеевич Хромов, Вера Комарова, Валя, Петров, врач типĕсем т. ыт. те).

Малалла Пайрашăн уйрăм калавĕсемпе паллашар.

„Валя мӗн калӗ?“ калавӑн содержанийӗ ҫапла. Валя, районри хӗрарӑм пай пуҫлӑхӗ, ҫураки кампанийӗ вӑхӑтӗнче яла каять. Кулакла этемсем ӑна чӑрмантарса пыраҫҫӗ, юрӑхсӑр бригадирсем суйлаҫҫӗ. Ҫапах та вӑл вӑрлӑх пухса алаттарас ӗҫе тӑвать. Кулаксем пытарнӑ тырӑсене тупса кӑларттарать. Пӗр пухура вӑл, хӑйпе пӗрле совпартшколӑра вӗреннӗ, халӗ Мускавра тухтӑра тухма вӗренекен Геннадий ятлӑ студента тӗл пулать. Валя Геннадие вӑрлӑх пухас ӗҫе хутшӑнма ыйтать. Анчах Геннадий, ялта виҫӗ ҫул пулманскер, ял пурӑнӑҫне пӗлмест. Кулаксемпе те юлташла калаҫать. Вӑрлӑх пухас ӗҫе пурӑнӑҫлаймасть. Валя умне тӑма намӑс пирки, вӑл ӑна курмасӑрах Мускава тухса каять: „Анчах мӗн калӗ Валя? Мӗнле тӑрас ун умне? Ҫук, эпӗ ун умне урӑх курӑнмастӑп. Эп вӑйсӑр, вӑйлӑ ҫын умне тӑма эпӗ вӑтанатӑп“,—тет. Валя патне вара ҫапла ҫырать: „Эпӗ пурӑнӑҫран кая юлнӑ,ҫавӑнпа эс каланине пурӑнӑҫа кӗртеймерӗм...“

Валя ун хыҫҫӑн вара: мӗнле вӑл ытти студентсем пек мар, тет. Йытӑран хӑраса кулаксем патне кӗменнинчен т. ыт. те тӗлӗнет. „Ҫынна пурӑнӑҫ вӗрентет. Пурӑнӑҫ вӑл—пысӑк вӗренӳ“, тет. Халиччен аслӑ шкула вӗренме кайманнишӗн кулянма та пӑрахать Валя. Килте вӗренмелли (заочнӑй) комвуза кӗме заявлени ҫырать.

Геннадийӗ кулаксен чеелӗхне те сисеймест. Вӗсене ытти ҫынсенчен уйӑрса илме пӗлмест.

Вӑл ҫӗрме пуян Михалкка патне вӑрлӑх валли тырӑ илме кӗме унӑн хаяр йыттисенчен хӑраса тӑрать. Уполномоченнӑй кӗме тӑрсан, Геннадий ӑна чарать. „Асту, осторожно... ҫыртать... Ӗмӗрлӗхе, досконально, суранлама пултарать! Урнӑ йыт пулсан вара... бешенство вӑл, с медицинской точки зрения,—шутка япала мар. Унӑн микробӗсене те наука халиччен пӗлмест те...“—тесе супӗлтетет.

Унтан Геннадий 10 ҫул арман тытнӑ Спиридон патне кӗме шут тытать. Кулак, районрисем килессине пӗлсе, улма ҫеҫ пӗҫерет. Геннадий ун пек ултава сисме пултараймасть ӗнтӗ!

„Мучи, санӑн пӗр амбара тырӑ хумалла“!—тет. Лешӗ, хамӑр та выҫӑ ларатпӑр, паранкӑ ҫеҫ... тесе суйнине ӗненет. Ачисем ҫара паранкӑ ҫинине пӑхса, Геннадий (пулас врач вӗт!) шухӑша каять: „Паранкӑ... Кун ачисем типӗ паранкӑ ҫисе лараҫҫӗ. Ҫавӑнпах пулас, кӗҫӗнни веҫ шуралса кайнӑ. Гемоглобин... с точки зрения медицины, 50% пур-ши унӑн? Эритроцит ҫителӗклӗ мар ӗнтӗ вӗсен... ну да! Медицина вак ачасене тип паранкӑпа усрама хушмасть. Паранкӑн мӗн калорийӗ пултӑр унӑн. Тата юлашки тырринех (юлашки-ши? 100 пӑт пытарнӑ!) амбара хывтарма хушас пулать. С точки зрения медицины пӑхсан, тата мана, тухтӑра вӗренекене, ӑна тума аван та мар. „Чӑнахах та ҫук-и вара санӑн, мучи?.. Юрӗ, мучи...“—тесе тухса каять.

Унтан тимӗр ҫивиттиллӗ пӳрте, чаплӑ ҫуртлӑ ҫын патне кӗрет Геннадий. „Ку ҫыннӑн тырӑ пурах пуль, пӗр сӑмахсӑрах пӗр амбара хума килӗшет ӗнтӗ вӑл“,—шухӑшлать Геннадий кӗнӗ чух.

Хуçи çăпата туса ларать-мĕн. Вăл Геннадие те, ашшĕне те паллать: „Леш касри Микулайăн мар-и эсĕ?“—тет. Вара вĕсен çапла калаçу, çапла сцена пулса иртет.

—Э-э...эс Мускавра вĕренекенни пулатăн пулĕ-çке апла...

—Çапла, пичче! Çавăн ывăлĕ пулатăп, пичче!

—Юрать-ха, юрать. Пурин те пирĕн пек ухмах пулмалла мар. Хамăр патăрти çынсем вĕренни кирлех-ха вăл. Аçуна та пĕлеттĕп сирĕнне... Ĕлĕкренпех лайăх пурăнатпăр аçупа!

—Аттепе лайăх пурăнакан çынна мĕнле обижать тăван,—шутласа илчĕ Геннадий,—тьфу, ку ĕçпе... Вăрлăх пухиччен темиçе труп (виле) касам лучше! Труп каснă чух шăршă вăхăтлăха кĕрет, кунта... кунта ĕмĕрлĕхе ят илтен. Юрать-ха тата йытти çыртмарĕ... Анчах, мĕн калĕ Валя?—тет. Унран хăрать, ун умне тăма вăтанать.

Çапла, Геннадий питĕ çемçе студент. Хăйĕн специальность хупăлчăкĕнчен пурăнăçа тухма пултараймасть. Политикăна, класс кĕрешĕвне, пурăнăçа пĕлмест. Пирĕн специалистсен кирек-мĕнле ĕçре пулсан та, политикăна, хальхи пурăнăçа лайăх пĕлмелле. Акă мĕн каланă Сталин юлташ партин XVIII-мĕш съездĕнче çавăн пек специалистсем çинчен:... „чем ниже политический уровень и марксистско-ленинская сознательность работников, тем вероятнее срывы и провалы в работе...“ Геннадий медицинăсăр пуçне урăх ним те пĕлмест. Пурăнăç çине те „с точки зрения медицины“ текелесе пăхать. Класс тăшманĕсене те курма пултараймасть. Вĕсемпе „пичче“, „мучи“, тесе калаçкалать те, хăй тумалли ĕçне те тăваймасть.

Геннадий сăнĕ урлă Пайраш пурăнăçран, политикăран айккинче тăрса юлнă уйрăм студент сăнне кăтартса парать. Ун пек типсене питлесе çырать.

Валя кĕрешӳре пиçĕхнĕ активлă хĕрарăм. Вăл, Вера пекех, хастар ĕçлет. Геннадий кĕме хăранă пуян Михалкка патĕнчен Валя 100 пăт таран пытарнă тырă тупса тухать т. ыт. те. Кулаксем чейине Валя аван пĕлет. Вăл Геннадий пек ял пурăнăçне пĕлмен студентсене вăрçать. Хăйĕн пĕлĕвне те вăл ӳстерме тăрăшать. Заочнăй аслă шкула вĕренме кĕрет.

**„Комсомол билечĕ“** калавра Пайраш комсомолецсен сăнне кăтартса парать. Калавра автор нумай ыйту хускатать: колхоз, комсомол, шкул, тăшмансем, юрату, аборт ыйтăвĕ т. ыт. те.

Анчах тĕп ыйту кунта та политикăллă пĕлӳлĕхе, класс сисĕмлĕхне вăйлатассипе юрату, комсомолецсен юратăвĕ. Комсомолец е комсомолка юрату ыйтăвне пурăнăçран уйăрма пултараймасть. Класс тăшманĕ е тăшмана сутăннă çын комсомолкăшăн мăшăр пулма тивĕççĕр. Мăшăр пулма пĕр шухăшлă çынсем кирлĕ. Çавăнпа ĕнтĕ Ира класс тăшманĕпе Лявукпа çыхăнса колхоз укçине салатнă Шишкина тарăхать: „Е комсомол, е сисĕмлĕхе çухатса класс тăшманне пулăшакан упăшка?“—тет Ира. Комсомол билетне пăхса шухăша каять: „Йăнăшмастăп-ши эпĕ? Çак билет пурри çинчен манма пуçламан-ши? Çук, уйăрмастăп эпĕ

комсомол билетне хам çумран, ĕмĕрте те!"—тесе, Шишкинпа пĕрлешес шухăша пăрахать.

Аборт туни хĕрарăмсемшĕн сиенлĕ пулни çинчен, вăл вĕлерме, чире яма пултарни çинчен, пулас талантсене пĕтерни çинчен аван кăтартнă калавра. Климент Логинович тухтăр та çавăнпа Ирăна аборт тума хушмасть, унăн сиенĕ, хăрушлăхĕ çинчен ăнлантарать.

Калаври тĕп положительнăй герой—Ираида Степановна Серенчикова. Анчах вăл комсомол билечĕ çине фетишизмла пăхать. Айăплă-айăпсăр Шишкина тăшман вырăнне хурса, ăна тыттарса ярать.

Ира пĕчĕклех тăлăха юлнă-мĕн. Ача çуртĕнче ӳснĕ. Комсомол вĕрентнĕ ăна. Ачасене юратса вĕрентет. Шкулта пысăк çитĕнӳсем тăвать. Юлашкинчен Ира партие кĕрет.

Шишкин та, Ира пекех, комсомолец, вăл колхоз председателĕ, колхоза вăйлатассишĕн çине тăрса ĕçлет. Вăл ялхуçалăх институтĕнче те пĕр çул вĕреннĕ. Анчах Шишкина класс сисĕмлĕхĕ çителĕксĕрри пĕтерет. Вăл класс тăшманне час кураймасть. Шишкин общество ĕçĕшĕн тăрăшакан активлă çын. Анчах политика енчен пиçсех çитеймен. Лявук пек чее тăшмансен вăрттăн ĕçĕсене час сисеймест. Вĕсен танатине лекет.

**„Лида йăнăшĕ"** калав, шалти тăшмансем вăрттăн ĕçленине кăтартса, вĕсене тытма тата сисĕмлĕ пулма вĕрентет. Анчах „сурăх тирне пĕркеннĕ кашкăрсене" уйăрса илме пĕлейменнипе, Лида пек работниксем хăйсем вĕсен аллине лекеççĕ, пысăк сиен туса хураççĕ. Лидăн класс сисĕмлĕхĕ çителĕксĕр пулнине куратпăр. Лида, паллах, совет специалисчĕ. Тăрăшса ĕçлет. Изобретенисем тăвать. Вăл ĕçхалăх хушшинчен тухнăскер. Совет влаçĕ ăна аслă шкулта вĕрентнĕ. Лида йăнăшĕ Лидăшăн та, ыттисемшĕн те урок пулса тăрать. Вăл факт пур работниксене те, вулакансене те сисĕмлĕ пулма чĕнет. Халиччен пĕлмен çынпа тӳрех çывăх пулма юраманнине, ăна сăнама кирлине, тăшмансене тытма пĕлмеллине кăтартать.

Сосин—„сурăх тирне пĕркеннĕ кашкăр", шпион. Хăйĕн шпионла ĕçне вăл питĕ чеен туса пырать. Сăмахсем калама ăста. Орденпа, парти билечĕпе витĕнсе, хушаматне улăштарса, вăл хăй валли шанчăклă йăва тупнă. Хăйне вăл çирĕп работник пек кăтартма тăрăшать. Пухусенче те, Лидăпа та ялан тăшмансене курайман пек калаçать. Хаçатсем çине те тăшмансене ылханса статьясем çырам пек тăвать. Вăрттăн çĕрте шпионла ĕçсем туса тăрать.

Вăл шпионне сăмахĕсем тăрăх сисме йывăр. Акă мĕнле „хĕрӳллĕ" калаçать вăл: „Кулянма пăрахăр ĕнтĕ, Лидия Ивановна, асап курнă, иртнĕ. Зато халĕ... халĕ ирĕклĕ пурăнăçра пурăнатпăр, юн тăкман пулсан, çакăн пек канасси те пулман пулĕччĕ... Революци юн тăкмасăр пулмасть. Çапах... Халь телейлĕ ĕнтĕ... Сталин юлташ калашле, юн тăкни сая каймарĕ",—тет. Шпионсем пирки те Сосин чеен калаçать: „Шпионсем вĕсем чи хаяр тăшмансем... пирĕн задача... вĕсене вăхăтра сиссе, сă-

тăрла ĕçсем тăвиччен çапса хуçасси пулса тăрать. Яланах тимлĕ пулас пулать..."—тесе шăлăнтарать.

Автор Сосин сăнне (образне) аван кăтартнă, ун сăнĕ урлă вулакан шпионсем мĕнле чее ĕçленине те аван туйса илет, сисĕмлĕ пулма вĕренет. Çав вăхăтрах калав Сосин пек тăшмансене Никита Сергеевич Хромов пек тупма, вĕсене хирĕç ним хĕрхенмесĕр кĕрешме, пĕтерме пулăшать. Çак енчен калавăн усси пысăк.

**„Сестра"** („Сунтал" № 8, 1938 ç.). Ку калавра автор социализмла патриотсене, çĕршыв интересĕшĕн хăйсен пĕтĕм вăй-халне пама хатĕр çынсен сăнĕсене кăтартса парать.

Калавра Строилов инженерпа Нина Розова сестра—положительнăй типсем. Вĕсем чăн-чăн совет работникĕсем, совет çĕршывĕн патриочĕсем.

Нина Михайловна Розова образĕ урлă автор совет çĕршывĕнче сестрасем те паллă вырăн йышăнса тăнине, пур професси те хаклине кăтартса парать. Автор çĕршыв умĕнче арçын та, хĕрарăм та, инженер, учитель, врач, сестра, тракторист, колхозник т. ыт.—пурте пĕр пекех паха пулнине кăтартса парать. Автор сестра пирки тĕрĕс çырать: „Халăх çинче сестра пĕчĕк çын шутланать. Культурăллă çынсем хушшинче вăл паллах мар. Инженер, тухтăр, агроном, преподаватель... ак камсен виçипе виçме вĕреннĕ эпир ку чухне уйрăм çынсен культурăлăхне. Анчах, ĕненĕр, çын ăнăçлă сывалса тухассинче сестра тӳпи пĕртте пĕчĕк мар..." Инженер Строилов та ăна мухтаса çапла калать: „...вилнĕ пек çынна чĕртрĕр, пилĕк пин çынна вилĕмрен хăтартăр, государствăн темиçе миллионлăх пурлăхне çăлса хăвартăр. Эсир хăвăр вырăнта пысăк мухтава тивĕç инженер..." тет. Чăнах та, сестра хăйĕн ĕçне пĕлсе, юратса ĕçлет. Ăна премии те темиçе хут панă. Сĕнӳ кĕнекинче те ăна мухтаса сахал мар çырнă. Çавăнпа та, лайăх ĕçлекен сестра Строиловшăн та хаклăн туйăннă.

Нина Михайловна вулакансемшĕн те хаклă, паха çын. Вăл чăн-чăн совет героини, патриот, вăл вулакансене те хăй пек лайăх ĕçлеме, патриот пулма чĕнет.

Сергей Сергеевич Строилов та совет геройĕ, тăван çĕршывăн патриочĕ. Вăл заводри хăрушлăх çинчен каласа парать, хăй аманнине пăхмасăрах завода çăласшăн çунать. Шпионсене часрах тыттарассишĕн чунтан ăшаланать. Выртнă çĕрте те лăпкă выртаймасть. Сасăсем илтсенех, завод сирпĕнчĕ пулĕ тесе: ох! ох! пĕтрĕç! пĕтрĕ-ĕ-ĕç!..—тесе ахлатать. Моторкăпа НКВД сотрудникĕсем кайнине курсан та, вĕсене часрах çитерессшĕн, больница кантăкĕнчен пăхса кăшкăрса ларать. Сестра: „Мĕн тăватăр эсир?"—тесен, „Пулăшас тетĕп. Хăвăртрах çитчĕр!"—тет. Кунта совет инженерĕ социализмшăн чĕререн тăрăшнине куратпăр.

Çын çине те вăл çын пек пăхать. Çын ĕçне хаклама пĕлет. Çынсене чĕртекен сестрана вăл чĕререн тавтăвать. Акă мĕн шутласа выртать вăл больницăра чĕрĕле пуçласан: „Мĕнле тав тăвас сестрана? Кинона чĕнес, подарок илсе парас,—çителĕклĕ мар пек туйăнать. Вĕт Нина Михайловна мана хăйĕн таса юнне

панӑ... Подарок сахал, тем тесен те. Юратас килет сестрана, вӗҫӗмсӗр юратас килет..."

Чӑнах та, кам чарать-ха пӗр-пӗрне килӗштернӗ икӗ ҫамрӑк патриота мӑшӑрланма?

Ку калав пит те аван вӗҫленнӗ, калава вуласа тухнӑ хыҫҫӑн вулакансен кӑмӑлӗ те геройсемпе пӗрлех савӑнать.

Калавӑн ҫитменлӗхӗ ҫакӑ: тӑшмансене автор айванрах сынсем пек кӑтартнӑ. Паллах, тӑшмансем заводран таҫта ҫити провод карса ҫынсем сисмелле ӗҫлес ҫук, вӗсем ӑна урӑх майсемпе тума пултарнӑ т. ыт. те.

Пайраш калавсене лайӑхрах ҫырма пуҫлани курӑнать. Унӑн калавӗсем пирӗн тапхӑрти ҫӗнӗ ҫынсен сӑнӗсене тарӑн, тӗрӗс кӑтартаҫҫӗ.

Пайраш калавӗсене вулас килет. Вӗсем хӑйсен ӑрасналӑхӗпе интереслентереҫҫӗ. Геройсен шалти кӑмӑлне, шухӑш-сисӗмне (внутренние переживания) Пайраш лайӑх кӑтартма пӗлет.

Акӑ хӑшпӗр тӗслӗхсене илсе пӑхар. „Ямшӑк, лашана каялла ҫавӑр-ха? Япала манса хӑварнӑ... Пур-пӗр Сильва хирӗҫ тухса илес ҫук. Сивӗннӗ фельдшерица алӑк та уҫса кӗртмӗ. Тен, хуйхӑ пушшех пусса илӗ. Мускава ҫитсен, юлташсем хушшинче лучше, тен, час манӑн. Мӗнех пултӑр, тепӗр тесен, пӗр калаҫу туса ирттернипе? Чун туртман ҫӗре мӗншӗн каялла таврӑнас-ха?

— Ямшӑк, лашуна тӑрат, каялла ҫавӑр. Япала айрах пулнӑ, манса хӑварман иккен". („Йывӑр килсен").

Е тата юрату пирки ҫамрӑксен пуҫӗнчи вӑрттӑн шухӑшсене епле ҫырса панине илер: „Чӑн, хӗрарӑм арҫынпа пур ҫӗрте те тан, анчах мӗншӗн вӑл юратура тан мар, юратнине малтан мӗншӗн арҫын систермелле, мӗншӗн хӗрарӑма тивӗҫ мар ун пек хӑюлӑх! Юрӗ, малтан тӑвам-ха ӗҫне, мухтавлӑ пурӑнӑҫлам. Кӑтартам арҫынран кая мар, мала иртнине! Вара намӑс мар, хамах систерем юратнине!" („Комсомол билечӗ").

Ку ыйту унӑн „Сестра" калавӗнче те тӗл пулать... Тӗслӗх: „Нина Михайловна, хӑй черечӗпе, ӑшра пӗркуннех хирӗҫ пулман. Ҫав тери тӳрӗ инженера (сӑнӗ те начар мар унӑн) больницӑра выртнӑ чухнех кӑмӑл туртнӑ унӑн. Анчах мӗн тӑвас тетӗн? Чӗрери вӑрттӑн юратӑва ҫиеле кӑларас черет хальхи вӑхӑтра арҫынсенче пулнишӗн вӑл айӑплӑ мар".

Кунсӑр пуҫне Комаров, Вера, Валя, Геннадий, Шишкин т. ыт. геройсен шалти шухӑшӗсене те автор лайӑх кӑтартса панӑ. Пурне те кунта пӑхса тухма май ҫук. Ҫапах та Шишкин шухӑшне илсе пӑхар. Акӑ мӗнле шухӑшлать вӑл хӑйне хӑтарнӑ хыҫҫӑн: „Акӑ ҫитӗн яла. Мӗнле утса пырӑн урам хушшипе? Сана никам та Хӗрлӗ Ҫартан таврӑннӑ пек ӑш кӑмӑлпа кӗтсе илекен пулмӗ, тӗрмерен килчӗ тесе тахшин те сиввӗн, шанмасӑр пӑхма тӑрӑшӗ,"—тет. Хӑйсен ялӗсем Иванкка тӗл пулса, киле пӗрле утма чӗнсен, вӑл ӑна ҫапла калать, хӑй шухӑшне пытарать: „Эсӗ каях, Иван пичче! Ман юлташсем килсе ҫитеймерӗҫ, тепӗр пӑртак кӗтсе пӑхам эпӗ",—тет.

Пайраш писатель, хăй врач пулнипе, вулакансене медицинă, гигиена енчен те усăллă япаласемпе паллаштарать. „Ӳт сывлакан çулсене питĕрсе лартать пудра, çавна хăех пĕлет учительница: пудра сĕрекенсен пичĕ нихăçан та чĕрĕ тĕслĕ курăнмасть“ („Комсомол билечĕ“).

Е тата: „Эсĕ, Сильвочка, ывăнса çитнĕ пулмалла. Хăракана ерни вăл темскер пуртан мар, миме ывăнса çитсен пулать“. („Йывăр килсен“).

Халăх хушшинчи калаçусемпе те автор час-часах усă курать. Вĕсем вырнаçуллă тухаççĕ. Тĕслĕх: „Чăхсем çывăрса тăчĕç. Чăхсем тăрсан, çывăрма выртман çын юлмасть, тетчĕ пирĕн атте. Каяр пуль, Миша“. („Йывăр килсен“). Е тата: „Пырать-ха ку,— шутларĕ Лявук хăй ăшĕнче распискине илсен,—ку тăм шăхличă курать ĕнтĕ пĕрре Хусан...“ („Комсомол билечĕ“).

Калавсенче ăнсăртран пулакан ĕçсем нумайăн сисĕнет: хутсем, билетсем тухса ӳкме юратаççĕ. Тĕслĕх, Михаля Сильва çыруне кăларса ӳкерет: „Михаля кĕсъинчен пирус кăларса чĕртсе ячĕ. Пирус коробкипе пĕрле Сильва çырăвĕ те тухса ӳкрĕ“. „Ира тумланма тытăнчĕ... Карт туртрĕ пиншака çаннинчен, умри кĕсъерен пĕчĕк билет тухса ӳкрĕ“. Шишкинăн та удостоверенийĕ Ира патне ӳксе юлнă. Илер тата кинора ăнсăртран Лидăпа Сосинăн билетсем пĕрле лармалла пулнине, „Чапаев“ вуланине, çумăр çунă пирки Сосин Лида патнех юлни т. ыт. те. Вĕсене ĕненме йывăртарах.

Тата авторăн çакăн пек çитменлĕх пур. Вăл хăшпĕр „ытти студентсем пек мар“ уйрăм студентсен киревсĕр йăлисем, юрăхсăр шухăшĕсем пуррине кăтартса парса, хăйĕн калавĕсенче ун пек типсене тивĕçлипе питлет. Анчах, çавăн çинчен тĕрĕссине çырнă хушăрах, вăл „ытти студентсене“, пĕтĕм Совет студенчĕсен массисене манса хăварать. Лайăх ĕçлекен, общество ĕçне те питĕ активлă хутшăнакан студентсен сăнне çутатса памасть. Хăйĕн пĕр калавĕнче вăл Петрова чăн-чăн совет студенчĕ, тет ĕнтĕ, анчах ку студент положительнăй тип иккенне ик-виç сăмахпа асăнса иртсе каять çеç.

## ЛЕОНИД АГАКОВ.

(1910 ç.)

Леонид Яковлевич Агаков 1910-мĕш çулта, Етĕрне районĕнчи Çуткасси ялĕнче, учитель çемьинче çуралнă. 1928 çулта вăл Етĕрнери педтехникумра вĕреннĕ. 1928-мĕш çултан пуçласа Шупашкарта хаçатсенче тата „Хатĕр пул" журнал редакцинче ĕçленĕ. 1931—35 çулсенче Мускавра аслă шкулта, Театр искусствисен Луначарский ячĕпе тăракан институчĕн драматурги факультетĕнче, вĕреннĕ. Аслă шкултан вĕренсе тухнă хыççăн вăл Шупашкарта театрпа музыка техникумĕнче вĕрентнĕ.

1938 çулта Л. Я. Агаков Хĕрлĕ Çара кайнă. Халĕ Шупашкарта ĕçлет.

Агаков литература ĕçне „Капкăн" журнал урлă хутшăннă. Вăл журналра унăн малтанхи кулăшла калавĕсем пичетленсе пынă. Каярах „Сунталра" калавсем пичетлеме пуçлать: „Пăшал сасси" (1929), „Стройка паттăрĕсем" (1930), „Сĕрме купăс" (1933), „Юлашки каç" (1935), „Çунатлă хĕр" (1938), „Артистка" (1939), „Пĕрре, çуркунне"... (1939), „Пулеметчик юрлать" (1940), „Разведчик Джунгали" (1940), „Танкист калавĕ" (1941).

Уйрăм кĕнекен тухнисем: „Инкесем", „Юлашки юмах", „Вĕтлĕхри отряд" (1931), „Хăват" (пьеса, 1932), „Ултав" (пьеса, 1935), „Пĕрре, çуркунне..." (1941). Вырăсларан Горький, Островский, Чехов, Вирта т. ыт. пьесисене тата прозăпа Горький, Фадеев произведенийĕсене куçарнă. Л Агаковăн пьесисем паллă вырăн йышăнса тăмаççĕ.

„Сунталра" юлашки çулсенче тухнă калавĕсенче Агаков Октябрь тивлечĕпе ирĕке тухнă чăваш хĕрачисем, чăваш çамрăкĕсем тĕрлĕ вырăнсенче ĕçлеме юрăхлă специалистсем, çĕршыва сыхлакан патриотсем пулнине кăтартса парать. Анчах Агаков героинисем çемçерех, вĕсем хастар мар. Общество ĕçĕнче паллах мар.

„**Çунатлă хĕр**" калав („Сунтал" № 12, 1938 ç.) чăваш хĕрачи пилота епле тухни çинчен каласа парать. Калаври ĕç çапла пулать. Шупашкартан Горький еннелле каякан пароход çинче автор Мускава летчиксен шкулне вĕренме каякан чăваш хĕрĕпе Наçтаçпа паллашать. Горькийрен Мускава каякан поезд çинче вара Наçтаç хăй вĕçев ĕçĕпе пĕчĕкрен интересленни çинчен, пилот епле пулни çинчен каласа парать.

Наçтаç—пултаруллă хĕр. Вăл хăй умне лартнă задачăна пурнăçа кĕртме пултарать, уншăн кĕрешет. Пĕчĕк чухне Наçтаç хăй кам пулассине лайăх пĕлмен. Учительница, врач, агроном—çаксем çÿренĕ ун пуçĕнче. Анчах аэроплансем вĕçнине курнă хыççăн Наçтаç вĕçевçĕ пулма шутлать, ăна пурнăçа кĕртет. Çапла Совет Союзĕнче çын хăй кам пулма шутланине те пурнăçа кĕртме пултарать. Чăваш-и, вырăс-и вăл, арçын-и, хĕрарăм-и—пур-пĕрех, чару çук. Çакна кăтартса парать калав Наçтаç тата Фрида сăнĕсем урлă. Вырăсла та Наçтаç аван вĕреннĕ. Вăл чăвашне „калаçнинчен пĕлме май çукчĕ",—тет автор. Тумланасса та пилотсем пек тумланнă вăл. „Кăвак берет, вĕçевçĕ гимнастерки тăхăннă". Кам танлаштарĕ ĕнтĕ ăна ĕлĕкхи таçта тĕттĕм ялта пурăннă чăваш хĕрĕпе? Автор Наçтаçа ĕлĕкхи хĕрарăмсен пурăнăçĕпе тĕрĕс танлаштарса кăтартнă: „Акă ĕнтĕ ман умра чăваш хĕрĕ, таçти инçетри пĕчĕк ялта, нумай хурапа шурă курса ÿснĕскер. Тен, унăн асламăшĕ те, амăшĕ те, Наçтаç çулĕнче чух хăйсен ялĕнчен вунă çухрăмран аякка кайман пулĕ. Хăйсен пурăнăçĕнче, паллах, ырлăх курман ĕнтĕ вĕсем... Анчах ку... Танлаштарма пулать-и ăна вĕсемпе? Çук, танлаштармастăп эп вĕсене!.. Ун умĕнче—уçă та такăр çул, çав çулпа вăл хăйĕн ĕмĕчĕсем чĕннĕ çĕрелле ним шиксĕр, тулли кăмăлпа, пĕтĕм кăкрипе çăмăллăн сывласа утать..." Çĕнĕ ĕмĕр çĕнĕ çынсем çуратать.

Совет Союзĕн Геройĕ Водопьянов Шупашкара килет. Вăл Наçтаçа вĕçевçĕ пулмалли çула уçса парать. Еçленĕ - вĕреннĕ хушăрах Шупашкарти аэроклуба вĕренме çÿреме сĕнет вăл. Шупашкартан тухса каяс умĕн, Наçтаç аллине чăмăртаса, вăл çапла калать: „Вĕренĕр вĕçме. Кам пĕлет, тен, хăçан та пулин сывлăшра тĕл пулăпăр. Сывă пулăр!"

Çак сăмахсенче эпир Совет Союзĕнчи халăхсен тăванлăхне куратпăр. Тепле ăнсăртран тĕл пулнă Водопьянов Наçтаçпа хăйĕн тăван йăмăкĕпе калаçнă пек калаçать, сывлăшра ярăнтарать, ăна ăçта вĕренмелли çинчен канаш парса хăварать.

Калава композици енчен аван тунă. Наçтаç хăй пурăнăçĕ çинчен çул çинче каласа панă пек çырнă. Пайсем пĕр-пĕринпе аван çыхăнса тăраççĕ. Автор геройсен шалти шухăш-сисĕмĕсене те аван кăтартать. Тĕслĕх, Наçтаç учительница, агроном, врач пулнă пек шутланине кăтартни т. ыт. те.

Калав чĕлхи вулама çăмăл. Калава автор тĕрлĕ приемсемпе çырать. Вулакансемпе калаçнă пек çырни те (реплика) тĕл пулать. Тĕслĕх, Чăваш республики 15 çул тултарнă ячĕпе тунă уяв Шупашкарта епле иртни çинчен каланă чух, çапла çырать: „Уяв (хисеплĕ вулаканăм, эсĕ пулнă вĕт унта) чăннипех те калама çук хăватлă иртрĕ ĕнтĕ".

**„Артистка"** калав та чăваш хĕрĕсем хăйсем юратнă ĕçе суйласа илсе, çĕршывшăн усăллă çынсем пулса тăнине кăтартать. Ку калав „Çунатлă хĕр", „Сестра", „Шурă Роза" калавсем майлăрах. Вĕсем пурте пирĕн çамрăксем тăван çĕршывăн патриочĕсем пулнине кăтартаççĕ.

Мерчен — пултарулла çамрăк артистка. Вăл — калаван тĕп геройĕ. Унăн амăшĕ те артистка пулнă, вăл граждан вăрçи вăхăтĕнче çапăçакан Хĕрлĕ Çар чаçĕпе çӳренĕ, çапăçса вилнĕ. Ашшĕ те Хĕрлĕ Çартах вилнĕ. Мерчен те Совет влаçĕшĕн кĕрешсе вилнĕ амăшĕн ĕçне чĕререн юратать, артистка пулма шутлать. Ăна нумайăшĕ урăх шкула кайма сĕннĕ-мĕн. Анчах Мерчен хăйĕн шухăшне пăрахман, артистка пулас тенĕ. „Мĕншĕн тесен, пĕр енчен, пирĕн çĕршывра çын хăть епле ĕçре ĕçлесен те — çĕршыва усă кӳрет",— тет вăл хăй пирки. Мерчен пек хăй ĕçне юратакан çынсем пирĕн çĕршывра нумай. Вĕсем хăйсен ĕçĕнче пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Кирек мĕнле ĕç те, ăна юратса туса пырсан, çĕршывшăн паха пулнине вĕсем пĕлеççĕ.

Вера Ивановна — чăн-чăн çĕнĕ учительница типĕ. Вăл, ачасене вĕрентнипе пĕрлех, хăйĕн пĕлĕвне те ӳстерме тăрăшать, Ленинградри институтра заочно вĕренет. „Çамрăк чух вĕренес килетçке",— тет вăл. Вера Ивановна культурăллă учительница. Унăн пӳлĕмĕ таса, сĕтелсем çинче Пушкин бюсчĕ, Гомер, Шекспир, Гете кĕнекисем. Çĕршывăн паллă çыннисене вăл хисеплет, хăй те вĕсем пек пулма тăрăшать. Çав вăхăтрах вăл хăйĕн сывлăхне те çирĕплетет. Кашни ирех колхозăн пĕвинче вăрманта шыва кĕрет, физкультура упражненисем тăвать.

Мерчен те, Вера Ивановна та, Вера тăванĕсем те — пурте пирĕн çĕршывăн специалисчĕсем, çамрăк патриотсем. Вĕсем тĕрлĕ ĕçре ĕçлесе çĕршыва усă кӳме тăрăшаççĕ. Вулакансене те вĕсем пек ĕçлеме чĕнеççĕ.

Калава аван çырнă. Халăх чĕлхипе, фольклор материалĕсемпе усă курнă.

1939 çулта Агаковăн **„Пĕрре, çуркунне..."** ятлă повесть пичетленсе тухрĕ. („Сунтал" № 7—12, 1939 ç.).

Ку повесть выçлăх çулĕпе ун хыççăнхи тапхăра, ялти класс кĕрешĕвне кăтартса парать. Энтриялне Уртем, Мамун, Микстур Михали йышши кулаксем тата Махорка бандит йышши тăшмансем çавăрса илнĕ. Вĕсене хирĕç Хĕрлĕ Çартан таврăннă Тарас коммунист тата Исай, Варук, Марине т. ыт. комсомолецсем вирлĕн кĕрешеççĕ. Хаяр тăшмансем вĕсене вĕлерме тăраççĕ. Анчах тăшмансене тăрă шыв çине кăлараççĕ.

Малалла автор ялта çĕнĕ вăйсем ӳссе пынине, Энтриялĕнче „Сталин" колхоз вăйлăн ĕçленине кăтартса панă.

Юлашки çулсенче Агаков оборона тематикипе калавсем çырать.

## И. С. ТУКТАШ.

(1907 ç.)

Илья Семенович Тукташ 1907 çулта, Элĕк районĕнчи Мăн Тукташ ялĕнче, чухăн хресчен çемьинче çуралнă. 1919 çулта, ялти шкултан вĕренсе тухсан, Элĕкри высшее-начальное училище ятлă шкула вĕренме кĕрет. 1924—1928 çулсенче Шупашкарти Совпартшколăра вĕренет. Совпартшколăра вĕренсе тухсан, комсомол организацинче тата редакцисенче ĕçлет („Хатĕр пул" журналра т. ыт. те). 1931—1933 çулсенче Куйбышеври геолого-разведочнăй институтра вĕренет, анчах чирлĕ пирки унăн унта вĕренме пăрахма лекет. 1934—1937 çулсенче Чăвашгизра редактор пулса ĕçлет. 1937 çултанпа Чăвашсен Наукăпа тĕпчев институтĕнче научнăй сотрудник пулса ĕçлет.

Тукташ 1928 çулта çырма пуçланă. Малтанхи тапхăрта вăл сăвăсем çырнă. Каярах прозăпа çырма пуçлать.

Сăвăсем: „Хурçă тĕнче", „Ĕç уявĕ", „Çĕнĕ улахра", „Атăл", „Çанталăк", „Ударниксен юрри", „Совет Союзĕпе Европа", „Тапхăр татăкĕ" (поэма сыпăкĕсем), „Уй-хирсен маршĕ" тата „Колхоз кĕлти" (инсценировкăсем), „Ямшăк" (сăвăллă фельетон) т. ыт. те.

Прозăпа: „Вăкăр çырми" (повесть), „Дегерес" (очерк), „Кĕрхи каç", „Артюк мучи кин кĕртет", „Шурă Роза", „Пурăнăç пуçламăшĕ" (калавсем).

Уйрăм кĕнекен тухнисем: „Октябрь çилĕ" (сăвă сб-кĕ, 1930 ç.), „Пĕрремĕш çĕнтерӳ" (очерк, 1932 ç.), „Çамрăк колхозниксем" (калавсен кĕнеки, 1933 ç.), „Чăваш фольклорĕ" (1941).

Вырăсларан Тукташ „Игорь полки çинчен хунă сăмах" (И. Ивникпа пĕрле), Джамбул, Горький, Пушкин, Шолохов, Лебедев-Кумач т. ыт. писательсен произведенийĕсене куçарнă.

И. Тукташ юлашки çулсенче вулакансене лайăх калавсем пара пуçларĕ. Унăн геройĕсем—социализм строительстви паттăрĕсем, çĕршыв патриочĕсем („Шурă Роза"). Çав вăхăтрах автор чухăнсен патша саманинчи чи йывăр пурăнăçĕпе кĕрешĕвне те кăтартса парать („Пурăнăç пуçламăшĕ).

Малтанхи çулсенче çырнă сăввисенче вăл пирĕн çĕршывăн ӳсĕмĕ çинчен хавасланса çырать. Тĕслĕх:

Шăнкăртатсах шывсем юхаççĕ.
Чупатĕ пурнăç урапи.
Кĕçех суха тума тухаççĕ,

Кĕçех пуçланĕ çуракй.
Хĕртех, хĕвел! Юрла, уй-хирĕм,
Ĕçри хаваслăхпа кĕрлех.
Çурхи кунсен чечеклĕ ирĕ
Кулса кăтарттăр сар хĕрле.
(„Тапхăр татăкĕ").

Çав вăхăтрах автор пирĕн телейлĕ çĕршыва тăшмансем юнаса тăнине те манмасть. Вĕсене хирĕç кĕрешме хатĕр пулма чĕнет:

Каллех, тен, тыттарĕç
Винтовка, ялав;
Каллех, тен, хыптарĕç
Хусканнă яла.

Эй, тухăр пĕр харăс,
Пуçтарăнăр кар-р-р,
Аманнă çăханăн
Пуçне аркатар!
(„Хурçă тĕнче").

Тукташ хăйĕн сăввисене техника енчен яка, илемлĕ тума тăрăшать. Фольклорпа та анлă усă курать. Тĕслĕх:

Эпĕ хам сан пекех пулаймарăм,
Çыр хĕрне килсе тăтăм юри.
Чĕрери кĕвĕпе вунă ярăм
Йĕркелерĕм хаваслăх юрри! („Атăл").

Унăн хăшпĕр сăввисене юрă та тунă („Шанчăклă хурал", „Йĕнерлĕ утпа эс, каччă", „Хĕллехи илем"). Вырăсларан „Песня о родине" т. ыт. куçарнă.

Рифмăсене те Тукташ аван тăвать. Тĕслĕх: ялав—яла, халĕ-хускалĕ, кăварĕ — шăварĕ, урапа — турапа, саркайăк — сархайĕ т. ыт. те.

Колхоз строительстви тапхăрĕнче Тукташ колхоз темипе сăвăсем, инсценировкăсем т. ыт. те çырать. Çав вăхăтрах вăл проза çине вăйлăн куçса пыни те палăрать. Колхоз юхăмĕ çинчен прозăпа çырма тапратать („Вăкăр çырми", „Пĕрремĕш çĕнтерÿ", „Çамрăк колхозниксем").

Каярах çырнă „Шурă Роза" калав та колхоз пурăнăçĕпе çыхăнса тăрать.

**„Шурă Роза"** калав малтан „Чăваш Коммуни" хаçатра, унтан 1938 çулхи „Сунталăн" 2 номерĕнче пичетленнĕ. Калавра Ахмет тракторист çамрăк врачпа Ленăпа паллашнине кăтартнă. Весĕм, тĕрлĕ ĕçре ĕçлеççĕ пулин те, пĕр-пĕрне килĕштереççĕ, пĕр ĕмĕтпе ĕçлеççĕ.

Ку калав хальхи тапхăрти геройсене, социализмла патриотсен образĕсене кăтартса парать. Ахмет та, Лена та çĕршывшăн чунне пама хатĕр, уншăн тăрăшаççĕ. Ахмет пек пиччĕш вырăнне çара каякан паттăрсем те пирĕн çĕршывра йышлансах пыраççĕ. Петр Котельников Валентин Котельников вырăнне каять. Лагода тăванĕсем те вилнĕ пиччĕш вырăнне Хĕрлĕ Çара кайнă т. ыт. те. Мĕнпур совет халăхĕ хăйĕн юратнă тăван çĕршывне сыхлама кирек-хăçан та хатĕр. Ку енчен Тукташ калавĕн теми пурăнăçпа

йĕрлĕ пырать. Хальхи паллă ĕçсене литература урлă кăтартса парать.

Çав вăхăтрах автор çĕнĕ юрату ыйтăвне те пурăнăçра ытти ыйтусемпе лайăх çыхăнтарса кăтартнă. Ахметпа Лена хушшинчи юрату мещенле, буржуаллă юрату мар,—чăн-чăн юлташла юрату, совет çамрăкĕсен юратăвĕ. Вĕсем пĕр-пĕрне чĕререн килĕштереççĕ. Автор юратăва специальность, професси т. ыт. сăлтавсем чăрмантарма пултарайманнине кăтартать. Лена—врач, Ахмет—тракторист. Ĕлĕкрен пыракан йăла хĕре пуян çынна, „чаплă" çынна качча пама сĕннĕ. Халь апла мар. Чаплă çынсем халь—ударлă та стахановла ĕçлекен колхозниксем, трактористсем, врачсем, сестрасем, орден илнĕ колхозниксем, колхозник-депутатсем, учитель-депутатсем... Совет çĕршывĕшĕн тăрăшакан патриотсем. Çак енчен пăхсан, мĕнрен чапсăр Ахмет, Лена врач, Розова сестра (Пайрашăн) т. ыт. те. Вĕсем пурте çĕршыв умĕнче тава тивĕçлĕ çынсем.

Ахмет—тракторист. Унăн пултарулăхĕ пысăк. Сăвăсем çырать, таса çӳрет т. ыт. те. Юлашкинчен, çĕршыва сыхлама каять, Ленин орденĕ илет. Кам тиркетĕр ĕнтĕ Ахмета? Ăна пĕтĕм Совет Союзĕ пĕлет, мухтать. Анчах ĕлĕкхи йăла Ахмет пек трактористсене каччă тесе шутламан. Ăна эпир Петюк сăмахĕсенчен те куратпăр. „Юратмасть вĕт вăл сана. Мĕн ăшна çунтаратăн пустуй. Вăл—врач, а эсĕ—хăрăм çинче выртса йăваланнă упăте",—тет вăл. Анчах хальхи совет çамрăкĕсем апла шутламаççĕ: вăйăсенче Ахметпа Лена тĕл пулаççĕ; ташлаççĕ, пĕрле калаçса лараççĕ. Хирĕçни çук, Ахмет хăй юратнине те Ленăна калама вăтанмасть: „Кунта шухăшласан та ĕç тухас çук. Паллах, врача тракторист мăшăрĕ пулни килĕшмĕ ĕнтĕ. Сире валли хăвăр пек нумай вĕреннисем те темĕн чухлех. **Эп сире айăпламастăп, анчах юратма та пăрахаймастăп. Çакă кăна**",—тет. Паллах, çакăн пек чĕререн тухакан сăмахсем Лена кăмăлне пăлхатмасăр хăварма пултарайман.

Ахмет тракторист кăна мар. Вăл—пограничник. Тăшмансене чĕререн тарăхса, совет чиккисене хутĕлесе вилнĕ пиччĕш вырăнне Хĕрлĕ Çара каять. „Вĕлернĕ... Нихăçан та каçару пулмĕ вăл ирсĕр йытăсене манран! Каçарас çук эпир вĕсене чикĕ урлă нихăçан та!.. Ыранах тухса каятăп эпĕ ун вырăнне йышăнмашкăн, унăн винтовкине алла çирĕп тытса тăван çĕршыва сыхламашкăн,"—тет. Чикĕре чух та вăл тăшмансене тытма пĕлет. Шăвакан „тĕмесене" пӳлсе тытать. Аманнине пăхмасăр кĕрешет.

Лена—врач. Вăл Ахмет пекех ĕçхалăх хĕрĕ. Ĕçхалăх интересĕпе пурăнать. Вăл мещенле хĕр мар. Çынсене те хисеплеме, халама пĕлет. Нумай вĕреннĕ тесе, хăйне мăнкăмăллă тытмасть. Вăйăсенче те çамрăксемпе хутшăнса вылять. Пуринпе те юлташ пек. Çиленнĕ Ахмета та Лена çавăрать.—„Каям та халех каçару ыйтам Ахметран, каласа парам эп ăна хăйĕнчен те ытларах юратма пултарни çинчен",—тесе Ахмет патне каять.—„Паçăрхишĕн каçар эс мана. Хĕр хăюсăрлăхĕ пулчĕ вăл. Тӳррипе калама вăтантăм эпĕ. Ме, ак ил çак чечеке. Вăл манăн чи таса та чи ăшă

юратăвăм... Паянран пуçласа иксĕмĕр ĕмĕр пĕр тупаллă пулăпăр", —тет. Ахмета сад-пахчинчи клумбăран татса илнĕ **шурă розăна** тыттарать.

Çапла, Ахметпа Лена хушшинче чăн-чăн юрату пуçланать. Вĕсен юратăвĕ пурăнăçпа тачă çыхăнса тăрать, вĕсем юрату тесе çĕршыв умĕнчи ĕçсене манмаççĕ.

Лена чăваш республикинчи ытти комсомолкăсемпе пĕрле хĕвелтухăçне ĕçлеме каять. Лена—комсомолка. Вăл та сыхлăх ĕçне юратса хутшăнать. Çар госпитальне ĕçлеме кĕрет. Юлашкинчен, Ахметпа тĕл пулать: иккĕш те çĕршывăн мухтава тивĕçлĕ хĕрĕывăлĕ пулса пĕрлешеççĕ. Кам хисеплемĕ ĕнтĕ çавăн пек мăшăра? Кам тиркеме пултарĕ врачпа орденлă тракторист - пограничник юратăвне? Вĕсене телейлĕ те вăрăм ĕмĕр сунасси çеç юлать.

**„Пурăнăç пуçламăшĕ"**[1] (калав, „Сунтал" № 5, 1939 ç.) патша саманинчи чухăнсен йывăр пурăнăçне кăтартса парать. Пусмăрти йывăр пурăнăç ĕçхалăхне революци çулĕ çине тăратать, патша йыттисене, пуянсене хирĕç унта-кунта кĕрешӳсем пуçласа ярать.

Ку калав 1907—11-мĕш çулсем хушшинчи пурăнăçа сăнласа парать.

1905—07-мĕш çулхи революцирен аран-аран çăлăнса юлнă патша влаçĕ, хăйĕн тĕрекне çирĕплетес тесе, çĕнĕ законсем кăларать. Революционерсене çĕршерĕн, пиншерĕн çакса вĕлерет, тĕрмене хупать, Çĕпĕре ярать. Ялта революцие хирĕç тăракан шанчăклă вăй туса хурас тесе, патша министрĕ Столыпин 1906-мĕш çул вĕçĕнче çĕр тĕлĕшĕпе çĕнĕ закон кăларать. Ку закон тăрăх пур хресчен те, хăй ят çĕрнех уйрăм касса илсе, хутора тухса ларма, хăй ят çĕрнех сутма та пултарнă. Ку закон пуянсене, чухăнсен çĕрне йӳнĕ хакпа илсе, пĕчĕкрех поместье пек туса, хутора тухса ларма май панă. Пуянсене хутĕлекен патша влаçĕ хутора тухса ларакансене укçа халлĕн ссуда парса пулăшать, вĕсене лайăх çĕр касса пама хушать. Çапла майпа патша влаçĕ ялти кулаксенчен хăйне революцирен хӳтĕлекен вăй—вак помещиксем туса ярасшăн пулнă.

Çакăн хыççăн пуянсем çĕкленсе пыраççĕ. Чухăнсем çĕрсĕр тăрса юлаççĕ. Хăшĕсем хуторти пуянсем патне батрака кĕрсе ӳкеççĕ. Ял татах сийленсе пырать. Хутор хуçисемпе чухăнсен интересĕсем хирĕçле пирки, класс кĕрешĕвĕ çивĕчленсе пырать.

Çак вăхăтри пурăнăçа кăтартса парать Тукташ калавĕ.

Ялти пуян, Элеçук ашшĕ, çĕрне те, вăрманне те обществăран касса илсе, çурт-йĕр çавăрса, хутора тухса ларать. Пыл хурчĕсене 130 вĕлле таран ĕрчетсе, вăл утар туса ярать. Унăн утарне ялти батрак, Хветут мучи, пăхса тăрать. Элеçук ашшĕ, Салакайăк хутор хуçи, чухăнсен çĕрĕсене хăй аллине пуçтарать, халăх ĕнси çинче ырă курса пурăнма тытăнать.

Çав вăхăтрах чухăнсене патша влаçĕ тӳсме çук йывăр кулана йпа хĕстерет. Патша йыттисем—старшинасем, стражниксем,

---

1) „Пурăнăç пуçламăшĕ" калав тăрăх М. Белов пьеса çырнă („Сунтал" № 10, 1940 ç.).

старостăсем куланай пухас ĕçе тискеррĕн туса пынă. Халăха хăратса ытлашшипех пухнă куланай укçисене хăйсен тăранма пĕлмен тĕпсĕр кĕсъисене тултарма тăрăшнă. Вулăс писарĕ ка-măн-камăн мĕн чухлĕ куланай тӳлемелли юлни çинчен вуласа панă списокран та вăл аван курăнать: унта тӳленĕ укçасене те шута кĕртмен иккен. Чухăнсем пăлханма пуçлаççĕ.

— Суятăн! Виçĕм кун кăна икĕ манит килсе хыврăм. Сирĕн тĕпсĕр кĕсъĕре тултараймăн...

— Ман çинче те ик манит пулма тивĕç мар. Хăйсен кĕсъисене чикеççĕ вĕсем!"—тет Ваççук та.

Çакăн хыççăн стражник Ваççука нухалепе пуç урлă туртать:

— „А-а, бунтовать!..“—тесе кăшкăрать. Пуянсем те Ваççука хĕнеме пуçлаççĕ.

Çак ĕçе чăтса тăраймасăр, чухăнсем ушкăнĕпех пуянсемпе патша йыттисене хирĕç вăрçма тытăнаççĕ. Чухăнсене: „Сӳсленкĕ“, „молча-ать!“ текен старшинасене, „А-а, бунтовать!..“ текен стражниксене, „саклат йăтатпăр“ текен старостăсене, „кĕлмĕçсемшĕн ял халăхĕ виноват мар!..“, „вĕреннĕ вĕсем ял çинче йытăлла, янтă пурнăçпа пурăнмашкăн...“ текен пуянсене чухăнсем ватти-çамрăккипех çĕмĕрме пуçлаççĕ, патша йыттисене ялтан хăваласа яраççĕ.

Ульяна—чухăн хĕр. Унăн сăмахĕпе юрринче революциллĕ шухăш палăрать. Хăй тăшманне те вăл тавăрма пултарать. Хăйне пусмăрланă пуян Элеçуксен кил-çуртне вăл вут тĕртсе çунтарса ярать. Хăйĕн савнă Ваççукĕшĕн те ялти халăхшăн та тавăрать. „Тавăрăп, тавăрăп эп сире пуриншĕн те! Тавăрăп хамшăн та, тавăрăп Ваççукшăн та!“—тет çиллипе. Анчах ăна тытаççĕ. Ваççука ăсатнă пекех, ăна та Çĕпĕре ăсатаççĕ. Çул çинче вăл, Ваççук виллине урапапа турттарса тавăрăннине тĕл пулсан, патша саманине чĕререн ылханать.

— Ваççук, Ваççук!.. халăх ĕçĕшĕн пуçна çухатрăн-çке эсĕ, тусăмçăм... Чĕрене кĕрсе вырнаçнă хыççăнах уйăрчĕç-çке пире иксĕмĕре çак тĕнчери тискер этемсем...“—тет.

Конвоир ăна: „Ай хăвăн пурăнăçун вĕçĕ кунран мала кайĕ тетĕн-им?—тесе мăшкăласан, вăл ăна хирĕç çапла калать:

— „Суятăн! Суятăн!.. Ку манăн пурăнăç вĕçĕ мар, пуçламăшĕ кăна!“—тет. Паллах, çакăн пек çирĕп сăмахсене патша саманине хирĕç кĕрешекен çеç калама пултарать. Ку сăмахсем Ульяна малашне пушшех те вирлĕн çапăçма хатĕрленнине кăтартаççĕ. Анчах калав кунпала вĕçленет. Ульянана малалла мĕн пулни вулакана курăнмасть. Ку темăпа автор малалла çырма шухăшласа хунă пек туйăнать. Мĕнле пулсан та, Ульяна класс кĕрешĕвĕн аслă çулĕ çине тухасси калав вĕçĕнчен паллă. Ульянасем пур пуянсене тавăрмасăр, революци тумасăр пурăнăç вĕçне вĕçлес çук. Кĕрешӳ пуçламăшĕ—унăн пурăнăç пуçламăшĕ.

Ульяна чухăн пурăнăç мĕнрен килнине аван пĕлет. Амăшĕ ăна „Пӳлĕхçĕн ирĕкĕ çапла, çырни çапла пулнă-тăр пирĕн тĕллĕн...“ тесен, вăл çапла ответлет; „Çук, аннç! Пулĕхçĕ никама та пĕр-

пӗринчен ни мала, ни кая туман. Пӳлӗхҫӗ хушман вӑрҫӑра вилнӗ аттен ят ҫӗрне Салакайӑк хуторне касса пама...“— тет.

Ваҫҫук—чухӑнсен типӗ. Вӑл—ялти революцилленсе пыракан ҫамрӑксен представителӗ. Пусмӑр тӗнчине, ултава вӑл аван туять, ҫавӑнпа ӑна чӑтса тӑма пултараймасть. Вӑл пухура ҫамрӑксене агитацилет. „Камӑн пуррисем тӳлеччӗр. Пиртен нимӗн те илме ҫук!“—тесе, чухӑнсем хушшинче революцилле шухӑш сарать, кӗрешӳ патне илсе ҫитерет. Стражнике хӑй малтан ярса илет. Ҫавсемшӗн Ваҫҫук каторгӑна лекет. Алли-урисене тимӗрлеттересшӗн пулман пирки уездрисемпе хирӗҫнӗшӗн Ваҫҫук пуҫне пӑшал ложипе ҫапса суранлатнӑ. Ваҫҫук—хастар ҫамрӑк. Кӗрешӳрен хӑрамасть. Вӑл патша самани вӑхӑтӗнчи революцилле хастар ҫамрӑксен типӗ пулса тӑрать. Халӑх хушшинче революцилле вӑй иксӗлми тӑнине кӑтартать. Ваҫҫук таса чӗреллӗ, пултаруллӑ каччӑ. Ульяна та, Ваҫҫук та вӑйӑсенче юрӑ пуҫараканӗмӗн. Юрату ҫине те вӗсем тӗрӗс куҫпа пӑхаҫҫӗ, телейлӗ мӑшӑрлӑ пурӑнӑҫ тӑвассишӗн калаҫаҫҫӗ. Анчах пусмӑр тӗнчи вӗсене савӑнса пурӑнма, пултарулӑхне палӑртма паман.

Элеҫук—пуянсен типӗ. Вӑл Салакайӑк хутор хуҫин ывӑлӗ. Пурӑнӑҫра вӑл иртӗхсе пурӑнать. Ашшӗ пуянлӑхӗ ӑна иртӗхтернӗ, чӗресӗр туса янӑ. Ҫын хуйхи, асапӗ, куҫҫулӗ—уншӑн савӑнӑҫ кӑна. Чипер хӗре Ульянана пусмӑрлать. Укҫашӑн, эрехшӗн хӑйне сутӑннӑ Мӗтри аллипе Хветут мучие вӗлерет. Ваҫҫука Ульянаран уйӑрас тесе, пухури ҫапӑҫу хыҫҫӑн Ваҫҫук ҫинчен пӗлтерме вулӑса вӗҫтерет.

Ку калав ӗлӗкхи ирсӗр саманана уҫса кӑтартать. Вулакансене пусмӑр тӗнчине хирӗҫ тӑратать. Ваҫҫуксен, Ульянасен ӗҫӗпе пурӑнӑҫне курса, вӗсен тӗрӗслӗхӗшӗн малалла та кӗрешме чӗнет.

Калава Тукташ аван ҫырнӑ. Анчах калавра чылай ӗҫсем ӑнсӑртран пулса пыраҫҫӗ темелле. Тӗслӗх: Ульяна Ваҫҫук виллине тӗл пулни т. ыт. те.

Композици енчен калав ҫичӗ пая пайланать. 1-мӗш пайӗнче Ульянана конвоирсем каторгӑна илсе кайнине кӑтартнӑ. 2, 3, 4, 5, 6-мӗшӗсенче каторгӑна каякан Ульяна хӑйӗн иртнӗ пурӑнӑҫӗ ҫинчен аса илнӗ шухӑшӗсене сӑнласа ҫырнӑ. 7-мӗшӗ—ҫул ҫинче арестант виллине курни.

Чӗлхе енчен калава аван ҫырнӑ, фольклор материалӗсемпе те анлӑн усӑ курнӑ. Хурлӑхлӑ пурӑнӑҫа кӑтартса памашкӑн чӑнах та чӗрене лармалла ҫырнӑ, геройсен переживанийӗсене, хурлӑхлӑ юррисене кӑтартнӑ. Калав чӗлхи те ӗлӗкхи йывӑр пурӑнӑҫа систерет. Тӗслӗх: „Конвоирсем каллех икӗ енне чунлӑ чул юпасем пек пырса тӑчӗҫ. Ку этемсен чӗрине куҫҫуль те, ахлату та хускатма пултараяс ҫук“. Е тата Ульянан переживанине илер: „Конвоирсем куҫӗсене хӗр ҫинчен пӗр самант та вӗҫертмеҫҫӗ. Ҫапах хӗр ӑна-кӑна туймасть, мӑн шыв урлӑ катара-катара кӑвак тӗтре пек сӗмленекен инҫетре, сапаланса ларакан ялсемпе саласем ҫине,

ярăмăн-ярăмăн ярăмланса выртакан ешĕл уй-хирсем çине тинкерет... Пуçра йывăр шухăшсем пăтранаççĕ. Ав лере, çинçе хура хăю пек çеç курăнакан пĕчĕк ката леш енче, тайлăк-тĕйлĕк чăваш ялĕ пулма тивĕçлĕ... Çавăнта унăн тăван çĕршывĕ, тусĕ-тантăшĕсем. Анчах ăна вĕсенчен хура ăшчиклĕ этемсем вăйпах уйăрчĕç. Тен нихăçан та курăймĕ вăл урăх хăйне çуратса ӳстернĕ çĕршыва, ял-йыша, тăванĕ-пĕтенĕсене".

## УХСАЙ ЯККĂВĔ.

(1911) ç.

Яков Гаврилович Никифоров (Яков Ухсай) 1911 çулта, Пушкăрт республикинче, Бишбуляк районĕнчи Слакпуç ялĕнче, вăтам хресчен çемьинче çуралнă. 1921—1924 çулсенче пуçламĕш шкулта вĕреннĕ. 1924—27 çулсенче Бишбулякри ШКМ-ра вĕренет. 1928 çулта Уфари Института кĕме хатĕрлекен курсра вĕренет. 1929 çулта аслă шкула кĕрет. Государствăн Мускаври университечĕн литература факультетĕнче 3 çул вĕренет.

1933—34 çулсенче Мускавра „Коммунар" ятлă чăвашла хаçат редакцинче ĕçлет. 1935—36 çулсенче Пушкăрт республикинчи наци культурисен институчĕн научнăй сотрудникĕ. 1937—39 çулсенче Патăръелĕнчи тата Ульяновскри педучилищере чăваш чĕлхипе литература вĕрентет. Юлашки вăхăтра литература ĕçĕпе пурăнать. Ухсай Яккăвĕн сăввисем 1929 çулта пичетленме пуçланă. Çак вунă çул хушшинче вăл чылай сăвăсемпе поэмăсем çырчĕ. Тĕслĕх: „Туй" (поэма), „Пуканесен бригади", „Кăмака çинчи Иван", „Кĕрхи октавăсем", „Ял", „Халăхăн ылттăн кĕнеки" (поэма), „Çĕр айĕнчи Мускав", „Вĕçевçĕ".

Сăвă сборникĕсемпе кĕнекесем те тухнă: „Сăвăсем" (1934 ç.), „Савăнăç кĕнеки" (1936 ç.), „Вут чĕлхе" (1940 çул.), „Константин Васильевич Иванов" (1940 ç.), „Хура элчел" (1941 ç.), „Ĕмĕт" (1941 ç.). Кусемсĕр пуçне Ухсай хаçат-журналсене литература çинчен статьясем чылай çырнă.

**„Халăхăн ылттăн кĕнеки"** поэмăра („Сунт." № 5, 1938 ç.) Ухсай Сталинла Конституци халăха телейлĕ пурăнăç пани çинчен çырать. Сталинла Конституци тăрăх пур халăх та, хĕрарăмĕ те, арçынĕ те, ватти те, ачи те—пурте тан. Пурне те ĕçлеме, вĕренме, канма право панă. Ĕлĕкхи закона илсен, вăл ĕçхалăхне пусмăрламалли закон пулнă.

Закон тесен, сехре хăпатчĕ,
Чĕтретчĕ пирĕн ӳтĕмĕр.
Тӳре-шаран чĕн саламачĕ
Çунтарнине тӳсеттĕмĕр.

Закон тесе, хăпса килетчĕç
Писарьсемпе урядниксем;
Куланайсемшĕн тустаратчĕç
Тӳнсе каяс пек çуртсене,

Чӳречерен вӑр-вӑркӑтатчӗҫ
Сӑпкасенчи ачасене.

... Закон тесе, пире ӑсатнӑ
Вӑрҫӑсенчи окопсене...
... Закон тесе пире чир-чӗрлӗ,
Сӗм-суккӑр тунӑ куҫсене.

Патшан путсӗр законӗ ҫинчен ытти произведенийӗсенче те асӑнать автор. Тӗслӗх:

Кӑпӑк мар патша законӗ,
Милӗк мар ун патакки.
(„Кӗлпук мучи калавӗ", „Сунтал" № 2, 1939 ҫ.).

Патшан ирсӗр законне ҫапла ылханса ҫырать автор. Ҫӗнӗ закон—Сталинла Конституци, халӑха ырӑ пурӑнӑҫ пачӗ. Ӗҫхалӑхӗ вӑл закона Октябрь революципе граждан вӑрҫинче юн тӑкса ҫапӑҫса илнӗ. Хальхи вӑхӑтра ҫӗнӗ закона пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫар сыхласа тӑрать. Ирӗклӗ халӑх хӑйӗн пурӑнӑҫне телейлӗ те савӑнӑҫлӑ тӑвать. Савӑнӑҫлӑ пурӑнӑҫ чӗрере хаваслӑ юрӑсем ҫуратать. Мӗншӗн тесен:

Умра хитре ҫанталӑк кунӗ...
Умра ирӗк халӑх законӗ,
Илемлӗ ылттӑн кӗнеке.

Телейлӗ пурӑнӑҫ паракан Сталинӑн сӑнне хӗрсем пурҫӑн ҫиппе семпе катан-пирсем ҫине тӗрлеҫҫӗ, ӑна ӑш кӑмӑлпа юратнине кӑтартаҫҫӗ:

Ытарайми чипер хӗрсем
Ҫӗмӗртлӗхе ирех тухаҫҫӗ,
Вӗсем сӳтеҫҫӗ шурӑ пурҫӑн
Ҫӑмхасенчен ҫиппісене,
Тӗрлеҫҫӗ Сталинӑн—ҫулпуҫӑн
Сӑнне катан-пирсем ҫине.

Ҫак сӑмахсенчен эпир халӑх Сталина тата Сталинла Конституцине пӗтӗм чӗререн савса пурӑннине куратпӑр. Ку поэма совет халӑхӗн савӑнӑҫлӑ кӑмӑлӗ-шухӑшне кӑтартса парать. Поэмӑна автор аван ҫырнӑ.

**„Туй"** поэма колхозниксен пуян та культурӑллӑ пурӑнма пуҫланӑ тапхӑра сӑнласа парать. Поэма колхозла ялсем ҫӗнелсе пынине, вӗсен ҫыннисем ӳснине кӑтартать. Ҫамрӑксем ӗлӗкхин пек асап тӳсмеҫҫӗ, ӗлӗкхи йӑласемпе пурӑнмаҫҫӗ. Вӗсем—летчик, бригадир, тракторист т. ыт. те. Качча каякансем те ӗлӗкхин пек куҫҫуль тӑкса йӗрмеҫҫӗ, хӑйсем килӗштерне ҫынпа пӗрлешеҫҫӗ, ҫӗнӗ йӑлапа пурӑнаҫҫӗ.

„Туй" поэмӑра „Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр" колхоз бригадирӗ, Иванюк Мӗтрийӗ, Кӗрмеслӗ ялӗнчи „Ким" колхоз хӗрне, Верука, качча илет. Вӗсем иккӗшӗ те колхозри ударниксем, паллӑ ҫынсем.

Председательре ĕçлекен Мĕкĕтене евчĕ туса, Верук ашшĕ патне „Ким" колхоза хăтана каяççĕ. Мĕтри, çул май почта кĕрсе, Мускавра пурăнакан пиччĕшĕ (Кирилл Иваныч летчик) патне телеграмма ярса хăварать. Хăйсен колхозĕнчен пуçласа „Ким" колхозĕ таранах çĕнĕ пурăнăç илемĕ куçа савăнтарать. Чул шоссе, икĕ айккипе шур çеçкеллĕ çĕмĕрт сачĕ.

Кĕркунне пăтă пуласшăн
Айлăмра кашларĕ вир.

Кĕрмеслĕ ялĕ те чаплă-мĕн: колхоз тулăх пурăнăçпа пурăнать:

Хулари пекех ку ялăн
Пур урамĕ те чипер.
... Çĕнĕ вырăсла хапхаллă,
Пысăк çуртлă пур пек кил.

Çатмасем çинче икерчĕ,
Тарилкке çинче сар çу.
... Калаçать çўхе икерчĕ
Уй-хирти ĕçсем çинчен...
Хуплупа кăркка какайĕ—
Икĕ муллă делегат—
Выльăх-чĕрлĕх епле лайăх
Ишланни çинчен калать.
Рапорт пачĕ пыл юлташăм
Утарти ĕçсем çинчен.

Евчĕ хĕр ашшĕне хăйсем мĕншĕн килнине каласа парать. Мĕтри Иваныч бригадир чапĕ çинчен, вăл Мускавра пулни, слетра Сталина курни çинчен, орден илни çинчен калать. Хăйсен колхозĕ те вăйланни çинчен пĕлтерет:

Пирĕнех колхоз начар-и?
Хăвăрах чухлатăр пуль:
Калаçма кино пуçларĕ,
Электрицă хута карĕ,
Хамăрăн автомобиль.

Хĕр ашшĕ пулас кĕрĕве мухтать. Икĕ юратакан чĕрене мăшăрланма ыр сунать. Çакăн хыççăн Мĕтри хĕр ашшĕне Мускавран илсе килнĕ куккук пек юрлакан сехетне парнелет. Вăл çапла калать:

Ачашлатпăр та саватпăр
Хулăмсăр-укçасăрах...
Пысăк мар ман кучченеçĕм...
Парнелеп сире сехет.

Часах пĕтĕм ял чаплă туя хатĕрленме пуçлать;

Лавкара хĕрсем илеççĕ
Супăньпе одеколон...
Икçĕр çитмĕл икĕ кукăль

Пиçнĕ, тет, Марук инкен...
Шăпарçă Кĕлпук старикĕн
Пур, хăйне кура, ĕçсем:
Чĕлĕхсем аван-и, çук-и,
Кирлĕ ĕнтĕ çĕннисем.
Сар валак тăрăх пуçланчĕ
Сăрхăнма ăшă ăсла...

Çĕнĕ туй ĕлĕкхин пек куççулпе мар, хĕсĕк пӳртре мар—икĕ хутлă аслă клубра пулса иртет. Ку туйра пĕтĕмпех çĕнĕлле сывлăш, çĕнĕ сăн: туй халăхĕ дивансем çинче ларать, çĕнĕ рояль сассине итлет, ташлать. Урамра çамрăксем умлă-хыçлăн велосипедсемпе ярăнаççĕ (колхозĕпе 104 велосипед). Сĕнĕ туйăн çыннисем те çĕнĕ: райком секретарĕ автомобильпе çитет, Мĕтри бригадирĕн йăмăкĕ парашютпа сиксе анать, пиччĕшĕ—Кирилл Иваныч (Çурçĕре те вĕçнĕскер, орденлă летчик) аэропланпа улăха анса ларать...

Çĕнĕ туй, çĕнĕ те тулăх пурăнăç колхозниксене савăнтарать. Çавăнпа вĕсем çапла каласа юрлаççĕ:

Туя тăвар çĕмĕрсе,
Çĕклер халĕ телее.
Пире ирĕк панăшăн
Салам теер партие!

Яков Ухсай, „Туй“ поэма урлă совет ялне, колхоз пуянлăхне уй-хир илемĕ, ял илемĕ, выльăх-чĕрлĕх, апат-çимĕç урлă аван кăтартса парать. Колхозлă ялсене паянхи пурăнăçĕпе пĕрлех ыранхи пурăнăçне те уçса парать; татах та лайăх пурăнăç патне чĕнет. Т ĕ с л ĕ х:

Пирĕн ялăн центрĕ
Çак „Мускав урамĕ“,
Малашне вăл йăлтăрĕ,
Йывăçпа хупланĕ.
Фонтанран шыв пĕрхĕтĕ
Канăçлăх бульварĕ...

Кирилл Иваныч пек, нимĕçле, испанла пĕлекенсем те йышланĕç. Çамрăксем летчик, учитель, агроном, герой... пулассишĕн тăрăшаççĕ.

Верук та совет хĕрачи. Вăл—колхозри ударница. Колхозра вăл тăрăшса ĕçлет.

Çамрăк мăшăра туй халăхĕ çĕнĕ ĕмĕтсемпе пиллени те ял малалла татах вăйланассине, çынсем ӳсессине кăтартать. Тĕслĕх, колхозри тăватă бригадăри „пурĕ çитмĕл пĕр инке“ çĕнĕ çынсене çапла савса такмаклаççĕ:

„Пултăр сывă, пултăр сывă,
Паттăр пултăр кинĕмĕр
Çитĕ ĕмĕт, пилĕк ывăл,
Ӳнтан эпир кĕтĕпĕр.

Иккĕш—икĕ ăмăрткайăк,
Икĕ летчик пулĕç те
Яланах вĕçсе, ай, кайĕç
Пирĕн ял çинчен çӳлтен.

Тата иккĕш питĕ кирлĕ
Çӳретме карапсене...

Кĕçĕнни çеç председатель
Пулĕ пирĕн хушăра.

(„Туйра“, „Сунтал“ № 3, 1939 ç.).

Поэма форма енчен аван. Вулама çăмăл, яка. Илемлĕ вырăнсем те сахал мар. Тĕслĕх:

Сар ăсан чĕппи пек акă
Шиплетет мăшăр пушмак.

Кĕркунне пăтă пуласшăн
Айлăмра кашларĕ вир.

Вырăсла хапхи яр карĕ.
Шăнкăрчийĕ шăхărать.
Сăрлă пĕкĕре янрарĕ
Шăнкăр-шăнкăр шăнкăрав...

Рифмăсем те аван тухаççĕ. Тĕслĕх: Иванччă—аванччĕ, лавĕ—ялавĕ, кăвакарчăн—кăвакарчĕ т. ыт. те.

„Туй“ поэмăн çакăн пек çитменлĕхсем пур. Тĕслĕх: хăшпĕр геройсем (летчик — пиччĕшĕ, парашютистка—йăмăкĕ) питĕ те тĕтреллĕ курăнаççĕ. Вĕсене кăшт çеç курса юлатăн. Вĕсем, чăвашла та, вырăсла та нимĕçле те, испанла та пĕлекенскерсем, пĕр сăмах та, темшĕн, каламаççĕ, юрламаççĕ. Нумай чĕлхе пĕлнине те ĕнен мелле мар.

Поэмăри геройсен сăнлăхĕсем тарăнах тухман. Автор вĕсем çинчен каласа çеç кайнă. Ухсай ку поэмăпа хальхи çĕнĕ саманара мăшăрлакансем савăнăçне епле ирттернине кăтартас задача лартнă. Ĕлĕк хĕрсене ирĕксĕр качча панă пулсан, халь вĕсем савса кайнине кăтартнă. Ку поэма пĕтмен пекрех курăнать.

**„Çĕр айĕнчи Мускав“** сăвăра Ухсай Яккăвĕ Мускаври метро çинчен çырать. Наукăпа техника аталанса пыраççĕ. Ĕлĕк çынсем пĕлĕт çине хăпарма та, çĕр айне кĕме те пултарайман пулсан, халĕ пирĕн çынсем сывлăша та, çĕре те пăралаççĕ. Метро тунипе Мускаври чăкрашлăх та чакнине кăтартать автор: „Çĕр айĕнчен вĕçтерĕп ирĕк“,—тет. Çапла вара:

Шывра та, сывлăшра, çĕрте те
Ӳсеççĕ темиçе Мускав,

—тесе пĕтерет автор сăмахне.

**„Пĕчĕк Кĕркури Мăрса хăй Мускава кайни çинчен каласа пани“** сăвăра та Мускав чăпĕпе метро çинчен çырать. Халиччен Мускава кайса курман çын пысăк хуларан тĕлĕннине аван кăтартса панă.

Ухсай халĕ пысăк произведенисемех пама пуçларĕ. Тĕслĕх, Ленин çинчен „Ĕмĕт“ ятлă сăвăллă роман тата „Тутимĕр“ ятлă историлле трагеди, К. В. Иванов çинчен „Хура элчел“—трагеди.

## ИВАН ИВНИК

(1914 ç.)

Иван Николаевич Ивник 1914 çулта, Вăрнар районĕнчи Çавал Мăрат ялĕнче çуралнă. 1928 çулта, Кĕçĕн Кипекри 8 çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, Шупашкарти педагогика техникумне вĕренме кĕнĕ. Унтан вĕренсе тухсан, учительре ĕçленĕ, каярахпа пичет ĕçне куçнă. Хаçат-журналсенче литература сотрудникĕ пулнă.

Ивник 1929—30 çулсенче çырма пуçланă. Хăйĕн сăввисенче вăл пирĕн çĕршыван сталинла саманари савăнăçлă пурăнăçа сăнласа парать. Унăн сăввисем техника енчен илемлĕ тухаççĕ. Чылай сăввисене юрă та тунă. Тĕслĕх: „Хĕвелĕмĕр Сталин", „Юрă", („Улма чăпар ут..."), „Октябрь юрри", „Летчиксен маршĕ", „Сыхлăх юрри", „Чапай", „Халь те, малашне те", „Сивĕ çил мар хускалать тухăçран", „Пурçăн тутăр", „Уяв юрри", „Çĕнелнĕ ял", „Ёлкăна чĕнни", „Пире лайăх вĕренме", „Тракторист юрри" т. ыт. те. Вĕсене чăваш ĕçхалăхĕ юратса итлет, юратса юрлать.

Ивникăн хăшпĕр сăвввисем хрестоматисене те кĕнĕ.

Унăн çакăн пек кĕнекесем тухнă: „Павлик Морозов" (1934), „Çуркунне" (1937), „Çĕнĕ сăвăсем" (1938), „Телей çулĕ" (1938), „Пирĕн телей" (1939), „Лирика" (1939), „Ăшă çил" (1939), „Сăвă кĕнеки" (1940).

Чăвашла куçарас енĕпе те Ивник нумай ĕçленĕ. Тĕслĕх: „Давид Сасунский", „Игорь полкĕ çинчен хунă сăмах" (И. Тукташпа пĕрле), Шевченкон „Кобзарь" кĕнекинчен 9 сăвă, Пушкин, Лермонтов, Маяковский, Исаковский т. ыт. сăввисене куçарнă.

1940 çулта Чăваш АССР Верховный Совечĕн президиумĕ Ивника Хисеплĕ Грамотăпа наградăларĕ.

**„Çуркунне"** сăвă колхозсем çуракине тухма хатĕрленнипе çуркуннехи çутçанталăк илемне çыхăнтарса кăтартать. Колхоз çуракине тахçанах хатĕр-мĕн:

Акма тухасса вашаватлă кĕтсе,
Колхоз витинче кĕçенеççĕ утсем.
Юсав тракторсем. Паян-тăк паян
Тухма пултарать тракторист мăн уя.

Колхозăн сад-пахчи те, утар та пур. Унта 107 çула çитнĕ ватă колхозник ĕçлет:

Пахчаçă тухать ирпелен пахчана.
Кашни папканах асăрхать вăл, сăнать.

Паян çĕмĕртсем лараççĕ çеçкĕнĕ.
Ыран—улмуççийĕ, хурлăханĕ—виçмине.

**„Январь 1924“** тата **„Чапаев вилĕмĕ“** сăвăсем те пирĕн çĕршывăн çулпуçĕпе хаклă çыннисем вилнишĕн хурланнине кăтартаççĕ.

„Киркка Иленĕ“ (поэма), „Манăн республика,“ „Çуркунне“, „Хĕвелĕмĕр Сталин“, „Ăшă салам“, „Сăпка юрри“ т. ыт. сăввисенче Ивник Сталин саманинчи хаваслă пурăнăçа сăнласа парать.

**„Манăн республика“**. Ку сăвва Чăваш Автономийĕ 15 çул тултарнă ятпа çырнă. Сăвăра Чăваш республики малти ретре пулнине, унăн çĕршывĕ тата Шупашкарĕ (столици) малалла татах та ÿснине кăтартса çырнă.

Тĕслĕх:

Çитĕнет чăваш çĕршывĕнче
Çут Октябрь панă çут тивлет.
Тĕп туса асаплă вăхăта,
Çĕнтерÿ ялавĕ айĕнче
Ман чăваш çĕршывĕ те утать
Малтисен хисеплĕ ретĕнче.

Республикăпа пĕрлех çыннисем те ÿсеççĕ, çĕнелсех пыраççĕ, ачисем çĕршывăн усăллă çыннисем пулма тăрăшаççĕ:

Ачисем ун аслă шкулсенчен
Çĕнетме тухаççĕ тĕнчене.
Ачисем ун, каласан, енчен,
Агроном, педагог, инженер.
... Ачисем-çке ун, мăнукĕсем—
Комсомолец та-мĕн, пионер!

Киремете ĕненесси, хăйă çутасси, „Василий Иваныч“ текен вăхăт тахçанах иртсе кайнă. Халĕ халăх çĕнĕ пурăнăç тăвать. Куславкка, Çĕмĕрле, Вăрнарĕ, Канашĕ — пурте социализмла çĕршыв ÿснине кăтартаççĕ. Хирсенче те „яш сĕлĕсем“ кашласа лараççĕ...

Шупашкарĕ те ÿссе, илемленсе пырать: „сад пекех чечекленет“.

Автор республикăн малашнехи ÿсĕмĕсене те асăрхать. Шупашкара поезд пырассине кĕтет:

Эп кунтах пĕрремĕш поезда
Кĕтсе илĕп чаплă хăна пек.

Поезда чăнах та кĕтсе илчĕ Шупашкар. Сăвăри шухăш пурăнăçа кĕчĕ.

**„Сăпка юрри“** сăвăра автор пирĕн ачасем ÿссе, çĕршывшăн паха çынсем пулассине кăтартать. Тĕслĕх:

Пулăн эс, ачам, вĕçевçĕ,
Пулăн инженер.

Ҫан ӗҫне пахалӗҫ пӳртӗ.
Ырлӗҫ яланах.
Чаплӑ ӗҫшӗн—парӗҫ орден,—
Ывӑлӑм, сана.

**„Ӑшӑ салам“** („Улма чӑпар...“) сӑвӑра колхозниксем Мускавӑ кайса Ленин мавзолейне кӗрсе курма шутланине, лайӑх пурӑнӑҫ паракан Сталин патне кӗрсе колхозсенчен салам калама шутланине кӑтартнӑ. Ӑна автор фольклор чӗлхипе, ӑнланмалла, илемлӗ ҫырнӑ. Юрлама та вӑл питӗ аван. Тӗслӗх:

Улма-чӑпар ут эп утланам-и,
Инҫе кӑна ҫула эп каям-и.
Эх, пырса кӗрем-и эп Мускава
Улма-чӑпар утӑма вылятса!

**„Киркка Иленӗ“** поэма колхозри аван пурӑнӑҫа кӑтартса парать. Поэмӑра чылай вӑхӑт колхоза кӗмесӗр пурӑннӑ вӑтам хресчене—Киркка Иленне—автор колхозри пуян та культурӑллӑ телейлӗ пурӑнӑҫпа паллаштарса, хӑйне те колхоза кӗртет. Ивник Киркка пек уйрӑм хуҫалӑхпа пурӑнакан хресченсен психологийӗ улшӑнса пынине кӑтартса парать. Илен малтанах мӗншӗн колхоза кӗмест-ха? Мӗншӗн тесен ун хӑйне пурӑнмалӑх вӑй пур. Анчах колхоз тырри хӳхӗммине курсан, колхозниксем машинӑсемпе ҫӑмӑллӑн ӗҫленине курсан, Илен колхоза кӗме пулать. Телей, савӑнӑҫ колхозра ҫеҫ пулма пултарнине чухласа илет. Вӑл вара ҫапла калать:

Пӗлеймен кӑшт, тӑнсӑр пулнӑ,
Пӗлеймен эп хам тӗле.

Хӑй тӗлне вӑл юлашкинчен пит аван пӗлет, ӑна колхозра тупать:

Манӑн тӗл—колхоз, вӑл ҫул—ман!—тет.

Ҫапла вара, Киркка Иленӗ Мӑн Ҫавал ялӗнчи „Вӑй“ колхозӑн хастарлӑ та активлӑ членӗ пулса тӑрать. „Вӑй“ колхоз чӑнахах та вӑйлӑ. Унӑн клуб, радио т. ыт. те пур. Тӗрлӗ машинӑсем ӗҫлеҫҫӗ, комбайн та килмелле.

Киркка Иленӗ, аллӑран иртнӗ пулин те, колхозра ударлӑ ӗҫлет. Лайӑх ӗҫленӗшӗн колхоз унӑн ятне хисеп хӑми ҫине ҫырса хурать.

Поэма чӗлхипе форми енчен те аван, художествӑллӑ. Тӗслӗхшӗн ҫак куплетсене илер:

Улӑхра ухлем те клевӗр,
Вӑрманта—юман, пилеш.
Тыр пуссийӗ, тинӗс евӗр,
Хумсемпе чупса килет.

Эсир каҫӑр та уй урлӑ
Телефонлӑ ҫулпала,
Пырса кӗрӗр пит хӑюллӑн
Ҫӗнӗлле сывлан яла.

Йăлтăрать июль. Кун шăрăх.
Сар ырашĕ шăркара.
Пĕр йăрансăр пусă тăрăх
Лăпкă çил¯юхать вăрах.

Хальхи пурăнăç çинчен çырнипе пĕрлех, Ивник чăвашсен иртнĕ асаплă пурăнăçĕпе кĕрешĕвĕсем çинчен те çырать, ĕлĕкхи пурăнăç йывăррине кăтартать. Тĕслĕх, „Чемей пăлхавĕ“, „Манăçман юрă“ т. ыт. те.

„Чемей пăлхавĕ“ поэма—чăваш ĕçхалăхĕ ĕлĕк пусмăра тӳсеймесĕр патша йыттисене хирĕç 1905—07 çулсенче кĕрешĕве çĕкленнине кăтартать. Чемей ялĕ ытти ялсем пекех; унта хăшĕ пуян, нумайăшĕ чухăн, выçă. Çиме çуккипе пуяна тархаслаççĕ. Пупĕ, пуянĕ, улпучĕ, патши—пурте халăх ĕнси çинче ларнă. Йывăр куланай тӳлеттернĕ. Куланай пухма пынă патша йыттисене хирĕç Чемей пăлханма пуçлать, „Марсельеза“ юрра юрлать. Пăлхава Сормăвăран килнĕ рабочи Морев Иван ертсе пырать. Баррикадăсем тусах çапăçать халăх. Тăшмана хăвалать:

—Кайăр кунтан,
Патша йыттисем!
— Ан кĕрĕр килсе
Яла!
Шатăртатрĕ рычаг,
Çĕкленеç сенĕксем—
Исправниксене хăвалаç...

Паллах, „Чемей пăлхавĕ“ патша пусмăрне Чемей ĕнси çинчен сирсе пăрахма пултарайман. Анчах та вăл нумай чемейсем вăраннине кăтартать. Пур чемейсем пĕр пулса, рабочи класс ертсе пынипе, 1917 çулта патша влаçне сирпĕтсе антарчĕç. Эпилогра хальхи Чемей ялне кăтартнă. Чемей халĕ ирĕккĕн сывлать. Унта колхоз машинăсемпе кивĕ те ылханлă, юнлă йăрансене аяла туса пырать. „Савăнать халь Чемей пĕрлешӳллĕ ĕçре“. Колхозăн сад, пулă кӳлли, утар та пур. Елĕк ахлату сассипе тулнă Чемей урамĕ паян хаваслă çемĕпе янăрать. Юрăра тăтăшах телейлĕ пурăнăç панă çулпуçсен Ленинпа Сталинăн ячĕсем илтĕнеççĕ.

Чемейсем Октябрь çулне нихăçан та тăшмана парас çук тех.

„Манăçман юрă“ та ĕлĕкхи асаплă пурăнăç çинчен калать. Ку сăвăра кĕтӳç ачи ĕлĕк салтака кайнă чух хурланса юрланине кăтартнă. Вăл вăхăтра службăра 25 çул пурăнмалла пулнă. Левентей киле çитеймесĕрех, çул çинчех, вилет. Акă ун юрринчи хăшпĕр сăмахĕсене илсе пăхар:

Лăпкам-лăпкам та юр çăвать,
Ыр ут юртать, йĕрсем юлаççĕ.
Эпех вилсессĕн мĕн юлать?
Çак сăвăсем юлсан юратчĕ,

Пĕр нимĕн те юлаймĕ урăх,
Йĕретĕп эпĕ çавăнпа...
Ют çĕршывра пуçа çухатăп
Йĕретĕп эпĕ çавăнпа.

Ивник—совет лирикĕ. Вăл хăйĕн сăввисенче хăйĕн таса шухăш-кăмăлĕсене çырса кăтартать. Унăн хăшпĕр сăввисенчен идея енчен ăшăхрах пулса тухнисем те пур. Маçтăрлăх енчен илсен—Ивникăн сăвă техники пуян, форми илемлĕ. Вăл чĕлхери илемлĕ сăмахсене суйласа илме пĕлет. Фольклорпа та пĕлсе усă курать.

Ивник юлашки çулсенче куçарас енĕпе нумай ĕçлет. Лермонтовăн „Мцыри" поэмине, Пушкинăн „Бахчисарайский фонтан" ятлă поэмине куçарнă.

**Ивник сăввисен техникипе форми.**

Ивник хăйĕн сăввисене формипе техники енчен илемлĕ тума тăрăшать, тĕрлĕ виçепе çырать. Тĕслĕх:

Сивĕ хĕл иртсен, пĕлетпĕр,

Çуркунне пăр тапранать.

4 стопаллă **хорей.**

Çавăн еверлĕ килсе те

Çак яла çĕн самана.

(„Киркка Иленĕ").

Тăпе сенкер, çăлкуç пек тăрă,
Çăрет пирте çурхи илем. 4 стопаллă **ямб.**
(„Май сăвви").

Пуçларăм çырма. Çывхарать çуркунне,

Сармашкăн тапратрĕç садсем папкине. 4 стопаллă **амфибрахий.**
(„Çуркунне").

Ивник хорейпа ытларах çырни палăрать. Кун пек сăвăсем: „Октябрь юрри", „Сăпка юрри", „Полюс сăвви", „Руставелие асăнса", „Кăршĕ хĕрĕ" т. ыт. те.

Рифмăсем те унăн начар мар. Тĕслĕх: тĕле—телей, каçĕ—акаççĕ, ушкăн—Пушкин т. ыт. те. Форма тĕлĕшпе те вăл çĕнĕ çулсем шырать. Тĕслĕх, çак сăвă куплетне илсе пăхар:

Шурăмпуçĕ çĕкленсессĕн
Хĕрлĕ юн тĕспе,
Амăшĕ хĕрне ăсатрĕ
Ту-сăрт çулĕпе,

Амăшĕ хĕрне ăсатрĕ
Вăрçă хирĕпе. („Амăшĕ хĕрне ăсатрĕ").

## ЧӐВАШ ЛИТЕРАТУРИН ЮЛАШКИ ÇУЛСЕНЧИ ӮСӖМӖ

Совет Союзӗнчи пур халӑхсемпе пӗрлех, социализм тӑвакан чӑваш ӗçхалӑхӗн пурӑнӑçӗ, культури те вӑйлӑ ӳссе пырать. Чӑваш совет литератури те çултан çулах аталанса пырать. Литература горизонтӗнче çулран çулах çӗнӗ ятсем, çӗнӗ произведенисем курӑнаççӗ.

**„Чӑваш халӑхӗ Аслӑ Сталин патне янӑ çыру".** Чӑваш Совет литературин юлашки çулӗсенчи ӳсӗмӗсем çинчен каланӑ май „Чӑваш халӑхӗ аслӑ Сталин патне янӑ çырӑва" уйӑрммӑнах асӑнма тивӗç. Ку çыру пирӗн культура, литература, искусство анлӑн ӳссе пынине кӑтартса парать. Вӑл çыру чӑваш халӑхӗ большевиксен партийӗпе унӑн Аслӑ çулпуçне Сталина чӗререн юратни çинчен калать:

Çывӑхран та çывӑх Сталин,
Ӗмӗр тивӗç эс тава!
Мӗнлерех çырса парар-ши
Халӑхри юратӑва?

Мӗнлерех çырма пӗлер-ши
Партие юратнине,
Чӑваш халӑхӗ сана халь
Мӗн пек ӑшшӑн савнине?

„Çырура" пирӗн партипе унӑн çулпуçӗсем—Ленин, Сталин чӑваш халӑхне те ирӗке кӑларни çинчен каланӑ.

Хурлӑхпа асап пӑчланчӗ
Çав ӗмӗр манми кӗрте,
Пирӗн çуркунне пуçланчӗ
Çав хаяр Октябрьте.

Çывӑхран та çывӑх Сталин!
Çав куна асӑнсанах,
Чи малтан куратпӑр халӗ
Эпир Ленинпа сана.

Çак Октябрь революцийӗ хыççӑн чӑваш çӗршывӗ те палламалла мар улшӑнчӗ. Унта та халӗ савӑнӑç кӗрлет:

Çывӑхран та çывӑх Сталин,
Кӑмӑллӑ пахчаçӑмӑр!
Халӗ ӗнтӗ чӑваш ялӗн
Сӑн-сӑпачӗ тӗксӗм мар.

Халăх Сталина чĕререн юратни ҫинчен халăх юррисем те, поэтсен сăввисем те, хĕрсен тĕррисем те аван каласа параҫҫĕ:

... Юр ăстисем юрă суйлаҫҫĕ
Сталин умне тăрса юрласшăн.
Сан ятна хĕрсем тĕрлеҫҫĕ
Питшăлли—сĕлкĕ ҫине.
— Хурҫă пул!—тесе пиллеҫҫĕ
Ҫуралан ывăлсене.

Октябрь революциччен чăваш литератури кăшт ҫеҫ шăтса палăрнă пулсан, ирĕк ҫĕршывра вăл халĕ пысăк утăмсемпе малалла каять.

Юлашки ҫулсенче чăваш литературинче ҫамрăксем: А. Эсхель, А. Алка, М. Кипек, А. Кăлкан т. ыт. те вирлĕн хутшăнса ĕҫле пуҫларĕҫ.

**Аркадий Эсхель** Ҫĕрпӳ районĕнчи Янзакасси ялĕнче 1914 ҫ. ҫуралнă.

А. Эсхель 1930 ҫ. ҫырма пуҫланă. Унăн „Ырă кун“ (1936 ҫ.), „Ҫĕнтерӳҫĕсем“ (1938 ҫ.), „Калавсем“ (1938 ҫ.), „Телей“ (1940 ҫ.). „Атăл“ (1941 ҫ.) ятлă кĕнекесем пичетленсе тухнă. Унăн произведенийĕсене шкул хрестоматисене те кĕртнĕ („Пирĕн Конституци“, „Герой калавĕ“).

А. Эсхелĕн маларах хăшпĕр сăввисем илемлех тухмастчĕҫ. Ҫавăнпа вăл хăйĕн пĕр сăввинче:

Эпĕ ҫеҫ хуллен пăшăрханатăп:
Сăввăм манăн йывăр та чуман,—тет („Хĕлле“).

„Йывăр та чуман“ сăвăсене ҫăмăллатма, ҫивĕчлетме кирлине калать. Унăн хăйне расна сăвăсем пур. Вĕсем образлă, илемлĕн янăраҫҫĕ, техники-форми те аван, ҫăмăл. Тĕслĕх: „Уҫă шыв“, „Виҫҫĕн“, „Амăшĕн юрри“, „Хĕр юрри“, „Элиххан калавĕ“, „Тинĕс сăввисем“ (цикл). Акă хăшпĕр вырăнсене илер:

Ҫут витресем вылянчĕҫ кулнăн,
Чăн тăрна куҫĕн ҫиҫĕнсе.
Эп пĕшкĕнтĕм: шывра тĕл пултăм
Пикен хура куҫĕсене.

... Пушаннă ĕмĕтсем ман тулчĕҫ,
Кула пуҫларĕ хитренех,—
Хура куҫсем чӳхенсе юлчĕҫ
Тулли ҫап-ҫутă витрере. („Уҫă шыв“).

Килĕм-ҫуртăм капăр марччĕ,
Ҫил ҫӳретчĕ...
Ҫапах ҫичĕ кăвакарчăн
Ҫитĕнтертĕм.
(„Амăшĕн юрри“).

Ĕ татах: Пахчана ирех эп тухрăм
Уççăн-уççăн сывлама.
Эп тумлам-тумламăн пухрăм,
Шăрçаларăм сывлăма.

Халь çак кĕмĕлĕн илемĕ
Çутатмасть-ши урама?
Мĕншĕн, тусăм, эс килмерĕн
Пĕрле юрă юрлама.

(„Хĕр юрри").

А. Эсхелĕн колхоз çинчен çырнă сăвăсем чылай. „Элиххан калавĕ" сăвăра автор колхоз сунарçи Элиххан 116 кашкăр тытни çинчен каласа парать. Юлашкинчен çав сунарçă 117-мĕш кашкăра, чи хаяррине—„раскулаченнăй Чукмарăн таркăн, пÿтсĕр ывăлне" вăрмантан „тытса" таврăнать. Вăл „хаяр кашкăр" ĕлĕк ялта пуç пулса пурăннă, колхоз витисене çунтарнă, обрезпа тĕлленĕ. Çав „кашкăра" тытнипе Элиххан чĕри савăнать:

Анчах тин ман кăмăл тулчĕ.
Канчĕ Элиххан чĕри:
Çĕр вунçиччĕмĕшĕ пулчĕ
Куринчен те хаярри.

Тинĕс çинчен çырнă сăввисенче Эсхель Совет Союзĕн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен Хура тинĕс хĕррине канма, юсанма е курма пынă çынсем çинчен çырать. Вĕсем кунта пурте пĕр çемье пек: шăкăлтатса калаçаççĕ, пĕрле савăнаççĕ. Тĕрлĕ халăх поэчĕсем харпăрхăй чĕлхипе сăвăсем вуласа параççĕ:

Эпир тăратпăр—çичĕ каччă,
Çич халăхран—çичĕ поэт,
Умра хавассăн ал çупаççĕ,
Кермен хум çапнă пек кĕрлет.

Пуçланчĕ ак поэзи касĕ,—
Пурте тăван та çывăх тус.
Пĕрин хыççăн тепри тухаççĕ—
Карел, армян та белорусс...

Çине-çинех пире чĕнеççĕ.
Пире çĕклет пĕр ăшă çил.
Эп тухрăм—Атăлçи поэчĕ,
Хам тăван халăхăн ачи.

(„Поэтсем").

Тинĕс халĕ Пушкинсен вăхăтĕнчи пек чуна хурлантармасть. Унта халĕ савăнăçлă çынсем ирĕк тинĕсе ырă сунаççĕ:

Çитĕ, çитĕ, сывпул, тинĕс!
Пушкин пек эп хурланса

Уйрӑлмастӑп. Кунсем иртӗҫ,
Татах ҫитӗп ҫаврӑнса. („Тинӗспе сывпуллашни“).

А. Эсхель хӑвӑрт та ҫирӗппӗн ӳссе пырать. Вӑл калавсем те, очерксем те ҫырать. Эсхель калавӗсен композицийӗ те аван, содержанийӗсем интереслӗ. Унӑн „Калавсем“ ятлӑ сборникне, уйрӑмах „Атӑл ҫинче“ ятлӑ калавне асӑнма тивӗҫ.

**Александр Алка** (Бачков) 1913 ҫулта, Тутар республикӗнче, Пӑва районӗнчи Кӑнна - Кушкинче ҫуралнӑ. Хусанти Чӑваш Педтехникумӗнче вӗреннӗ. Ун хыҫҫӑн учительре пурӑннӑ. 1934—38 ҫҫ. Шупашкарти пединститутра вӗреннӗ. Институтран вӗренсе тухсан, пӗр ҫул Етӗрнери педучилищере чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентнӗ. 1939 ҫ. Хӗрлӗ Ҫара кайнӑ.

А. Алка юлашки ҫулсенче палӑрнӑ поэт. Вӑл 1935 ҫулта ҫырма пуҫланӑ. Поэзийӗ унӑн вӑйлӑ, лирикӑллӑ сӑввисем аван тухаҫҫӗ. Унӑн хӑшпӗр сӑввине юрӑ та тунӑ.

Унӑн 1940 ҫулта „Хӗвеллӗ ир“ ятлӑ сӑвӑ сборникӗ тухнӑ. „Икӗ тӗнче—икӗ юрӑ“ сӑвви 5 класра вӗренмелли хрестоматине те кӗнӗ. Кунсӑр пуҫне А. Алка сӑввисем тӗрлӗ сборниксенче пичетленнӗ. Поэзи антологийӗнче унӑн 9 сӑвӑ тата „Шыварманӗ“ ятлӑ 5 юрӑллӑ легенда пичетленнӗ.

„Хӗвеллӗ ир“ сборникри сӑвӑсем ирӗк ҫӗршывӑн телейлӗ пурӑнӑҫне, халӑхӑн хӗвеллӗ ирне кӑтартса параҫҫӗ.

„Икӗ тенче,—икӗ юрӑ“ сӑвӑра вӑл ӗлӗкхипе хальхи вӑхӑта танлаштарса кӑтартать: ӗлӗк юрӑ вырӑнне куҫҫуль пулнӑ пулсан, халь чӑн-чӑн хаваслӑ юрӑ янӑрать. Акӑ мӗн ҫырать вӑл ӗлӗкхи ҫинчен:

Ваттисем юрлаҫҫӗ: ҫумӑр шӑпӑртатнӑ,
Витрелетсе ҫунӑ ял-хирсем ҫине;
... Ӑшӑ ҫумӑр мар-мӗн, куҫҫулленнӗ тар-мӗн
Юхнӑ пирӗн хытӑ анасем ҫине.
Ваттисем юрлаҫҫӗ: тӑвӑл явӑнатчӗ,
Шӑхӑратчӗ ҫилӗ пирӗн ҫӗр ҫинче:
Ҫил те мар, тӑвӑл та,—пусмӑр саламачӗ
Шӑхӑратчӗ пирӗн пуҫӑмӑр ҫинче. („Икӗ тӗнче“).

Хальхи пурӑнӑҫ ҫинчен:

... Аслӑ ҫӗрӗм-шывӑм
Пурлӑхлӑн, илемлӗн ешерни ҫинчен.
Савнӑ ҫӗршывшӑн миллион хӗр-ывӑл
Паттӑрӑн, телейлӗн ҫитӗнни ҫинчен...—

тулли кӑмӑлпа вӑл юрлать.

**„Шыварманӗ“** легендӑра Алка ӗлӗкхи саманара пулса иртнӗ пӗр хуйхӑллӑ та тискер ӗҫ ҫинчен каласа парать. Сӗве шывӗ ҫывӑхӗнчи пӗр ялта Тӑмпай ятлӑ пуян арман хуҫи пурӑннӑ. Ун патӗнче тарҫӑра Сарпи ятлӑ чухӑн хӗр пурӑннӑ. Ирсӗр пуян ӑна арман пӗвине чӗрӗллех ывӑтать. Ӗлӗкхи чӑвашсен йӑлипе, пӗве ан та-

тăлтăр тесен, пĕве тĕпне хĕр пăрахмалла, тенĕ. Парне-хĕрпе пĕрле Тăмпай пуян та пĕтет: ăна Сарпи савни арман хыçне тытса перет. Çак ĕçсене аса илсен, ĕлĕкхи пурăнăç тискерлĕхĕ куç умне чĕррĕн тухса тăрать. „Шыв арманĕ“ поэмăна Алка яка чĕлхепе çырнă, форми те аван.

Т ĕ с л ĕ х:

Йăлтăртатса юхать Сĕве.
Сар уйăх çуттинче.
Кăваккăн йăлкăшать пĕве,
Таппи ун пит инçе.

А. Алка сăввисем лайăххи, форми енчен вăйли çÿлерех асăннă тĕслĕхсенчен те аван курăнать. Е тепĕр тĕслĕх илер:

Сар хĕрсем ĕнтĕ кĕреççĕ
Ешĕл ĕшнене,

Юрласа тĕрĕ тĕрлеççĕ
Çухе пир çине.

Ытарма та çук илемлĕ,—
Усă ĕшнери

Чечексем пекех хитре-çке,
Капăр-çке тĕрри.

Шурă ландăшăн çеçки пек
Тăваткăл пир çине

Çепĕç аласем тĕрлеççĕ
Сталинăн сăнне.

... Юрласа сăн ÿкереççĕ—
Çывăх çын сăнне. („Сар хĕрсем ĕнтĕ...“).

Тĕрĕс калать вăл хăй çинчен çак сăмахсене:

Уй-хир тумĕ çурхи сад пек шурă,
Хĕвеллĕ юр йăлтăртатать умра.
Ман чĕрере халь чи илемлĕ юрă,
Чи капăр çуркунне—ман чунăмра.

(„Уй-хир тумĕ...“).

А. Алка—пултаруллă поэт-лирик, вăл çирĕппĕн ÿссе пырать.

Прозаиксенчен М. Кипек, Лазарева, Медведев т. ыт. те çырса тăраççĕ. „Сунтал“ журналра çак çулсенче вĕсен аван калавĕсем пичетленсе пычĕç. Медведев—„Çăлăнăç çулĕ“, „Манăн юлташ Ромео“ т. ыт. те,

**М. Кипек** (Шăхасан р.) калавĕсен теми хăйне расна. Вĕсем çав енчен те вулакансене интереслентереççĕ. Вăл час-часах пире ытти халăхсен пурăнăçĕпе паллаштарать. Унăн калавĕсем „Темаль" (узбек хĕрĕ çинчен), „Энжан вĕренме кайрĕ", „Кăзăл арватра", „Курсант Цыганов", „Лейтенант ывăлĕ", „Юрă ăсти", „Студентсем". Унăн калавĕсен чĕлхи çăмăл, вулама аван.

М. Кипек—Хĕрлĕ çар ретĕнче тăрать, лейтенант.

**А. Лазарева** (Ишлей р.) хăйĕн калавĕсемпе очеркĕсенче летчиксен пурăнăçне кăтартать. Чухăн хресчен ачисем ĕлĕкхи нушаллă пурăнăçра пушă сĕтĕрме çеç пултарнă пулсан, халь вĕсем Совет Союзĕн паттăр летчикĕсем, геройĕсем, çĕршыв патриочĕсем пулса тăнине кăтартать. Унăн калавĕсем „Сунтал" журналра 1938 çултанпа пичетленеççĕ. („Çитнĕ ĕмĕт", „Пирĕн çĕршыв хĕрĕсем", „Иккĕмĕш тĕлпулу" т. ыт. те).

**А. Кăлкан** (Тутар. респ., 1911 ç.). Вăл „Анисса" ятлă драма çырчĕ. 1940 çулхи „Сунталăн" 2 №-рĕнче унăн „Алим" ятлă 3 актлă пьеса тухрĕ. Унта Кăлкан граждан вăрçи вăхăтĕнчи ĕçсене кăтартса парать.

„Анисса"—прологлă, 5 картинăллă драма. Вăл 1935 ç. Чăваш республики 15 çул тултарнă ячĕпе туса иртternĕ конкурсра преми илнĕ.

Драмăра автор 19-мĕш ĕмĕр вĕçĕнчи чăваш ялне, ун чухнехи класс кĕрешĕвне кăтартнă. А. Кăлкан сăвăсем те чылай çырнă. Хăшпĕр сăввисене юрă та тунă („Автан", „Куккук", „Автобус").

Юлашки çулсенче нумай писательсен сборникĕсем пичетленсе тухма пуçларĕç. Авторсен коллективĕ кăларнă сборниксем те чылай тухнă: „Ленинпа Сталин çинчен çырнă сăвăсемпе юрăсем" (1937 ç.), „Сăвăсем" (1938 ç.), Чăваш совет поэзийĕн антологийĕ (1940 ç.), Чăваш Совет прозин антологийĕ (1940). Чăваш писателĕсен произведенийĕсене вырăс тата ытти халăх чĕлхисем çине куçарас ĕç те малалла пырать („Нарспи", тĕрлĕрен калавсемпе сăвăсем).

Пуринчен ытла вырăс тата ытти халăх писателĕсен произведенийĕсене чăвашла куçарас ĕç ăнăçлă пырать. Пушкинăн „Евгений Онегин", „Капитан хĕрĕ", „Дубровский", „Белкин повеçĕсем", „Борис Годунов" тата тĕрлĕ сăввисене куçарнă. М. Горький произведенийĕсенчен „Амăшĕ", „Мещенсем", „Тĕпĕнче", „Фома Гордеев" т. ыт. куçарнă. Н. Островскин „Хурçă епле хĕрнĕ", „Тăвăлпа çуралнисем", М. Шолоховăн „Уçнă çерем", „Лăпкă Дон" (1 том), Фурмановăн „Чапаев", Шота Руставелин „Тигр тирне витĕннĕ витязь" (сыпăкĕсем), Джамбул, С. Стальский, Некрасов, Лермонтов, Шевченко, Короленко, Чехов, Салтыков-Щедрин, Л. Толстой, Маяковский, Лебедев-Кумач т. ыт. произведенийĕсене те куçарнă.

Ачасем валли куçарнă кĕнекесем те чылай: „Козета", „Гаврош" (В. Гюго), „Виçĕ калав" (Чехов), „Юспике" (Р. Роллан), „Эрхип мучипе Ленька" (М. Горький) т. ыт. те. Пĕчĕк ачасем валли „Тетте кĕнекесем", „Кĕнеке хыççăн кĕнеке" серийĕсем тухаççĕ. Анчах ачасем валли çырнă оригиналлă япаласем халĕ сахал.

Вулакана хальхи Сталинла саманана тивĕç пысăк произведенисем пама вăхăт. Пурăнăçăн, социализм строительствин тĕрлĕ ыйтăвĕсене анлăн çутатса парасси—писательсен паянхи задачи пулса тăрать. Литература пурăнăçа сăнласа парать пулсан, пурăнăçа тума та вĕрентет пулсан, произведенисенче иртнĕ пурăнăçа, паянхипе ыранхи ĕçсене кăтартса пама пĕлмелле. Социализм строительствин тĕрлĕ участокĕсенчи малта пыракан паттăрсен сăнĕсене тараннăн кăтартса памалла.

Пирĕн литература—ĕçхалăх литератури. Çавăнпа та вăл ĕçхалăхĕшĕн çывăх, ăна усăллă пулмалла.

Чăваш литератури те социализмла çĕршывра хăйĕн сăнне кăтартма пуçларĕ. Ун çинчен иртнĕ çулта К. В. Иванов юбилейне чăваш ĕçхалăхĕпе пĕрле Совет Союзĕнчи пур ĕçхалăхĕ хутшăнни те аван кăтартса парать. Çеçпĕл Мишши кĕтнĕ поэтсем, кăвар чĕреллĕ сăвăçсем, тĕнчене килчĕç. Вĕсен йышĕ ӳссех пырать. Çеçпĕл вĕсем килессе кĕтнĕ, чăваш чĕлхи, литератури вăйлăн аталанассине шаннă:

Савнă çĕршывăмăн пулĕç
    Чаплă сăвăçсем,
Чаплă та илемлĕ çырĕç
    Ун чухне вĕсем. („Эп вилсен").

Часрах килсе хăватлăх кĕртчĕ
Чăвашăн капăр чĕлхине.
Çунтартăр çулăмлă, кăварлă
Чĕлхӳ сынсен чĕрисене. („Чăваш ачине").

Шупашкар чăваш культурин центрĕ пулассине те Çеçпĕл шаннă:

Шупашкарăн варри
Çисĕм вутлăн вĕри—
Çĕн сăмах вучаххи пултăр-и! (Ятсăр сăвă).

— Килсем часрах,
    Чăваш поэчĕ!
Тесе яланах
    Чун чĕнетчĕ. („Йывăр шухăшсем").

Çеçпĕл чĕннине пирĕн поэтсем илтрĕç. Вĕсем Çеçпĕл пуçланă ĕçе малалла туса пыраççĕ, вăл чĕннине хирĕç ответ параççĕ:

Килчĕç, килчĕç
    Эс кĕтнĕ чăваш ачисем!
Вут чĕлхеллĕ
    Кăвар чунлă сăвăçсем
            килчĕç.
Халăхра янăраççĕ
    Вĕсен сăввисем,
Çĕршывра тивĕçпе янрама
    Хăват илчĕç.
            (Уйăп).

Эсĕ каланисем
Чăн пулчĕçĕ:
Телейлĕ кунçулсем
Килчĕçĕ...

Чăваш поэчĕсем
Сас параççĕ,
Çĕнтерӳ юррисем
Юрлаççĕ.
            (Шелепи),

Анчах лăплан, Çеçпĕлĕмĕр,
Сан ĕмĕтў çитĕ:
Чĕнен сассуна илтрĕмĕр,
Вăл пурне те витĕ. (Хусанкай).

Çеçпĕлĕм! Эп те юрлатăп, ĕçлетĕп.
Умра—кунсерен ешерен самана.
Эп сан юрруна Атăл çийĕн çĕклетĕп,
Сан юррусем çĕклеççĕ мана.

(Ивник).

Çеçпĕл чăваш Пушкинĕсем, Лермонтовĕсем пулассине шаннă. Хăй те çавсем пек ĕçленĕ.

Чăваш писательсен произведенийĕсене вырăс чĕлхи çине кăна мар, Совет Союзĕнчи ытти халăх чĕлхисем çине те куçарма тытăнчĕç. Сăмахран, „Нарспи" поэмăна халĕ вырăс, тутар, пушкăрт, мари, удмурт, мăкшă чĕлхисем çине куçарнă та ĕнтĕ.

Чăваш писателĕсем хăйсен паха произведенийĕсемпе халĕ вырăс тата ытти халăх писателĕсемпе пĕрле, пĕртан тивĕçлĕхпе совет литературин анлă çулĕ çине тухса пыраççĕ.

# ЛИТЕРАТУРА ТЕРМИНӖСЕНЕ ӐНЛАНТАРСА ПАНИ.

## Эпослӑ (повествованиллӗ) жанр.

Произведенисене тӗрлӗ жанрпа (формӑпа) ҫыраҫҫӗ. Тӗп жанр виҫҫӗ: **эпос, лирика, драма.** Эпослӑ жанра анлӑн сарӑлса пыракан событисем ҫинчен ҫырнӑ повествованиллӗ произведенисем кӗреҫҫӗ. Лирикӑллӑ произведенисем тесе автор пурӑнӑҫри ӗҫсем ҫине хӑй мӗнле кӑмӑлпа пӑхнине ытларах палӑртса ҫырнине калаҫҫӗ. Кунта лирикӑллӑ сӑвӑсем, ода, юрӑ, баллада, эпиграмма, элеги, эпитафи т. ыт. те кӗрет. Тӗслӗх: Пушкинӑн „Ял" сӑвви, Уйӑп Мишшин „Ҫурҫӗр сӑввисем" т. ыт. те. Драмӑллӑ жанра сцена ҫинче вылямa, диалогсемпе ҫырнӑ произведенисем (драмӑллӑ произведенисем) кӗреҫҫӗ. Анчах драмӑллӑ произведенисем хушшинче сайра-хутра сцена ҫинче лартма мар, вулама кӑна ҫырнисем те тӗл пулаҫҫӗ.

**Повествовани—эпос** прозӑллӑ (калавла) тата сӑвӑллӑ пулать.

Прозӑллӑ повествованисене проза[1], теҫҫӗ. Прозӑна ҫаксем кӗреҫҫӗ: роман, повесть, калав, новелла, очерк, фельетон, сатирӑллӑ юмахсем.

Сӑвӑллӑ повествование: поэма, эпопея, былина, легенда, героикӑллӑ юрӑ, басня кӗрет.

Фольклора илсен, унта эпослӑ произведенисен шутне юмахсем, былинӑсем, легендӑсем, героикӑллӑ юрӑсем кӗреҫҫӗ.

**Роман.** Пурӑнӑҫа, геройсене туллин, анлӑн кӑтартакан эпослӑ пысӑк произведенисене роман теҫҫӗ. Вӑл нумай событисене, герой пурӑнӑҫӗнче пулса иртнӗ ӗҫсене, приключенисене анлӑн пӗтӗҫтерсе кӑтартать. Унӑн композицийӗ те анлӑ. Романра тӗрлӗ эпизодсем те, вак ӗҫсем те тарӑннӑн палӑраҫҫӗ.

Романсем тӗрлӗрен пулаҫҫӗ: историллӗ, психологиллӗ, сатирӑллӑ, публицистикӑллӑ, фантазиллӗ, авантюрлӑ романсем.

Историллӗ роман—историре пулса иртнӗ событисемпе вӗсен геройӗсене кӑтартса парать. Тӗслӗх, А. Толстойӑн „Петр I" ятлӑ романӗ, политикӑллӑ роман—М. Горькийӗн „Мать", психологиллӗ роман—Ф. М. Достоевскин „Униженные и оскорбленные",

[1] Прозӑллӑ повествованисене, художествӑллӑ прозӑна урӑхла беллетристика теҫҫӗ. (Французла belles lettres сӑмахран пулнӑ). Сарлакан илсен, литературӑллӑ произведенисене пурне те беллетристика теҫҫӗ.

публицистикăллă роман—Чернышевскин „Что делать“, фантазиллĕ роман--Жюль Верн çырнă „Дети Капитана Гранта“, авантюрлă (приключениллĕ) роман—Майн Рид çырнă „Всадник без головы“, Сервантесăн—„Дон-Кихот“ (рыцарьсенчен тăрăхлакан авантюрăллă-сатирăллă роман).

Романсене прозăпа çыраççĕ. Анчах сăвăпа çырнă романсем те пулаççĕ. (Пушкинăн „Евгений Онегин“, Ухсайăн „Ĕмĕт“).

**Повесть**. Çынсен ĕçĕсемпе пурăнăçĕсем çинчен, общество çинчен çырнă пысăках мар повествование повесть теççĕ. Повесть пысăккăшĕ енчен романпа калав хушшинче тăрать. Вăл пысăкрах событиллĕ, анлăрах сюжетлă, анлăрах фабулăллă повествовани. Тĕслĕх, Пушкинăн „Капитан Хĕрĕ“, Исаевăн „Лисук чăптаçă“.

**Калав**. Кулленхи пурăнăçа кĕскен çырса кăтартакан повествование калав теççĕ. Калавсен фабули анлă мар. Событисем сахал. Унта пĕр-пĕр событи е эпизод кăна пулса иртет. Тĕслĕх, Пайрашăн—„Сестра“, Тукташăн—„Шурă Роза“ т. ыт. те.

**Новелла** („Новелла—итали сăмахĕ, вăл „çĕн хыпар“, „новость“ тенине пĕлтерет). Новелла тесе—ăнсăртран, кĕтмен çĕртен сиксе тухнă темле халиччен курман пĕр-пĕр ĕç çинчен çырнă кĕске повествованисене калаççĕ. Новеллăра йăлара тата урăх çĕрте те пулса иртекен ĕçсене, приключенисене çырса кăтартаççĕ. Пирĕн новеллăсене Хумма Çеменĕ, Чалдун, Ухсай, Эсхель т. ыт. те çыраççĕ. Тĕслĕх: Гоголĕн—„Шинель“, Чалдунăн—„Якур çулĕпе“, Эсхелĕн—„Атăл çинче“.

**Очерк**. Пурăнăçра пулса иртнĕ чăн-чăн фактсене улăштармасăр образлă кăтартса паракан прозăллă произведение очерк теççĕ. Тĕслĕх, Сергеевăн—„Чикĕре“, Савкайăн—„Чикĕ тăрăх“, Эсхелĕн—„Герой калавĕ“, Чулкаçăн—„Ун çинчен Мускав та пĕлет“. Очеркри геройсем — чăн-чăн пурăнăçри çынсем. Вĕсемпе вулакан курса калаçма та пултарать. Калаври геройсене курма çук. Вĕсене автор хăй шухăшласа тунă. Анчах та пурăнăçра ун пек çынсем нумай.

**Фельетон**. Пурăнăçри киревсĕрлĕхсене, пысăк çитменлĕхсене вирлĕн питлесе тăрă шыв çине кăларакан, вичкĕн чĕлхепе тăрăхласа çырнă пысăках мар сатирăллă-юморлă повествованисене фельетон теççĕ. Фельетон французла сăмах, паянхи кун ыйтăвĕ тăрăх вичкĕн çырнă хут татки тенине пĕлтерет. Ĕлĕк, Францири Аслă революци вăхăтĕнче (1789—99 çулсенче) çав кунсенчи тĕп ыйтусем тăрăх питех те вирлĕн питлесе çырнă фельетонсене цензурăна кăтартмасăр уйрăм хут листи çине пичетлесе, хаçатпа пĕрле салатнă. Каярахпа фельетон жанрĕ хаçат-журнал страницисем çинех куçнă.

**Сатирăллă юмахсем** тесе обществăри ĕçсемпе çынсене тăрăхласа çырнă юптаруллă кĕске произведенисене калаççĕ. Тĕслĕх, Салтыков—Щедрин юмахĕсем („Шутсăр аслă ырашпĕтри“, „Карась—идеалист“).

**Басня.** Обществăри ĕççемпе çынсем çинчен çырнă юптаруллă (аллегориллĕ) сăвăллă кĕске повествованисене **басня** теççĕ. Тĕслĕх, вырăссен Крылов, чăвашсен: Ф. Ванин, Н. Евдокимов, баснисем. Басньăсене час-часах чĕрчунсемпе ахаль япаласем калаçнă пек çыраççĕ. Вĕсем урлă çынсене тăрăхлаççĕ. Крыловăн „Шăрчăкпа Кăткă", „Квартет", Евдокимовăн „Пушарта" т. ыт. те.

**Поэма.** **Поэма** тесе сăвăласа çырнă повествованисене калаççĕ. Çапла вара, поэма-калав, поэма-повесть, поэма-роман („Евгений Онегин") пулма пултарать. Поэмăра та, калаври пекех, тĕрлĕ событисене çутатса параççĕ. Анчах поэмăра вĕсене сăвă формипе çырса кăтартаççĕ. Тĕслĕх: „Нарспи", „Çирĕм улттă".

**Эпопея.** Халăх хушшинче пулса иртнĕ паха та пысăк событисене кăтартакан повествованиллĕ анлă произведенисене **эпопея** теççĕ. Тĕслĕх: „Илиада" тата „Одиссея", Серафимовичăн— „Железный поток", Элкерĕн—„Хĕн-хур айĕнче" т. ыт. те.

**Трилоги.** Виçĕ произведенине пĕрлештернине **трилоги** теççĕ. Çав виçĕ произведенийĕн содержанийĕсем пĕр-пĕринпе çывăх, вĕсене пĕр произведенийĕн пайĕсемех теме пулать. Тĕслĕх: Л. Н. Толстойăн „Детство", „Отрочество", „Юность". М. Горькийĕн „Детство", „В людях", „Мои университеты". Кинори „Юность Максима", „Возвращение Максима", „Выборгская сторона".

## Çынсен сăнĕсем (образ)—тип.

Нумай çынсемшĕн юрăхлă енсене пĕр çын сăнĕнче пĕтĕçтерсе кăтартнине **тип** (сăнлăх) теççĕ. Тĕслĕх, темиçе учитель, темиçе колхозник, темиçе колхоз председателĕсене сăнасан, писатель вĕсен характерлă енĕсене, йăлисене, интересĕсене т. ыт. те уйăрса илме пултарать. Вĕсенчен пĕтĕçтерсе, учитель, колхозник, председатель т. ыт. сăнне (образне) тăвать. Вара вăл тип пулса тăрать. Тĕслĕх, Обломов образне илер. Обломов образĕ урлă Гончаров мĕнпур кахал, тулăх пурăнăçпа иртĕхсе çитнĕ юрăхсăр помещиксен сăнне кăтартнă. Обломов пек помещиксем пурăнăçра сахал пулман. Çавăнпа вăл тип (собирательное лицо) пулса тăрать. Обломов тахăçан ĕлĕк темле пĕр кахал помещик пулнине кăна пĕлтермест. Ăна сарлакан ăнланмалла. Вăл нумай çынна пĕлтерет. Обломов хăй вăл пурăнăçри чĕрĕ çын та мар. Пулман вăл. Эсир ăна хăйнех ниçта кайсан та тупайрас çук. Вăл хăш çулта, хăш уйăхра, хăш числара çуралнине, ăçта çуралнине те—метрикине те тупас çук. Ăна автор шутласа тунă. „Хушаматне Обломов тесе калас-ха, ун урлă иртĕнсе пурăнакан кахал помещиксене кăтартса парас-ха",—тенĕ автор. Çапла вара, Обломов сăнĕ кахал помещиксен сăнĕ (образĕ)—типĕ пулса тăнă. Анчах, вăл ытти çынсен ушкăнне те юрăхлă, терĕмĕр. Обломовла типсем халĕ те пурăнаççĕ. Кун пирки Ленин, Добролюбов каланисене илер. Акă мĕн каланă Ленин хăйĕн пĕр выступленийĕнче Обломов пек çынсем социализм тума чарса пыни çинчен (засе-

данисем туса ларсах вӑхӑта ирттерекенсем ҫинчен): „Был такой тип русской жизни—Обломов. Он все лежал на кровати и составлял планы. С тех пор прошло много времени. Россия проделала три революции, а все же Обломовы остались, так как Обломов был не только помещик, а и крестьянин, и не только крестьянин, а и интеллигент, и не только интеллигент, а и рабочий и коммунист... старый Обломов остался, и надо его долго мыть, чистить, трепать и драть, чтобы какой-нибудь толк вышел“ (Ленин, XXVII том, 177 стр.).

Кахал вӗренекен, учитель, кахал колхозник т. ыт. те пуринче те обломовла енсем пур. Ҫавӑнпа вӑл «Обломовӑн» юлашкийӗсене пӗтерме пурин те ҫине тӑмалла. Вырӑссен паллӑ критикӗ Добролюбов хӑйӗн „Мӗн вӑл обломовщина?“ ятлӑ критикле статьинче пӗр тӗлте ҫапла ҫырать: „В каждом из нас сидит значительная часть Обломова, и еще рано писать нам надгробное слово“.

Литературӑри тӗрлӗ типсен хушамачӗсем те вӗсем мӗнле ҫын иккенне аван каласа параҫҫӗ. Тӗслӗх: Разуваев, Дерунов, Кахалов, Ҫывӑрайкин, Скалозуб, Молчалин, Онегин, Печорин, Криворотов, Каинов; т. ыт. те. Типсем пурӑнӑҫри пӗр-пӗр чӑн ҫынна илсе ҫырнинчен (фотографирен) вӑйлӑрах. Типсем пурӑнӑҫа тарӑнрах, тӗрӗсрех кӑтартаҫҫӗ. Тӗслӗх, пӗр-пӗр учитель пурӑнӑҫне илсе ҫырсан, вӑл пур учитель те ҫавӑн майлӑ пурӑнаҫҫӗ, тесе калама май памасть. Нумай учитель пурӑнӑҫӗсене сӑнаса, пӗр учитель образӗ туса парсан, вӑл учительсен пурӑнӑҫне тарӑн кӑтартать. Произведенири геройсем, событисем—вӗсем чӑн пурӑнӑҫри явленисене, классен, тӗрлӗ шухӑшлӑ ҫынсен хушшинчи отношенисене кӑтартса параҫҫӗ. Образсене тума материалсене чӑн-чӑн пурӑнӑҫранах илнӗ, анчах нумай сӑнаса пухса илнӗ. Ҫапах та тип тунӑ чухне пурӑнӑҫри пӗр-пӗр ҫын сӑнӗ ытларах кӗрсе юлать. Ӑна п р о т о т и п теҫҫӗ. Тӗслӗх, М. Горькийӗн „Мать“ ятлӑ романри герой Павел Власов—ҫамрӑк рабочи - революционер образӗ, тип пулса тӑрать. Вӑл образа тума Горький Сормово заводӗнчи революционер-рабочисене сӑнанӑ. Пуринчен ытла Петр Заломов рабочи ӗҫне кӑтартнӑ. Заломовӑн революциллӗ ӗҫне сӑнаса, Горький Павел Власов образне тунӑ. Анчах Павел Власов типӗнче Петр Заломовӑн революциллӗ ӗҫӗ ҫеҫ мар, ытти рабочисен революциллӗ ӗҫӗсене те ун урлӑ кӑтартнӑ, ун урлӑ ӳкерсе панӑ. Ҫапла вара, Павел Власов ҫав тери вӑйлӑ рабочи - революционер образӗ (тип) пулса тухнӑ. „Литератор должен выучиться прививать, приписывать единице наиболее характерные черты ее класса“,—тет Горький тип ҫинчен.

Типлӑ образсене кӑтартас пулсан, вӗсене хӑйсем пурӑнакан вырӑнӗнче илсе кӑтартмалла. Унсӑрӑн тарӑн, тӗрӗс кӑтартма ҫук. Тӗслӗх, учитель ҫинчен ҫырас пулсан, ӑна шкул пурӑнӑҫӗпе ҫыхӑнтарсан аван. Колхоз председателӗ образне илсен, колхозра ӗҫленине кӑтартмалла. Ҫавсенех канмалли ҫуртра кӑтартас пулсан, унта вӗсем камне уҫҫӑн кӑтартайрас ҫук. Ҫавӑнпа Энгельс ҫапла каланӑ: „Типлӑ обстоятельствӑсенчи типлӑ сӑнлӑхсем“ (Типичные образы в типичных обстоятельствах) пулмалла.

Пуранăçри çынсене сăнаса, вĕсен характерлă енĕсене пухса тип тунă чухне, писатель пуранăçа пĕр-пĕр класс идеологийĕ енĕпе илсе çутатать. Çавăнпа та вăл типсене тунă чух материалсене хăйне кирлĕ пек суйласа илет. Геройсене те хăйне кирлĕ майлă тăвать. Пролетари писателĕ положительнăй типсене юратмалла тăвать, вĕсен аван енĕсене анлăн кăтартать. Отрицательнăй типсене сăнланă чух вĕсен начар енĕсене ытларах кăтартать, вĕсене тарăхмалла е вĕсенчен кулмалла тăвать.

Произведенири геройсем (типсем) час-часах икĕ ушкăна пайланаççĕ: положительнăй тата отрицательнăй типсем пулаççĕ. Положительнăй типсене автор юратса сăнлать. Вĕсен шухăшĕсем автор шухăшĕпе килĕшсе тăраççĕ. Произведенире çав икĕ ушкăн пĕр-пĕринпе кĕрешет. (Тĕслĕх: Нарспи, Сетнер—Михетер, Тăхтаман.)

Пролетари писателĕшĕн, пĕтĕмлетсе каласан, положительнăй типсем социализм тăвакан çынсем пулаççĕ. Отрицательнăй типсем—тăшмансем (сăтăрçă, шпион, диверсант, кулак, пуп, кахал т. ыт. те); кахала, ĕçке путнă тата прогул тăвакан çынсене тӳрех тăшман теме çук, анчах вĕсем тăшманла ĕç тăваççĕ, общество ĕçне сиенлеççĕ. Вĕсем те чăн-чăн отрицательнăй типсем.

**Характеристика.** Произведенире кăтартнă çынсен уйрăмлăхне, вĕсем камне, мĕнле çын иккенне пĕлтерекен енĕсене сăнласа панине характеристика теççĕ. Çын мĕнлине, камне, тулашĕпе тумĕ енчен те, ăшри шухăш-кăмăлĕнчен те, калаçăвĕнчен те пĕлме пулать.

Геройăн ăшри шухăш-кăмăлне, савăнăçне, хуйхине, психологилле свойствине сăнласа панине шалти (внутренняя) характеристика теççĕ. Тĕслĕх, „Сестра" калаври Строиловпа Розова геройсен ăшри шухăшĕсене вулакана уçса кăтартни.

Автор герой пăшăрханнине, тарăхнине, савăнса ӳкнине те кăтартма пултарать. Тĕслĕх, „Комсомол билечĕ" калаври Шишкин çинчен çырнине илер: „Инструктор хăйне кам тытса панине тин кăна пĕлсен, умри Ира ăна труках чиксе пăрахма çĕçĕ тытнă бандит пек курăнса кайрĕ. Анчах Ира тĕрĕс ĕç тунине тата уншăн вăл хăй айăплă пулнине астуса илсен, тепре пăхнă çĕре Ира пушшех ытла хитре сăнлăн туйăнчĕ".

**Портрет.** Героя тулашĕ енчен характеристика панине портрет теççĕ. Художник портрета сăрăпа ӳкерет пулсан, писатель перопа çырса сăнлать, сăмахпа кăтартать. Портрет тума геройăн характерлă уйрăм енĕсене илмелле: пит-куçĕ, тумтирĕ, сухалĕ, утти, калаçăвĕ т. ыт. те. Отрицательнăй типсене автор çитменлĕхĕ енчен палăртма тăрăшать. Тĕслĕх, Герцен „Былое и думы" мемуарĕнче Александр I патша портретне çапла тĕртсе сăнлать: „Лоб, быстробегущий назад" т. ыт. те.

**Косвеннăй характеристика.** Произведенири образа геройĕ камне, мĕнле çыннине унăн обстановкинчен, япалисенчен те пĕлме пулать. Çын мĕнлине унăн кил-çурчĕ, ĕçĕ, çынсемпе епле калаçни, ăна çынсем епле хаклани те аван кăтартса парать. Тĕслĕх,

Обломов вулакан кĕнеке уçă выртнипе сарăхса кайни, Маниловăн табакĕсем тĕрлĕ çĕрте сапаланса выртни, кĕлне кантăк çине шакканни т. ыт. те—вĕсем япăх тата ĕççĕр аптăранă, нимĕне юрăхсăр çынсем иккенне кăтартаççĕ.

М. Исаев, Лисуксен пÿртне сăнласа, Лисукпа Якур чăн-чăн совет çамрăкĕсем иккенне кăтартать. Тĕслĕх: „Мăксăрланнă пÿрте шалтан тăмпа сĕрсе хут çыпăçтарчĕç. Тултан пăхсан пит кичем пулин те, шала кĕрсен ытла та кăмăллă пулчĕ вĕсен пÿрчĕ. Ял çыннисем вĕсем патне пырсан-тусан, малти кĕтес пушшине асăрханă. Якурпа Лисук кивĕ иконсене пÿрт тасатнă чухнех хуран айне хурса çунтарса янă. Стенасем çинче Якур Хĕрлĕ Çартан илсе килнĕ плакатсем тата Карл Маркс, Ленин, Сталин, Ворошилов, Буденный сăнĕсем çакăнса тăнă".

**Пейзаж.** Çутçанталăка сăнласа панине пейзаж теççĕ. Тĕслĕх, „Нарспи" поэмăра çуркуннехи илем çинчен çырни. Е тата: „Ăшă варкăш шăркана ларма пуçланă пĕр йăрансăр ыраш уйне вăхăчĕ-вăхăчĕпе вăраххăн хускатса каять. Çемçе çĕр айĕнчен шăтса тухса, çын çÿллĕшех ÿссе кайнă тунисем ун енĕпе, хум пек, йĕркеллĕ авăнса илеççĕ те, пуçĕсене тăратаççĕ. Тÿпери сар хĕвелĕ пĕлĕт-мĕн айне пытанмасăр хĕртсе пăхса, симĕс уя хăвăртрах тумлантарса çитерме тăрăшать. Тахăш касă хушшине пытаннă путени, уй кăмăлне ытараймасăр, ырă çанталăка савса, чарăнма пĕлмесĕр авăтать: вĕт-вĕтĕл-тик! вĕт-вĕтĕл-тик! (Пайраш „Комсомол билечĕ").

**Лирикăллă отступлени.** Произведенире автор хăй çыракан событисемпе çынсем çине мĕнле пăхни, вĕсем пирки вăл хăйĕн шухăшĕсене, переживанине каласа пани тĕл пулать. Ăна лирикăллă отступлени теççĕ. Гоголĕн, Пушкинăн вĕсем нумай тĕл пулаççĕ. Сăмахран „Евгений Онегин" романри çак вырăн:

Чăнахах вăй питти-им эп,—
Кăçал вăтăр çула кĕреп?

## Тема. Идея. Сюжет. Композици.

Пурăнăçри пĕр-пĕр явление, событие пĕтĕçтерсе образсем урлă кăтартса панине тема теççĕ.

Темăсем тĕрлĕ пулаççĕ: граждан вăрçи, колхоз, сыхлăх теми т. ыт. те. Тĕслĕх, Чалдун граждан вăрçи темипе, Трубина колхоз темипе ытларах çыраççĕ. Обломов роман теми—иртĕннĕ помещик çинчен çырнă тема пулать т. ыт. те. Анчах тема произведение, класлăхĕ енчен татса памасть. Пĕр темăпах революциллĕ те контрреволюциллĕ произведени те пулма пултарать. Колхоз çинченех, ăна хирĕçле çырнă пулсан, вăл тăшманла произведени пулать. Çавăнпа писатель хăй илнĕ темăна хăш класс куçĕпе пăхса çырнине сăнамалла. Тĕслĕх, Некрасов акă улпутсен аллинчи хресченсен йывăр пурăнăçне кăтартать.

**Идея.** Идея тесе художественнăй произведенин тĕп шухăшне калаççĕ. Писатель чăн пурăнăçăн паллă явленийĕсене, унăн типлă енĕсене пĕтĕçтерсе, унта кăларса тăратнă тĕп ыйтăва (пробле-

мăна) класлăхĕ енчен илсе хакланийĕ, автор çав тĕп ыйту тăрăх вулакана мĕн калас тенийĕ—произведени идейи пулса тăрать.

М. Горькийĕн „Амăшĕ“ романĕнче рабочи-революционер амăшĕн—тĕттĕм хĕрарăмăн 1905 çулхи революци умĕн революциллĕ шухăшĕ ӳссе пынипе унăн революциллĕ кĕрешӳ çулне кăтартса панă. Унăн сăнĕ урлă автор хăйĕн тĕп шухăшне палăртать, вилĕмрен хăрамасăр çирĕп тăрса, ирĕклĕхшĕн кĕрешекенсем тухса пынине, урăхла каласан—пролетари класĕн малта тăракан идейине кăтартса парать.

„Нарспи“ поэмăн тĕп шухăшĕ—этеме пурне те ĕçпе пурăнма, çынна çын вырăнне хисеплеме, хĕрарăма ирĕке кăларма тата пурăнăçри тĕрĕслĕхшĕн тăма чĕнни пулать. Çавăнпа та авторĕ кунта тĕрĕслĕхшĕн кĕрешекен Нарспипе Сетнер енче тăрать.

„Слово о полку Игореве“ поэмăна илсен, унăн тĕп шухăшĕ, идейи—вырăс княçĕсене тулти тăшмансемпе кĕрешме пĕрлештересси пулса тăрать. „Ку поэмăн тĕп шухăшĕ—вырăс княçĕсене монголсем килсе тапăнас умĕнхи саманара пĕрлешме чĕнни“,—тенĕ К. Маркс.

**Юморпа сатира.** Писатель хăй суйласа илнĕ темăна, геройсене тĕрлĕрен çутатса пама пултарать: хĕрхенмелле, кулмалла, сивлемелле т. ыт. те.

Автор событисене, геройсене кулăшла тата мĕскĕнĕн кăтартса, тăрăхласа парать пулсан, ăна юмор теççĕ. Тĕслĕх: „Старосветские помещики“ (Гоголь), „Хурах, хут вĕрентеççĕ“ (Иван Мучи).

Писатель пурăнăçри явленисен, геройсен çитменлĕхĕсене хирĕç хытă вăрçса тăрахласа çырать пулсан, ăна сатира теççĕ. Тĕслĕх: „Недоросль“ (Фонвизин). Унта вăл дворянсен, помещиксен ирсĕрлĕхне, тискерлĕхне критиклесе çырать.

Революциллĕ-демократиллĕ писательсем (Некрасов, Салтыков-Щедрин т. ыт.) хăйсен сатирине крепостной строя çĕмĕрес çулпа яраççĕ. Çав енчен вĕсем пурăнăçри çитменлĕхсене тарăннăн кăтартса, кивĕ строя тĕппипех çĕмĕрме чĕнсе çырнă.

Хытă тарăхса, мăшкăласа, вăрçса, тĕртсе çырнине сарказм (злая насмешка) теççĕ. Тĕслĕх, Некрасов çырнине илер:

Ма чăрмантарас-ха, тепре каласан,
Ун пек чаплă çынна вак-тĕвексемпе!

Кунта Некрасов пуçпулса тăракан классене питĕ вирлĕн тарахса мăшкăлать.

**Сюжет.** Произведенире событисем, геройсем мĕнле аталанса, çыхăнса пынине кăтартма автор палăртнă тĕп содержание сюжет теççĕ. Автор, произведение интереслă тăвас тесе, кайран пулнă событие малтан, малтан пулнă событие кайран кăтартса пама та пултарать. Тĕслĕх, Гоголь Чичиковăн ача чухнехи пурăнăçне каярах тин, XI главара, каласа парать. Л. Агаковăн „Çунатлă хĕр“ калавĕ те çавах. Калава автор Наçтаçа пароход çинче тĕл пулнинчен пуçлать. Наçтаç ачаран мĕнле ӳссе çын пулнине кайран кăтартать.

Событисем чăн-чăн пуранăçра вăхăт енчен пĕрин хыççăн теп-ри çыхăнуллă пулса иртнине произведенире улăштармасăр, ку-çарса лартмасăр кăтартнине ф а б у л а теççĕ. Сюжетпа фабулăна питех уйăрсах та каймаççĕ,

Произведенире тĕрлĕ ĕç, тĕрлĕ событи, тĕрлĕ сцена пулса иртет. Вĕсене э п и з о д (случай) теççĕ. Тĕслĕх, „Лисук чăптаçă" повĕçре: Фадейсем анкартинче ĕçлени, Лисук пароходпа таврăн-ни, çырмара путса ларни, чăпта çапни, вĕренме кайни т. ыт. те.

**Композици.** Произведенин пур пайĕсем, элеменчĕсем пĕр-пĕринпе епле йĕркеленсе килĕшӳллĕ çыхăнса тăнине к о м п о з и ц и теççĕ. Сюжет, завязка, кульминаци, развязка, эпилог, портрет, пейзаж, характеристика, çынсен калаçăвĕ, лирикăллă отступлени, чĕлхене илемлетекен майсем т. ыт. те—пурте вĕсем произведе-нире пĕтĕçсе, хăйсен вырăнĕнче тăраççĕ.

**Ситуаци. Завязка. Кульминационнăй пункт. Развязка.** Произведенири çынсем пĕр-пĕр тапхăрта пĕр-пĕринпе епле çы-хăнура тăнине с и т у а ц и (положени) теççĕ. Малтанхи ситуацие кăтартса панине, событисем мĕнле условире, мĕнле обстоятель-ствăра тапранса пулса пынине кăтартнине э к с п о з и ц и улăш-тарать. Сюжет ситуацисем улшăнса пынипе пулса тăрать. Çав ситуацисем улшăннинче эпир з а в я з к а, к у л ь м и н а ц и о н н ă й п у н к т, р а з в я з к а пуррине палăртма пултаратпăр. Событисем мĕнрен те пулин пуçланса каяççĕ. Çынсем пĕр-пĕринпе тĕл пу-лаççĕ. Тĕрлĕ енчен вĕсем хушшинче çыхăну пуçланать. Çав çы-хăну хыççăн вĕсем хушшинче кĕрешӳ (интрига) тата малалли событисем аталанса каяççĕ. Малалли событисене аталантаракан пуçламĕш çыхăнăва, геройсем хушшинче пуçланакан малтанхи çыхăнăва з а в я з к а теççĕ. Событисем анлăн сарăлса, хи-рĕçӳсем вăйланса çитнĕ тĕле к у л ь м и н а ц и теççĕ. Ун хыççăн вара событисем чакса пыраççĕ. Произведенири çынсем е вилеç-çĕ, е урăх çынсемпе çĕнĕ çыхăну пуçласа яраççĕ.

Вăйлă событисем пулса иртнĕ хыççăн геройсен хирĕçĕвĕ пĕ-тет.

Геройсен çав тапхăрти положенине р а з в я з к а теççĕ. Анчах автор хăш чух развязка хыççăнах произведение пĕтермест. Ма-лалла татах çырма пултарать. Э п и л о г парать. „Нарспи" поэ-мăна илсен, Сетнерпе Нарспи юратăвĕ тата Михетер Нарспине Тăхтамана çураçни—завязка. Туй—кульминационнăй пункт. Нарс-пи Тăхтамана вĕлерни, Сетнер, Нарспи, ашшĕ-амăшĕсем вилни—развязка. „Халь те пулин Силпире асăнаççĕ мĕскĕне..." тени эпи-лог майлă.

**Эпилог** тесе произведенири çынсен малалли пурăнăçĕпе шă-пи нумай çулсем иртнĕ хыççăн мĕнле пулнине кĕскен çырнине калаççĕ. Тĕслĕх. Тургеневăн „Отцы и дети" романĕн эпилогĕ, С. Элкерĕн „Хĕн-хур айĕнче" поэмăн юлашки картинĕ.

**Эпиграф.** Произведени пуçламăшĕнче е унăн уйрăм сыпăкĕ умĕнче эпиграф пулма пултарать. Э п и г р а ф тесе произведени умне урăх произведенирен илсе çырнă цитатăсене калаççĕ. Хăш чухне пословицăсем те пулаççĕ. Тĕслĕх „Арçури" умĕн „Тухман

çын тухсан, тăман тухать, тет", „Ревизор" умĕн „На зеркало нечего пенять, коли рожа крива",—тесе çырнă. Эпиграфра часчасах Ленин, Сталин, Горький т. ыт. паллă çынсен сăмахĕсем те пулаççĕ. Эпиграф авторăн тĕп шухăшне, шухăшĕсем тĕрĕссине пĕлтерме кирлĕ.

**Пролог.** Хăшпĕр произведенисенче тата пролог пулать. Пролог тесе произведенире кăтартнă событисем ăçтан пуçланса кайни çинчен, произведенири геройсемпе чылай малтан мĕн-мĕн пулса иртни çинчен калакан пайне калаççĕ. (Тĕслĕх, „Айдар" драмăри, „Лида йăнăшĕ" калаври прологсем).

## Драмăллă жанр (драма, трагеди, комеди).

Драмăллă произведенисем тесе сцена çинче выляма тата вулама диалогсемпе çырнă произведенисене калаççĕ. Вĕсене сцена çинче кăтартнине спектакль теççĕ. Калаçу хушшинче выляkансем мĕн тумаллине—тухмаллине, кĕмеллине т. ыт. те автор скобкăра çырса кăтартать. Ăна ремаркăсем теççĕ. Сцена çинче мĕн-мĕн япала пулмаллине çырса кăтартнине те ремаркăсем теççĕ.

Ремаркăсем режиссера тата ыттисене те постановкăна йĕркелесе пыма кирлĕ. Унсăрăн сцена çинче мĕн-мĕн кирлине пĕлме йывăр. Çапла вара, драмăллă произведенисен тексчĕ икĕ пайран тăрать:—пĕри геройсен калаçăвĕ (диалог), тепри—ремаркăсем.

Драмăллă произведенисене уйрăм пайсем çине пайлаççĕ. Çав пайсене действие е акт теççĕ. Действи тесе эпир пьесăн пĕрттаттисĕр кăтартакан пайне калатпăр. Акте действисем хушшинче перерыв пулать. Ăна антракт теççĕ. Антракт туни икĕ енчен кирлĕ: пĕр енчен, вăл куракансене канма, залăна уçăлтарма май парать; тепĕр енчен, вăл сцена çинчи декорацине улăштарма тата артистсене тум улăштарса тăхăнма, канма май парать.

Хăш чухне действи варринчех декораци улăштармалли пулать. Вара кĕске антракт тăваççĕ (чаршава хупаççĕ). Актăн çав пайĕсене картина е сцена теççĕ.

Кашни картина, акт е действи курăнусем (явленисем) çине пайланать. (1-мĕш курăнни, 2-мĕш курăнни т. ыт. те). Сцена çинчи çынсен йышĕ, выляkансен составĕ курăнусенче улшăнсах тăрать. Калăпăр, сцена çинче виçĕ çын калаçаççĕ (виçĕ çын пур). Пĕри тухса кайсан е тепĕр çын кĕрсен—урăх явлени пулса тăрать. Явленисем действире нумай пулма пултараççĕ (10—15—20 çитеççĕ).

Явленисем репликăсем çине пайланаççĕ. Çынсем пĕр-пĕринпе калаçнине реплика теççĕ. Хăй тĕллĕн калаçнине тата вăрăммăн каланине монолог теççĕ. Кун пек чух унта ытти çынсем те пулма пултараççĕ. Анчах вĕсем калаçăва хутшăнмаççĕ. Тĕслĕх, Чацкий, Нарспи монологĕсем.

Драмăра герой хăй тĕллĕн калаçать пулсан, ăна апарте теççĕ.

Сцена çинче вылакансене артист е актер теççĕ. Вĕсен хăйсем выляkан роле тĕплĕн пĕлмелле, тĕрĕс выляса памалла.

Диалогсемпе монологсемсӗр пуҫне пьесӑра тата массӑллӑ сценӑсем пулаҫҫӗ. Кун пек чух сцена ҫине нумай халӑх кӗрсе тулать. Вӗсем хушшинчен хӑшӗсем кӑштах калаҫкалаҫҫӗ, пӗр-пӗр сӑмах персе яраҫҫӗ; хӑш чухне харӑсах темиҫен калаҫаҫҫӗ. Тӗслӗх, Ф. Павловӑн „Ялта" пьесӑри туй сцени т. ыт. те. Сцена ҫинче пур ӗҫсене те кӑтартма май ҫук (поезд килни, шыва кӗни, т. ыт.). Сцена хыҫӗнче, урӑх ҫӗрте пулакан ӗҫсене актерсем калаҫнинчен е сцена хыҫӗнчи сасӑсенчен пӗлмелле.

Пьесӑсенче те пролог пулма пултарать. Унта автор пьесӑра пулса иртекен ӗҫсенчен чылай малтан пулса иртнӗ событисене кӑтартса парать. („Анисса", „Айдар" пьесӑсен прологӗ). Прологри ҫынсем час-часах сӑмахсӑр выляҫҫӗ, ӑна пантомима теҫҫӗ. Драмӑри кӗрешӳ епле пулса пынине интрига теҫҫӗ.

Трагеди, комеди тата драма мӗнле событисене кӑтартассипе те, мӗнле геройсене суйласа илсе пьесӑна кӗртесси тӗлӗшӗпе те пӗр-пӗринчен уйрӑмрах тӑраҫҫӗ.

**Трагеди.** Трагеди тесе питӗ пысӑк кӗрешӳ урлӑ пулса пыракан пысӑк событисене кӑтартакан пьесӑсене калаҫҫӗ. Трагеди геройӗсем питех те вӑйлӑ характерлӑ ҫынсем пулаҫҫӗ. Калама ҫук хаяррӑн, мӗнпур вӑйне хурса, вӗсем хӑй вӑхӑтӗнчи условисенче ҫӗнтерме те май ҫук е ҫӗнтерме май ҫукки курӑнсах тӑракан чӑрмавсемпе кӗрешеҫҫӗ. Трагедире уйрӑм геройсем общество йӗркисемпе кӗрешсе пӗтеҫҫӗ (вилеҫҫӗ, вӑйлӑ аманаҫҫӗ т. ыт. те). Трагедисемпе ӗлӗк Грецире, Римра усӑ курнӑ (Софоклӑн „Эдип патша" т. ыт. те). Каярах, XVII—XIX-мӗш ӗмӗрсенче, французсен классикӑллӑ трагедийӗсемпе Англири Шекспир трагедийӗсем паллӑ вырӑн йышӑнаҫҫӗ („Гамлет", „Отелло"). Вырӑс литературинче те трагедисем чылай (Пушкинӑн „Борис Годунов").

Классикӑллӑ трагедисене сӑвӑлла, александрийски стихпа, урӑхла каласан, ултӑ стопаллӑ ямб виҫипе ҫырнӑ. Вӗсене сцена ҫинче выляман, геройсем хӑйсен ролӗсене сӑвӑ пек каласа е юрласа ҫеҫ панӑ.

Сцена хыҫӗнче мӗн пулнине каласа кӑтартма сцена ҫине „хыпарҫӑсене" (вестники, гонцы) кӗртнӗ. Вӗсем вара айккинче ӑҫта та пулин мӗн пулни ҫинчен, сцена ҫинче кӑтартма май килмен ӗҫсем ҫинчен каласа панӑ.

Классикӑллӑ трагедисенче виҫӗ пӗрлӗхе („три единства") тытса пымалла пулнӑ. Пьесӑра вӑхӑт, вырӑн, ӗҫ пӗрлӗхӗ пулмалла пулнӑ (единство времени, места и действия). Вӑхӑт енчен—пьесӑри ӗҫсем йӑлтах пӗр талӑк хушшинче (24 сехетре) пулса иртмелле. Вырӑн енчен—пур действисем те пӗр ҫӗрте пулса иртмелле. Ӗҫ (действи) тӗлӗшӗпе—интрига пӗрре ҫеҫ пулмалла. Темиҫе ӗҫ, темиҫе интрига, темиҫе тӗрлӗ кӗрешӳ пулман. Грибоедов та хӑйӗн „Горе от ума" комедине ҫав классикӑллӑ формӑна пӑхӑнса ҫырнӑ. Пур действисем те Фамусов килӗнче тата пӗр кун хушшинче пулса иртеҫҫӗ.

Халӗ трагеди ҫырсах каймаҫҫӗ. Вӗсем сахал. Чӑваш писателӗсенчен Тал-Мӑрса сӑвӑласа историлле трагеди ҫырнӑ („Силпи"), Я. Ухсайӑн та историлле трагеди пур („Тутимӗр").

**Комеди.** Комеди тесе пурăнăçри çĕнсе илме май пур пĕчĕкрех чăрмавсемпе çăмăллăн, кулăшла-мĕнле майсемпе кĕрешнине кăтартакан пьесăсене калаççĕ. Комедире кулăшла материал йышлă. Вăл ĕçсем мĕнле пулса пынинчен те, геройсем епле тумланнинчен те, вĕсен ячĕсенчен те паллă (Çывăрайкин, Молчалин, Скотинин т. ыт.). Комеди куракансемшĕн савăнăçлă, геройсемшĕн хурлăхлă пĕтет. Тĕрлĕ класс писателĕ-драматургĕ пурăнăçăн тĕрлĕ енĕсенчен кулса çыраççĕ. Совет писателĕ кахалсенчен, симулянтсенчен, бюрократсенчен т. ыт. те кулса çырать. Тĕслĕх, Алагерăн „Кахал" комедийĕ. Ф. Павловăн „Судра" комедийĕнче йăлари вак-тĕвек чăкăлтăшсемшĕн сутлашакансенчен тăрăхласа çырнă.

**Драма.** Драма тесе çынсен тата обществăри классен хăйсен обществăллă интересĕсем çитсе çапăннипе пулса иртекен кĕрешĕве, кулленхи пурăнăçра тăтăшах тĕл пулакан чăрмавсемпе кĕрешнине кăтартса паракан пьесăсене калаççĕ. Тĕслĕх, Островскин „Гроза" драми, Кăлканăн „Анисса" т. ыт. те.

Кулăшла çырнă драмăллă пĕчĕк произведенисене водевиль теççĕ. Тĕслĕх, Чеховăн пĕчĕк пьесисем: „Шăл кăларакан", „Упа".

Калавла произведенисене, сăвăсене, басньăсене т. ыт. те сцена çинче кăтартма драмăлама пулать. Ăна драматизаци теççĕ. Тĕслĕх, Крыловăн „Шăрчăкпа кăткă" ятлă баснине виççĕн выляма пулать: пĕри—шăрчăк, тепри—кăткă, виççĕмĕшĕ—автор.

Çавăн пек произведенисене сцена çинче выляса кăтартнине инсценировка теççĕ.

Час-часах тата поэмăсенчен, романсенчен те пьесăсем тăваççĕ. Тĕслĕх: „Евгений Онегин", „Тихий Дон", „Чапаев", „Нарспи" поэмăна та драмăланă. Хăшне вĕсене музыка çине хурса, юрламалла та тунă. Актерсем хăйсен сăмахĕсене ахаль мар, юрласа каламалла çырнă пьесăсене опера теççĕ. (Опера „Евгений Онегин", опера „Фауст", опера „Нарспи" т. ыт. те). Опера валли, çырнă текста либретто, кино валли çырнине—сценарий теççĕ. М. Исаев хăйĕн „Лисук чăптаçă" повĕçне либретто тунă. Вăл кино тума юрăхлă, унта картинсем чăнах та нумай.

## Художественнăй произведенисен чĕлхи.

Илемлĕ литература произведенийĕсене çырнă чух чĕлхене илемлетекен тĕрлĕ сăмахсемпе, сăмах çаврăнăшĕсемпе усă кураççĕ.

Кашни писатель сасăсене, сăмахсене, фразăсене хăй майлă çыхăнтарса çырать. Çавăн пек художествăллă уйрăмлăха стиль (стилистика) теççĕ. Кашни писателĕн е çыракансен ушкăнĕн расна стиль пулма пултарать. Стилĕн икĕ условине пăхăнса тăмалла: пĕри уçăмлăхĕ (ясность), тепри тасалăхĕ (чистота). Уçăмлăх—автора хăйĕн шухăшне тĕрĕс, уççăн кăтартса пама хушать: вулаканшăн вăл урăхла ăнланмалла ан пултăр. Тасалăх—автора пурте калаçакан чĕлхепе, литература чĕлхипе çырма хушать. Халĕ тĕслĕхсем илер: „Пăрçа çиет"—çыртакан пăрçа çинчен каланă-ши ĕнтĕ кунта, те тырă е çимĕç çинчен? Тӳрех пĕлмелле

мар. „Çĕр çинче тавлашнă“. Çĕр тени вăл хисеп те (сăмахран, япала хакĕ, çĕр тенкĕ, тейĕпĕр) тырпул акмалли вырăн, ана та пулма пултарать. Автор хăшин çинчен калани паллă мар. Çавăн пек темиçе шухăша пĕлтерекен сăмахсене омоним теççĕ. Вĕсемпе пĕлсе усă курмалла.

Иккĕлле ăнланмалла сăмахсене (каламбурсене) интересшĕн юри те тăваççĕ. Тĕслĕх:

„Эй, Иван, йыттуна чар“. („Йытту начар“ тенĕ пек те илтĕнет). Сăвă-юрăсене чăвашла куçарнă чухне те вĕсенчен сыхланасси кирлĕ. Сăмахран: „çак ĕç“ тенине юрланă чухне „ку ĕç“ тесе те „çакĕç“ тесе ăнланма та пулать. Çыракансемпе куçаракансен çавсенчен асăрханмалла, сыхланмалла.

Тата тĕрлĕ сăмах пĕлтерĕшĕсем çывăх пулма пултараççĕ. Вĕсене синоним теççĕ (мăнтăр—самăр; аван—лайăх т. ыт.) Вĕсене те суйласа илсе, тĕрĕс усă курма пĕлмелле. Тĕслĕх, йытă усал е хаяр теççĕ. Усал тенипе хаяр тени пĕр мар.

Тĕрлĕ класс калаçăвĕнче те уйрăмлăхсем нумай. Тĕслĕх, дворянсен литературин хăйĕн стилĕ, чĕлхи (благородный, высокопарный тенĕ стиль) пулнă. Халăх хушшинче çӳрекен „лошадь“, „глаз“ сăмахсене çырулăха кĕртмен, вĕсенчен йĕрĕннĕ. Вĕсем вырăнне „конь—кони“, „очи“ т. ыт. сăмахсемпе çырнă. Е сăмах майлашăвĕсене илер. Вĕсем çапла çырнă: „Ваше превосходительство“, „Ваше сиятельство“ т. ыт. те. Шкула (семинарисене) вĕренме кĕрес пулсан та, çапла çырма лекнĕ: „Его превосходительству господину директору“... т. ыт. те. Пурăнăç, строй улшăннипе хальхи вăхăтра çĕнĕ сăмахсем тухса пыраççĕ. Вĕсене неологизм теççĕ (нео—новый, çĕнĕ тенине пĕлтерет). Тĕслĕх: вĕçевçĕ, кăларăм, выляв, хатĕрлев т. ыт. те. Кивĕ сăмахсене архаизм теççĕ (Чĕренче, Çăтмах, Пиршти). Вĕсене пĕлни ĕлĕкхи çинчен çырнă чух кирлĕ пулать.

Тата тĕрлĕ вырăнта расна калаçаççĕ, ăна диалектизм е провинциализм теççĕ. Тĕслĕх: кашкăр—тукмак, куян—мулкач, кишĕр—шĕкĕнтĕр. Тата тĕрлĕ ĕçпе пурăнакан çынсен чĕлхи те раснарах пулать. Ăна профессионализм теççĕ. Тĕслĕх, Пайраш, Осипов произведенийĕсенче час-часах медицина, музыка терминĕсем тĕл пулаççĕ (донор, шприц, вирус, мелоди, опера, консерватори т. ыт. те).

Интернационаллă сăмахсем тесе тĕнчери чĕлхесенче пуринче пе пĕрех тĕл пулакан сăмахсене калаççĕ (революци, радио, кино, театр, цирк, академи, профессор, институт, электричество). Урăх чĕлхерен илнĕ, анчах чĕлхепе пĕтĕçсех, тăван сăмах пекех пулса çитеймен сăмахсене варваризм теççĕ (кăсăк—кулăшла тени, папай, павăшка т. ыт. те).

Кашни чĕлхерех идиома тĕл пулать. Идиома тесе урăх чĕлхене куçарма май çук сăмахсене, сăмах çавăрнăшĕсене калаççĕ. „Утне çитмен туртине“ (Айзман пьеси ячĕ) пословица е, вырăс калаçăвĕнче тĕл пулакан сăмах çаврăнăшĕ: „Сел в калошу“).

## Чӗлхене илемлетекен майсем: эпитет, сравнени.

**Эпитет.** Япалана илемлӗрех, тарӑнрах кӑтартма илнӗ сӑмахсене, унӑн паллине сӑнласа паракан сӑмаха э п и т е т теççӗ. Урӑхла вӗсене **поэтическое определение** теççӗ. Мӗншӗн тесен поэтсем эпитетсене хӑйсем тӑваççӗ. Тӗслӗх, „шупка пӗлӗтсем“, „хура куç“, „лӑпсӑркка е лапсака хурӑн“. Фольклорта тата халӑх калакан эпитетсене **яланхи (постояннӑй) эпитетсем** теççӗ. Тӗслӗх: „кӑвак тинӗс“, „хура вӑрман“, „сарӑ хӗр“, „сар хӗвел“, „ешӗл улӑх“.

**Сравнени** (танлаштару). Пӗр япалана çавӑн майлӑ тепӗр япалапа илсе танлаштарнине с р а в н е н и е т а н л а ш т а р у теççӗ. Вӑл сӑнлакан япала çинчен тӗплӗрех, картинӑллӑрах, илемлӗрех калама пулӑшать. Танлаштарусем нумай пулсан, чӗлхе те образлӑ пулать, ӑна вара образлӑ чӗлхе теççӗ.

Танлаштару тӗслӗхӗсем: „Наша жизнь вольно и свободно, точно Волга полная течет“, „Зубы как жемчуг“. Чӑвашлисем: „Шӑркана ларнӑ ыраш пуссийӗ кӑвак тинӗс пек хумханса выртать“. „Икӗ куçӗ хуп-хура, икӗ хура шӑрçа пек“. „Поезд, çӗлен пек явкаланса, вӑрман чӑтлӑхӗнчен шуса тухрӗ“. Сравненисене тӑтӑшах **пек, майлӑ, евӗр** т. ыт. сӑмахсемпе усӑ курса тӑваççӗ. Хӑш чухне вӗсемсӗр те çыраççӗ.

„Кӗретпӗр ялсене, тӑваннӑн
Пире кӗтсе илеç çынсем“
(„Çурçӗр сӑввисенчен“, Уйӑп М.).

Тата сравненисене танлаштарнине кӑтартакан сӑмахсемсӗр те калаççӗ. Ун пек чухне тире лартаççӗ. Тӗслӗх: „тӳпе—океан“, „шурӑ пӗлӗт—мамӑк“.

Пичӗсем—çырла,
Куçӗсем—кӑвар. (Уйӑп М.).
Хӗвелтухӑç ылттӑн, ылттӑн.
Пӗлӗтсен хӗррийӗ—пурçӑн...
Сывлӑш—кӗмӗл, сывлӑш çутӑ,
Сывлӑш—çут мерчен тумламӗ (Ç а в а х).

Сравненисемпе те тӗрлӗ класс писателӗ тӗрлӗ усӑ курать. М. Горький патша çыннисене çапла тарӑхса сӑнлать: „Стали выть и рычать на девушку, жалобно скаля зубы, стряхиваясь, как собаки“. Анчах кирек мӗнле япалапа та танлаштарни вӑл яланах юрӑхлӑ пулмасть. Вӗсене чухласа илмелле, класлӑхӗ енчен, политикӑпа воспитани енчен юрӑхлӑ пулмалла.

**Тропы.** Ытарлӑ, урӑхла çавӑрса, юптаруллӑ каланӑ сӑмахсене т р о п ы теççӗ. Кунта метафора, метоними, символ, аллегори, синекдоха, олицетворени кӗрет.

**Метафора** (перенесение). Пӗр япалана пӗлтерекен сӑмаха çавӑн майлӑ тепӗр япала çине куçарса ытарлӑ каланине м е т а ф о р а теççӗ. Тӗслӗх: „сӗтел ури“, „кӗрепле шӑлӗ“, „çил улать“, „çил шӑхӑрать“ т. ыт. те. Çутçанталӑкри явленисене чӗрӗ япала пек сӑнланине о л и ц е т в о р е н и теççӗ. Тӗслӗх:

Икĕ савни пĕрлешсен,
Пуçне тайрĕ ват юман.

Тĕттĕм вăрман чĕрĕлет,
Ешĕл тумтир тăхăнать. (К. В. Иванов).

**Метоними.** Явление е япалана унăн раснах палăрса тăракан пайĕпе е енĕпе ытарлă каланине метоними теççĕ. Тĕслĕх, „Эй, кепка!“ тени кепкăллă çын иккенне пĕлтерет. Е тата: „Эпĕ Пушкина вулатăп“.

**Синекдоха.** Япалана унăн пайне кăна илсе каланине, нумайлă хисеп вырăнне пĕреллĕ хисепре каланине синекдоха теççĕ. Тĕслĕх: „Вунă пуç сурăх усрать“, „çирĕм ĕçалли кирлĕ“. Синекдохăна метонимирен уйăрма йывăр. Вăл метонимин расналăхĕ кăна.

**Символ.** Пĕр ĕçе е явление урăх явлени урлă кăтартса сăнласа панине символ теççĕ. Час-часах историри событисене çутçанталăкри явлени урлă сăнлаççĕ. Тĕслĕх: Элкерĕн „Хурçă карап“, Горькийĕн „Песнь о Буревестнике“, Лермонтовăн „Парус“, Шелепийĕн „Çĕлен“.

Элкерĕн „Хурçă карап“ ятлă сăввинче „Кăвак тинĕс тăрăх“ „Чуралăх утравĕнчен“ „Тăп çыран еннелле“ „Хурçă карап çинче шуни“, унăн капитанĕ çинчен калани—революцилле событине сăнласа парать. Тинĕс—масса, Хурçă карап—парти, капитанĕ—Ленин, Чуралăх утравĕ—пусмăр тĕнчи, Тăп çыран—коммунизм.

**Аллегори** (иносказание, юптару). Пĕчĕкрех ĕçсене, явленисене урăх явлени урлă юптаруллă сăнласа панине аллегори теççĕ. Кунта басньăсем кĕреççĕ. Крыловăн „Шăрчăкпа Кăткă“ ятлă басня пур, вăл шăрчăкпа кăткă майлă пурăнакан çынсене пĕлтерет (Шăрчăк—кахал, япăх çын; Кăткă—ĕçчен çын).

**Гипербола.** Сăнласа кăтартакан япалана ӳстерсе е ытлашши пĕчĕклетсе каланине гипербола теççĕ. Тĕслĕх, халăх юрринче: „Эпир панă укçине сĕтел ури тайличчен“. „Тĕрлĕ апат айĕнче çăка сĕтел авăнать“ („Нарспи“). „Сана çĕр хут (пин хут) каламалла-им?“. „Пăрса хутаççисем шĕшлĕ аври пек“. „Харăсах вĕсем икĕ заседанире: пилĕкĕ таран кунта, ытти—лере“ (Маяковский). „Çип пек çинçе пĕвĕме“ т. ыт. те.

**Фигуры.** Эмоци, сисĕмлĕх енчен пуян чĕлхене, синтаксисла оборотсене фигуры теççĕ. Кунта риторикăллă обращени, риторикăллă ыйту, параллелизм, анафора, повтор, инверси кĕрет. Предложенисене синтаксис енчен тĕрлĕрен тунипе, хăш сăмахсене, сăмах майлашăвĕсене темиçе хут каланипе геройсен сисĕмлĕхне, кăмăлĕ-туйăмне, савăнăçĕпе хуйхине вулаканшăн лайăх ăнланмалла, чĕрене тивмелле тăваççĕ.

**Риторикăллă обращени.** Автор произведенире кама та пулин чĕнсе каланине, тарăхса е тăрăхласа каланине риторикăллă обращени теççĕ.

Эй, пиччесем, тăрăр-ха,
Урлă-пирлĕ пăхăр-ха. („Нарспи“).

Кунта обращени калаҫӑва чӗррӗн сӑнлать, эмоци енчен вӑйлӑн палӑрать.

**Риторикӑллӑ ыйту** та эмоцие вӑйлатма пулӑшать. Тӗслӗх, Некрасов ҫырнине илер. Кунта вӑл халӑх хуйхине пӗлмен улпут хуҫасене вӑрҫса калать:

Что тебе эта скорбь вопиющая?
Что тебе этот бедный народ?

Риторикӑллӑ обращенисемпе, ыйтусемпе авалхи ораторсем анлӑн усӑ курнӑ. Риторика тесе ораторсен искусствине вӗрентекен ӑслӑлӑха калана.

**Повторени**. Уйрӑм сӑмахсене, сӑмах майлашӑвӗсене темиҫе хут каланине повторени (повтор) теҫҫӗ. Кунта параллелизм, анафора кӗрет.

Параллелизм (Синтаксический параллелизм) тесе уйрӑм сӑмах майлашӑвӗсем темиҫе хут тӗл пулнине калаҫҫӗ. Тӗслӗх, Некрасов сӑввинчи ҫӳлте асӑннӑ йӗркесем иккӗшӗ те синтаксисла построени енчен пӗр майлӑ. Е тата, „Нарспи" поэмӑри тӗслӗхсене илер, унта „Качча пачӗҫ ирӗксӗр", „Атте-анне ӑссӑрри" йӗркесем пилӗкшер хут тӗл пулаҫҫӗ, вӗсем Нарспи хуйхине вӑйлӑн асӑрхаттараҫҫӗ, ӑна хӗрхенмелле тӑваҫҫӗ.

Качча пачӗҫ ирӗксӗр—
Пулмарӗ-ҫке ырлӑха.
Атте-анне ӑссӑри
Ырлӑха мар, хурлӑха.

Качча пачӗҫ ирӗксӗр—
Савӑнӑҫ ҫук ку тӗнчен.
Атте-анне ӑссӑртан
Савни юлчӗ пӗр-пӗччен...

Кунсӑр пуҫне уйрӑм сӑмахсене темиҫе хут калани те чӗлхене эмоци енчен вӑйлатать, тарӑнлатать. Тӗслӗх:

Сетнер, Сетнер! Тытрӗҫ-ҫке!
Тӑр-тӑр! тарса хӑтӑлар!
Ай, пӗтрӗмӗр, пӗтрӗмӗр,
Ӑҫта тарса пытанар?

Е тата: „Нарспи, Нарспи, эсӗ-им?", „Хура вӑрман, сӗм вӑрман". Вӗсем геройсен туйӑм-сисӗмне, вӗсен кӑмӑлӗсене аван кӑтартса параҫҫӗ.

**Анафора**. Предложенисем, сӑвӑ йӗркисем пӗр пек сӑмахпа пуҫланнине анафора теҫҫӗ. Тӗслӗх:

Сӗм-сӗм вӑрман, сӗм вӑрман,
Мӗншӗн хытӑ шавлатӑн?
Мӗншӗн шӑй-шай шӑхӑрса
Мӗскӗн чуна хӑрататӑн? (К. В. Иванов).

Пулĕç ĕмĕрлĕх илемлĕ
Сăвă-юрăсем.
Пулĕç чаплă, çивĕч ăслă
Кĕнекеçĕсем. (Çеçпĕл М.).

**Инверси**. Предложенин уйрăм пайĕсене улăштарса лартнине, сăмах йĕркисене урăхлатнине инверси теççĕ. Вĕсем уйрăм сăмаха хытă асăрхамалла тăваççĕ, чĕлхене çивĕчлетеççĕ. Тĕслĕх: „Килчĕ ырă çуркунне", „Иртрĕ Çимĕк, иртрĕ туй, иртрĕ туйри савăнăç". Кусенче сказуемое-глагол малта тăрать. Вăл автор çыракан ĕçе, шухăша таран ăнланма пулăшать, çивĕчлетет. Е тата: „Белеет парус одинокий в тумане моря голубом".

**Периодически чĕлхе.** Шухăша кĕске тата вăрăм предложенисемпе те çырса кăтартма пулать. Пĕр-пĕр япала çинчен, е описание пысăк, вăрăм предложенисемпе çырса кăтартаççĕ пулсан, ăна периодически чĕлхе, вăрăммăн тăсса çырнă чĕлхе (периодическая речь) теççĕ. Вĕсемпе Гоголь нумай усă курнă. Унăн хăшпĕр предложенийĕсем 60—70 сăмаха çитеççĕ. Шухăшсем хăвăрт улшăнса пынă чух, пĕр япала çинчен тепĕр япала çине хăвăрт куçнă чух кĕске предложенисемпе çыраççĕ. Ăна отрывистая речь теççĕ.

**Графикăллă форма.** Куçпа курса, лайăх ăнланмалла пултăртесе, калавсенче пĕлтерӳсене, çырусене, документсене т. ыт. те уйрăм, шултăра шрифтпа палăртса çыраççĕ, ăна графикăллă форма теççĕ. Сăмахран, вĕсем М. Исаевăн „Лисук чăптаçă", „Çулăмри ял" ятлă произведенийĕсенче те тĕл пулаççĕ.

Тĕслĕх:

„... Иван, урамалла тухакан алкум тăрне çапнă вывескăна:

**Çавал ялсовечĕ**
**Вуламалли çурт**

тесе çырнине саспах вуласа илчĕ". („Лисук чăптаçă").

**Перифраз.** Пĕр-пĕр сăмаха темиçе урăх сăмахсемпе илемлĕн çавăрса каланине перифраз теççĕ. Тĕслĕх, Пушкин тесси вырăнне „Евгений Онегин" авторĕ, Иванов вырăнне—„Нарспи" авторĕ теме пулать т. ыт. те. Уйăп Мишши Карелия сăмах вырăнне:

Сывă пул, „Калевала" çĕршывĕ!—тет.

Юлашкинчен, кĕскен тата çак терминсемпе паллашар.

**Биографи.** Пĕр-пĕр çын пурăнăçне (вăл хăçан çуралнине, ăçта-ăçта вĕреннине, ĕçленине, хăçан вилнине т. ыт.) çырса кăтартнине биографи теççĕ. Тĕслĕх, Маркс, Ленин, Горький, Пушкин, К. В. Иванов биографийĕ т. ыт. те. Хăйĕн биографине çын хăй çырнă пулсан, ăна автобиографи теççĕ.

**Некролог.** Пĕр-пĕр çын вилнине пĕлтерсе, унăн биографийĕпе ĕçĕсем çинчен çырнине некролог теççĕ. Вĕсене хаçат-журналсем çине пичетлеççĕ.

**Рецензи.** Критикăллă кĕске отзыва, произведение е кĕнекене хак парса çырнине рецензи теççĕ. Сăмахран акă, поэтсен сăвă

сборникĕ тухсан, ăна рецензи параççĕ, хаçат-журналсенче критикăллă статья çыраççĕ.

**Псевдоним** (псевдо—суя тени пулать). Псевдоним тесе вăрттăн ята калаççĕ. Тĕслĕх: Çеçпĕл, Уйăп, Ахах, Тăхти, Чĕкеç т. ыт. Ĕлĕкрех революциллĕ произведенисем çырнă чух псевдонимпа ытларах усă курнă, ун чухне произведение кам çырнине пĕлтермелле мар пулнă. В. И. Ленин статьясем айне Ульянов тесе мар, Ленин, Тулин, Ильин, В. И. тесе алă пуснă. Сталин та, Джугашвили тесе мар, Сталин, Иванович, Коба т. ыт. тесе çырнă. Пур революционерсем те хăйсен статьисене псевдонимсемпе çырнă. Писательсем те революциллĕ произведенисене çапла çырса кăларнă (Щедрин—Салтыковăн псевдонимĕ т. ыт. те).

Революци хыççăн та кулаксем çинчен хаçата ялкорсем псевдонимпа çырнă (Сенĕк, Шĕшлĕ, Куракан т. ыт. те). Мĕншĕн тесен корреспондентсене класс тăшманĕсем тапăнни те, вĕлернисем те пулнă, çавăнпа вăрттăн ятпа çырма тивнĕ. Хальхи вăхăтра нумайăшĕ псевдонимсăрах çыраççĕ.

**Альманах**. Вăхăтран-вăхăт тухса тăракан литература сборникне альманах теççĕ. Чăваш литературинче çакăн пек альманахсем пулнă: „Трактор“, „Утăм“, „Пирĕн çул“, „Вăтам Атăл“, „Пăр тапранчĕ“ т. ыт. те. Хальхи вăхăтра Шупашкарта „Илемлĕ литература“ ятлă альманах çулталăкра 4 хут тухса тăрать.

**Антологи**. Антологи—грек сăмахĕ. Вăл—чечек, илемлĕ чечексен çыххи, букечĕ тенине пĕлтерет. Çапла вара, антологи те литературăри чи илемлĕ произведенисен сборникĕ, тенине пĕлтерет. Пирĕн халĕ „Поэзи антологийĕ“ тата „Проза антологийĕ“ пичетленсе тухнă. Вĕсенче революци хыççăнхи чăваш литературипе чăваш писателĕсем епле ӳссе пыни уççăнах палăрса тăрать.

## ТУПМАЛЛИ.

*Стр.*

**Чăваш Совет литературин ӳсĕмĕ** . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
С. В. Элкер . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 10
М. Д. Трубина . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 26
П. Хусанкай . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 33
Уйăп Мишши . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 40
П. Н. Осипов . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 54
Кузьма Пайраш . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 63
Леонид Агаков . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 70
И. С. Тукташ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 73
Ухсай Яккăвĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 80
Иван Ивник . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 85
**Чăваш литературин юлашки çулсенчи ӳсĕмĕ** . . . . . . . . . . . . 90

**Литература терминĕсене ăнлантарса пани**

Эпослă (повествованиллĕ) жанр . . . . . . . . . . . . . . . . 98
Çынсен сăнĕсем (образ)—тип . . . . . . . . . . . . . . . . . 100
Тема, идея, сюжет, композици . . . . . . . . . . . . . . . . . 103
Драмăллă жанр (драма, трагеди, комеди) . . . . . . . . . . . . . 105
Художественнăй произведенисен чĕлхи . . . . . . . . . . . . . . 108
Чĕлхене илемлетекен майсем: эпитет, сравнени . . . . . . . . . . . 110

Редактор Н. ВАСЯНКА.

НТ 3538 Заказ № 1442. Тираж 5.000 экз.
Объем 7,25 печ. л. В печ. л. 47.328 зн. Подписано к печати 10/VII 1941 г.

Типография № 2 Управления Издательств и Полиграфии при СНК ЧАССР.
г. Алатырь.

Цена 3 р. 50 к.

Ф. С. МЕЦЕНАТОВ

# ЧУВАШСКАЯ ЛИТЕРАТУРА

ПОСОБИЕ ДЛЯ IX—X КЛАССОВ
СРЕДНЕЙ ШКОЛЫ

Госиздат ЧАССР ♦ Чебоксары ♦ 1941